К 84.Ч9(=Чув)
Х 98
29876-чув

# ПЕТĔР ХУСАНКАЙ

# МЕХЕЛ

Национальная библиотека ЧР
4-029876

КОНТРОЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР

К 84.09
Х 98

ПЕТӖР ХУСАНКАЙ

# МЕХЕЛ

САВӐСЕМПЕ ПОЭМӐСЕМ

ШУПАШКАР
ЧӐВАШ КӖНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
—1·9·8·7


LXXX
1907
ПЕТĔР
ХУСАНКАЙ
1987
ЧĂВАШ ХАЛĂХ ПОЭЧĔ

МЕХЕЛ ТЕНИ МĔСКЕР ТЕНИ ПУЛАТЬ?
ЫЙТСАМĂР ÇУМĂР ПĔЛĔЧĔСЕНЧЕН:
МĔН-МА ВĔСЕМ КĂВАК УЯРПАЛА
ЮХАÇÇĔ ÇАВĂНМАСĂР ТАХÇАНЧЧЕН?
МЕХЕЛ ÇИТМЕН.

МЕХЕЛ ТЕНИ МĔСКЕР ТЕНИ, ТĂВАН?
ЫЙТСАМĂР КАЙĂК ХУР УШКĂНĔНЧЕН:
МĔСКЕРШĔН ВĂЛ ПАЙТАХ ШУРАМĂКРАН
ВĔÇСЕ ИРТЕТ, АНМАСТЬ КАРТИПЕЛЕН?
МЕХЕЛ ÇИТМЕН.

МЕХЕЛ ТЕНИ МĔСКЕР ТЕНИ ИККЕН?
ЫЙТСАМĂР ПАХЧАРИ УЛМУÇÇИРЕН:
МА УН ÇЕÇКИ, ЧĂМАРТАНСАХ ÇИТСЕН,
ТЕПРЕ ÇĔР КАÇАТЕХ ÇУРĂЛИЧЧЕН?
МЕХЕЛ ÇИТМЕН.

АПЛА МЕХЕЛ ТЕНИ МĔСКЕР ĔНТĔ?
ЫЙТСĂМĂР СĔРМЕ КУПĂС КАЧЧИНЧЕН:
МĔН-МА ПАТНЕХ-ПАТНЕХ ÇИТСЕССĔН ТЕ
ПУСМАСТЬ ВĂЛ ХĔЛĔХНЕ ПӲРНИПЕЛЕН?
МЕХЕЛ ÇИТМЕН.

МЕХЕЛ ÇИТСЕССĔН, ÇУМĂР ЯРĂНАТЬ,
ÇУНАТЛĂ ЧУН ÇӲЛТЕН ÇĔРЕ АНАТЬ,
ЧЕЧЕК ПАПКИ ИЛЕМЛĔН ÇУРĂЛАТЬ,
ЙĔРКИПЕЛЕН ЮРРИ ТЕ ЮРЛАНАТЬ —
МЕХЕЛ ÇИТСЕН.

МЕРЧЕН ТУМЛАМ

САВНИ

«ПӲЛЕР КӖВВИСЕМ»
ЯРӐМРАН

СОНЕТСЕМ

ВУТРА ШӐРАННӐ
КӐМӐЛ

КӖВӖЛЕНМЕН
ЮРӐСЕМ

ТИВӖҪЛИСЕНЕ

ПӐЛХАР
ПОЭЗИЙӖНЧЕН

ПЕТĔР ХУСАНКАЙ

# МЕХЕЛ

СĂВĂСЕМПЕ ПОЭМĂСЕМ

ББК 84 Чув 7—5
Х 98

*Кĕнекене А. П. Хусанкай пухса хатĕрленĕ*

29876-чув

ПРОВЕРЕНО
2010 07 СЕН 2017

**Хусанкай П. П.**
Х 98 Мехел. Сăвăсемпе поэмăсем: — Шупашкар. Чăваш кĕнеке издательстви, 1987. 383 с.
(Пер.:) 1т. 50 п., 1000 экз.

ББК 84 7—5

Тăван халăхăмăрăн юратнă поэчĕ П. П. Хусанкай кăçал (1987 ç.) сакăрвунă çул тултарать. Унăн çав ятпа тухакан кĕнекине лирикăлла сăвăсемпе поэмăсем, куçарусем кĕнĕ.

4702650000—020
Х———————————60—87
М 136(03)—87

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1987 ç.



ПЕТĔР ХУСАНКАЙ

МЕХЕЛ

# МЕРЧЕН ТУМЛАМ

## ÇĔРШЫВĂМ, ПИЛЛЕ!

Çуралтăм та маттур,
Ӳсрĕм сатур,
Хама мĕн пӳрнине пĕлмерĕм.
Пĕвĕм çитĕниччен —
Вунçич çулччен —
Тăван халăх халне сисмерĕм.

Вунçич çула çитрĕм,
Шартах сикрĕм:
Йĕри-таврах вăл ав хускалать;
Çăлăнăçа тухнă,
Хурлăх юлнă,—
Ирĕк çĕршыв ятне хапăллать.

Кĕмĕл кĕсле кĕвви,
Сăрнай сăвви
Шăранать те янрать çĕнĕрен...
Ах, çĕршывăм, пилле:
Эп те кĕсле
Туса хутăм çамрăк чĕремрен.

Каçар мана, каçар,
Тĕртсех ан яр
Чĕрçӳ çине халь тин килнĕшĕн:

Çичĕ ютсем пирки
Тĕттĕм курки
Ĕçсе ларнă эпĕ сĕлĕхшĕн.

Ĕнтĕ вăй-халăма,
Кăмăлăма
Юрра хурса пиллĕп халăха.

Ан тив, чечек ĕмĕр
Шанса ӳктĕр,
Анчах юррăм юлмĕ кăлăха.

1924

* * *

Илтӗм шурӑ хут,
Лартӑм сӗтел хушшине.
Ҫырам пӗрех хут
Анӑм-пуҫӑм пур чухне.

Миммӗм, кунҫала,
Шухӑш кунҫи туса пар.
Ҫамрӑк кунҫула
Шухӑшпа ӑсатар.

Шухӑш кунҫинчен
Тӗртсен сӑвӑ пулӗ-ха.
Ӑҫтан пӗлес, тен,
Кам та пулин вулӗ-ха.

Чӗрем, чӗлӗхле
Сывлӑш кӗсле хӗлӗхне:
Мухта хӗвеле,
Шӑрат ҫурла ҫеммине.

Куҫӑмсем, сире
Вӗрентнӗ-ҫке сӑнама:
Тухӑр уй-хире
Илем тӗрри шырама.

Пăхăр: тинĕс пек
Ылтăн ыраш хумханать,
Кăн-кăвак чечек
Сар пучаха ыталать.

Ем-ешĕл çаран
Сывлăмпала чӳхенет,
Çĕлен-çаваран
Именет те çӳçенет.

Тăп-тăрă çырма
Куçкĕски пек ялтăрать.
Ăçта ытарма!
Чунăм унтах ăнтăлать.

Эсĕ те, хăлхам,
Итлен чечен кĕвве çеç.
Лăплан, тăнласам —
Юрра ячĕ пĕр чĕкеç.

Ун эреветне
Кӳрсем чĕлхе-çăвара.
Эп те ĕмĕрне

1922

* * *

Лаштра кӑна хурӑнне,
Сӗткен кӗрсен ҫуркунне,
Пуртӑ сасси хӑрататъ.
Ӳссе ҫитсен хӗрӗнне
Питҫӑмарти хӗрлине
Ял юмаххи шурататъ.

Кач-кач касса картласан,
Хурӑн шывне юхтарсан,
Ешӗл ҫулҫи типшӗрет.
Пӗр курайми, ай, тӑшман
Суя сӑмах кӑларсан —
Хӗр чӗрине ҫав ҫиет.

Хӑрса ӳкнӗ хурӑнне,
Шур кӗпеллӗ сар пӳне
Шӗкӗ ҫисе ячӗ пуль.
Чипер хӗрне, мӗскӗне,
Урҫа илчӗ пулинех —
Мӗн юхмарӗ-ши куҫҫуль?

1922

## ХĔР ЙĔРРИ

Вĕлтĕр-вĕлтĕр сар йĕке,
Йĕртсем йĕтĕн ҫиппине!
Атте мана пиллĕхе
Тăратмарĕ хăй умне.

Ҫĕрме пуян хуҫана,
Ҫичĕ юта, ют ҫĕре
Ҫураҫасшăн вăл мана
Сая яма ĕмĕре...

Атте питне пĕҫерсе
Хура чăлха сырманччĕ,
Ҫĕнĕ кĕпе пĕтерсе
Шупка хăмаҫ сăрманччĕ.

Улах ларса пĕр-пĕччен
Каччă-терĕш пухмарăм,
Атте-анне хушнинчен
Нихăҫан та тухмарăм...

Ҫичĕ ютра, хытлăхра,
Нарспи чунĕ касăлнă.
Тăлăх юман тупăкра
Сетнер кунĕ татăлнă.

Çаплах ман та, ах, çаплах
Çухалĕ-шим яш ĕмĕр,
Сетнер пекех кăлăхах
Тăрса юлим Илтимĕр?

Эх, Илтимĕр, Илтимĕр!
Илтетни эс ман сасса?
Тарар мар-ши иксĕмĕр,
Пĕр юланут утланса?..

Савни манран сивĕннĕ,
Пĕркенчĕкри пек йĕтĕм.
Йĕтĕн çиппи сĕвемне
Куççулĕмпе пĕтĕртĕм.

1923

Мĕнпур çĕр çинчи чĕрĕ чун
Çуркунне савăнать.
Хĕлле сивĕпе хытнă юн
Шĕвелсе вылянать.

Çаплах чĕрĕлеп эпĕ те,
Яш чĕрем хускалать.
Савса тинкереп пĕлĕте —
Çăлтăр куç хупкалать.

Курмастăп ун чух çийĕмри
Çĕтĕлен тумтире:
«Танах эс мĕнпур тĕнчери
Çынсемпе!» — тет чĕре.

1923

## ПУСĂРА

Кайăк хурсем иртет картипе,
Тем йăлăнса йĕрет сассипе.

Мĕн çитмерĕ, вĕçен хăнасем?
Пит кичем-им пирĕн анасем?

Тискер пуль çав хирĕмĕр, тискер,
Виçĕ пусă юхăнтарнăскер.

Хăрăк хăмăл кăна хурланса
Ярать сире инçе ăсатса.

Ешĕл калчапала чысланма
Пулаймарĕ ĕнтĕ чарăнма:

Сар ӳкнĕ пек вăл ав сархаять,
Тăкнă тар-шур харама каять.

Ӳпкелесе тăкатăр куççуль,
Кăнтăр çулĕ ытла вăрăм пуль.

Вăрăм пуль-çке, калама канас.
Ăçта лартса сире хăналас?

Ăшă енне тунсăхлатăр çав,
Пире çӳлте курăнсан та — тав.

Анчах телей сунан ĕмĕрте
Ан татăр-ха хăвăр ĕмĕте.

Пулĕ акă пурнăç çак çĕртех,
Çак паян шупка сăнлă хиртех.

Йăран-йăран тĕрлĕ пуссене
Ларса канăр вара ун чухне.

1924

Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

29876-чув

**АННЕНЕ**

Тӗнче ҫути кӑтартнипех, анне,
Тавтапуҫа эс тивӗҫ манӑнне.

Ҫуратнине асна илсен, ялан
Ах ахлатса сывлаттӑн эс кайран.

Ҫемҫе йӑвара мар аталанма
Тӳр килнӗ ман чуна, ҫунатӑма.

Кипкеренех хӗн-хур юррипеле
Эп тухнӑ паллашса чӗрепеле.

«Куланайне!» — тесе, юрлисене
Тӑратнӑ тӑтӑш саламат айне.

Тырри-пулли иккен ҫав ҫулхине
Хура кӗртех пушатнӑ пӳлмене.

Сурпан ҫакки, хушпу тата-тата,
Куштансемпе ҫӳренӗ старӑста.

Ҫити-ҫитми пирки пайтах куҫҫуль
Шур чӗрҫитти арки пуҫтарнӑ пуль...

Тавах, анне, тавах сан куççульне,
Куççуль тин мар çăвать чăваш çулне.

Пилле мана — кашни ун тумламне
Ахаххăн ялтратмашкăн малашне!

1925. Сиктĕрме

* * *

Çутă кун иртет те, килет тĕттĕм каç,
Пирĕн ĕмĕрсем те çаплах шăвăнаç.

Халь эпĕ ачаччĕ, çытма-йĕм умрах,
Паян тĕлĕнетĕп: вунсаккăр лăпах!

Тутам çинче тин ак анне сĕчĕччĕ,
Пăхăсăн — халь мăйăх лăс пек сăрăнчĕ.

1925

* * *

Хӗрӳ хӗвел хӗрле хӗрелсе анчӗ,
Ыраш ӑшне вӑшлатрӗ путене.
Ҫӗре хуралламашкӑн тепӗр анчӑк —
Сар уйӑх — час хӑпарӗ тӳпене.

Ҫатан ҫумне таяннӑ шурӑ хурӑн
Тӗтреллӗн тӗлӗрет шӑп сывлӑшра.
«Тӗнче юмах пек... Туй ҫакна та — пурӑн!» —
Тесе чӗнетӗп эп хама ӑшра.

Ҫӑвар тулли кӑранклатать ҫӑханӗ,
Хутран-ситрен хӳхлет пӗр тӑмана.
Анчах этем епле ӑна ылханӗ,
Епле ӑна вӑл хурӗ тӑшмана?

Пуриншӗн те тивлетлӗ ҫакӑ ирӗк,
Пурнасшӑн пурте пӗр пекех ҫунать.
Илтетӗн-и, мӗскер калать ав ҫирӗк:
«Пӗр айӑп та тӑваймӑп чӗрчуна».

1925

## ЙИЙР

Тăлларĕç. Ӳкрĕ кĕтесре.
Кусне хупларĕ сĕм салхулăх.
Асне килет çӳрен кĕсре,
Кĕрхи каю, шăнкравлă улăх...

Ун чух вăл пулнă шух тиха,
Хĕвел шевли — чипер йĕвенĕ.
Ун ĕнсине йăваш çăрха
Ачашшăн кăшласа тĕлленнĕ.

Хушка çамка, кăтра çилхе,
Хӳри ун хӳхĕмĕн сулланнă.
Куллен йăмраллă вĕтлĕхе
Кĕре-кĕре вĕсем çухалнă.

Хунав çăра — шыра, тупах!
Чĕнмест çеçтенкĕ çакнă çирĕк.
Юн — юхăм шыв, çулсем — юпах,
Чĕвен тăрса илетĕн ирĕк.

Анчах паян... тăхта, тăхта!
Юлашки хут çăварлăх кирлĕ.

Ыран вăл ĕрĕхмест, нăхта
Тăхăнтарсан та урлă-пирлĕ.

Çын касрĕ, шăлчĕ çĕççине,
Сĕлемепе сапса хăварчĕ.
Лаша, тăрса, хăй витине
Силленеймесĕрех уттарчĕ.

1925

## АВАЛХИ ТУЙ

*Трубина Мархвине*

Çиллĕ-тăманлă шап-шурă уй.
Çитмĕл шăнкравлă урнă пĕр туй.

Ашшĕ те амăш ӳстернĕ пике,
Хĕрĕн кунçулĕ хăналăх пекех.

Ырлăхĕ унăн иртет кĕçĕртен,
Хурлăхĕ пĕтмĕ çĕре кĕриччен.

Тантăшăм! Ан йĕр, ан тăк куççуль,
Шурă пĕркенчĕк витмех пӳрнĕ пуль.

Шурă пĕркенчĕк те кĕмĕл хушпу,
Ват Тăхтаман пек хаяр упăшку.

Çул хыççăн çул иртсе кайĕ те ак —
Тулĕ ачу-пăчупа урлă сак.

Ку та «анне» тейĕ, леш те «анне»,
Хурлăх хуплайĕ сана хăй айне.

Çăлтăр пек çутă куçу та ун чух
Ларĕ путса — палламашкăн та çук.

Сарӑ ҫивтӳ те пӗрер пӗрчӗнех,
Тен, сайраланӗ мӑшрун аллипех...

Ҫиллӗ-тӑманлӑ шап-шурӑ уй.
Ҫитмӗл шӑнкравлӑ — камӑн ку туй?

Сар хӗр хӳхлет те юрлать юррине:
«Ҫичӗ ютра курас ҫук ыррине...»

Туй ку — иртейнӗ хаваслӑх-тӑр ҫав,
Туй ку йӗртеймӗ пӗрех шӑпӑрҫа.

Ман та, ҫакна ҫыриччен, ҫӑвара
Какӑр хыпса-мӗн ярас шӑпӑра.

1925

* * *

Çуралса поэт ятне илтмешкĕн
Пит аван-тăр çутă тĕнчере.
Сăввăмпа çынна килентерсессĕн,
Савăнсах тапать-çке ман чĕре.

Ан йĕрех эс, çилĕм, ан йĕр тетĕп,
Шухă сассăм, хыттăн ан кĕрле.
Чăвашпа пĕрле эп хĕпĕртетĕп,
Хурлансан та — чăвашпа пĕрле.

Пĕлĕтре çăлтăр ӳксе сӳнет-и —
Кулянса пăхатăп тӳпене.
Сĕткенри чечек çилпе тӳнет-и—
Хĕрхенетĕп сарă чечекне.

Анкарти хыçне тухан каçкӳлĕм,—
Кайăк хур карти вĕçсе иртет.
Эх, хĕсет паян мана çак пӳлĕм,
Хальтен-халь тухса тарас килет.

Çĕр çинче нумай тивлетлĕ вырăн,
Çын туйман илемлĕх те нумай.
Ĕмĕтре вĕçсе те унта пырăн,
Тутанса пăхма та тупăн май.

Тӳлек каҫ эп лăпкă ҫын пулмашкăн
Вĕренетĕп шурă уйăхран.
Тĕлĕкре сăвă тĕлне пулсассăн,
Вăранса ҫыратăп ыйхăран.

Шăпчăка итлет-и кăвак шуҫăм
Е ирхи хĕвел пӳрте кĕрет —
Пур илемлĕхе те манăн куҫăм
Тĕл пулса хавассăн тинкерет...

1925

## ÇЫРУ

*Н. Я. Яковлевăна*

Халь çулла. Сире ĕнтĕ хавассăн
Йăпатать чӳречерен хĕвел.
Ман анчах таçта çухалнă сассăм
Паянччен чĕнмерĕ... питĕ шел.

Эп пĕлетĕп: халĕ ĕнтĕ эсĕр
Лĕп уяр, тĕтресĕр каçсенче,
Хăвăра пĕрре те хĕрхенмесĕр,
Уттаратăр час-часах Ĕнче.

Ах, Ĕнчи! Тен, эсĕ мана урăх
Çупăрлаймăн типшĕм çурăмран.
Нихăçан та сан çырану тăрăх
Чупас çук халь эпĕ çаруран...

Хуларах иртет пуль çамрăк ĕмĕр —
Акăш-макăш чул тыткăнĕнчех.
Пикенсех чăвашшăн пикентĕмĕр
Çĕнĕлле чĕлмешкĕн тĕренче.

Паянхи пекех эп астăватăп
Аннепе йăран çĕкленине.
Мĕнешкел анне! Чăнах та ватă...
Хăшкăлтартăм пулĕ мĕскĕне.

Ватăлмалăх кунĕнче ун чунĕ
Лăпкă мар пуль çавă, лăпкă мар.
Кирек кам та хăй ачишĕн çунĕ —
Хăть вăл ырă пултăр, хăть начар.

Эп туятăп: каçсерен вăл халĕ,
Хăй ĕне сума лармассерен,
Ман çинчен çапла кӳренсе калĕ:
«Эх, ачам! Ăçта-ши эс çӳрен?..»

Кантăкран вăл яланах пăхать-тĕр,
Çилпеле хапха чĕриклетсен —
Ывăлне ыталамашкăн хатĕр
Васкаса тухать пулĕ пӳртрен.

Анчах эпĕ... Кам-ши паян эпĕ?
Камшăн ыратать-ши ман чĕре?
Шупашкарăм иккĕмĕш анне пек
Туйăнать халь маншăн тĕнчере.

1925

* * *

Сăвăлассăм килместчĕ ман урăх,
Анчах эп чăтаймастăп паян.
Çуркунне... ешерет йывăç-курăк...
Ну ăçтан чĕрӳпе чăтаян!

Епле çак çĕршыва сасă памăн,
Епле хушмăн саламлă сăмах?
Çулсерен хитререх-çке вăл манăн,
Çулсерен хăпартать сассăма.

Юнăма яш хĕвел кĕнĕçемĕн,
Çурхи çил чун уçса вĕрнĕçем —
Чĕрере çĕнĕрен çĕнĕ çемĕ,
Халиччен çын илтмен çемĕсем...

1926

* * *

Çутăлас умĕнхи кăвак шуçăм
Çăлтăра лап вĕрсе сӳнтерет.
Анкарти варринчи нӳрлĕ шучă
Сывласа хăпартать тĕтĕре.

Укăлча хыçĕнче симĕс кантăр
Сывлăм сыпнă та ним те чĕнмест.
Çак самант ун ăшне пит аван-тăр
Çарамас пытанса çӳçенме.

Пит аван-тăр çарран, тиха евĕр
Пуç ухса сукмакпа ĕрĕхме.
Анчах çук, чупас çук ĕнтĕ эпĕр,
Ĕлĕкхишĕн кăна ĕрехмет.

Чупас çук йăранпа йӳле пилĕк,
Çакас çук хулпуççийĕм çурла.
Кăлăхах-мĕн атте-анне пилĕ,
Кăлăхах уй юрри эп юрлап.

1926

* * *

Кӳлӗ ҫинче яранатӑп пӗччен
Каҫ канлӗхне илес пек хам ӑша.
Лӑпкӑ шыва хумхатать ман кӗсмен,
Хумӗ хуллен ҫупӑрлать хӑмӑша.

Шиксӗр ларать тӗлӗрсе ват ҫӳҫе.
Ҫилӗн аташнӑ ачи тенепле,
Вӗл сирсе пӑхрӗ те манӑн ҫӳҫе,
Чӑмрӗ часрах хӑяхсен ӑшнелле.

Ҫап-ҫаврака тӑм чара пек ҫыран.
Тӑп-тӑрӑ шывӗ ҫӑвать кӑмӑла.
Ҫак каҫсенче тӗнчене каҫаран
Пур инкексемшӗн те ҫӑп-ҫӑмӑлах.

1926

* * *

Çăка çаралнă,
Черет юманăн,
Черет сархайнă хурăнсенĕн.
Кĕрхи кĕренлĕх!
Эпир вĕреннĕ,
Йăлт хăнăхнă çул иртнĕçемĕн.

Чăштăр та чаштăр
Çулçа ашатпăр,
Тата вăрах-и утăн, ашăн?
Çанталăк чĕмсĕр.
Ĕлкĕрнĕ-шим çĕр
Тумашкăн кирлине кăçалшăн?

Çапла. Йăлт тунă.
Час тепĕр тумлă
Вăл ялтăрĕ — чăлт-шурă кĕмĕл.
Паха туллилĕх!
Тĕнчемĕр пилĕ:
Ӳс, улăшăн, анчах ан кимĕл!

1926

## ЧĂВАШ ТĔРРИ

*Н. Шупуççыннине*

Пĕр саншăн çеç, тăван ăсталăх,
Пĕр саншăн, шурă катанпир,
Çак сăввăма çырса хывмалăх
Вăя пиллетĕп паян ир.

Епле тӳсес-ха ман чĕнмесĕр,
Епле тӳсес поэт чĕри?
Пĕлетĕр-и пăртакçă эсĕр:
Мĕскер вăл тĕп чăваш тĕрри?

Кĕпе эп куртăм, ах, тăванăм,—
Шупашкарти мăн лавккарах.
Мĕнле пике тĕрлесе пană?
Пăхсассăн куç каять шарах.

Яп-ялтăркка ука пек пурçăн,
Тĕрленĕ пĕрчĕн суйласа.
Чăваш малашлăхĕ те пур çав,
Ун ĕмĕчĕ хитре, таса.

Пĕр курăс хупĕ çеç-им эпĕр
Паллатпăр çакă тĕнчере?

Пурне те астивме пӗлетпӗр,
Илемшӗн те ҫунать чӗре...

Пӗр саншӑн ҫеҫ, тӑван ӑсталӑх,
Пӗр саншӑн, шурӑ катанпир,
Ҫакна эп ҫыртӑм асӑнмалӑх
Чӗрем ҫӗкленнӗ янкӑс ир.

1926

* * *

Каллех, чӑваш столици, эпӗ санӑн,
Каллех ак кӗтӗм хӗрлӗ хапхунтан.
Ют халӑх «мунчала» тесе каланӑн,
Сана эп мӑшкӑллаймӑп чухӑнтан.

Ан тив, ыттин хулийӗ пултӑр чаплӑ,
Кӗрлетӗр хапрӑк-савӑт таврара.
Эс те ӗмӗр, чӑвашӑм, чӑпта ҫапмӑн,
Эс те ҫӗнетӗн ват Шупашкара.

Ҫак кунсенче нумай ҫӗре эп ҫитрӗм,
Ытти ҫынсен чӑнах та маларах;
Пуҫа чылай ҫӗн ӗмӗт эпӗ чикрӗм
Ӑна кӑтартӑп час поэмӑра.

Аван поэмӑра ҫӑтмах илмешкӗн
Ятарласах эп килтӗм паян кун;
Тӑван чӗлхемӗрех илемлетесчӗ,
Ӑна вӗрсе кӳртесчӗ чӗрӗ чун.

1926

* * *

Юр шывӗ сăрхăнсах пӗтмен чухне
Çурхи çилсен сип-сивӗ пăр йӗппи
Тирет халва пек хăтлă çӗр ӳтне.
Çавна сире эп систерейӗп-и?

Çуллахи каç, çил майăн ӳпӗнсе,
Пулса çитейнӗ сӗлӗ шерепи
Калать çинçе те хӳхӗм тӳттӗлсем.
Çавна сире эп илттерейӗп-и?

Ирпе тăп-тăрă сулхăн пӗвере
Кӗрхи хурсен — пӗрин те тепӗрин —
Раснах салху кикакӗ чӗтӗрет.
Çавна сире эп систерейӗпин!

Хӗлле — пасарнă ут куç хăрпăкӗ,
Çулти ут тулхăравӗ — пире пит
Астутарать пур чун та пӗр пеке.
Çавна сире эп систерейӗп-и?..

1926. Сиктӗрме

## УҪ ҪЫРУ

Эс мана ҫухатрӑн пуль, анне,
Эп сывах. Салам сана, салам!
Ҫитсе ӳкрӗм кӑнтӑрла енне,
Анчах хам ҫинчен мӗнех калам?

Ку ҫӗршыв мана ӑнланас ҫук:
Ман тымар лере, пӗлетӗн ху.
Ҫавӑнпа чӗрем ыратнӑ чух
Тытса лартӑм акӑ шурӑ хут.

Аса илтӗм эп тӑван киле,
Тӗрлӗ шухӑш вӗҫрӗ пуҫӑмра...
Ӑнсӑртран мана аса килет
Хам пек тӑлӑх ӳсекен йӑмра.

Тӑлӑха питрех те-мӗн асап
Ҫынлӑха кӗмешкӗн ҫӗр ҫинче.
Ҫавӑнпа эп халь тӗнче касап,
Ҫавӑнпа эп халь санран инҫе.

1926. Ашхабад

* * *

Çил шăхăрать, çил шăхăрать,
Çил юпалать тусана.
Çеçпĕлĕм, Çеçпĕл! Кам халь вăратĕ,
Кам халь вăратĕ сана?

Таçта тăпру сан, таçта хĕресĕ,
Таçта йĕрет вĕлтĕрен.
Ху халăхушăн çуннăскер эсĕ
Инçе çĕрте халь çĕрен.

Е ĕмĕрех вăл мĕскĕн чăвашăн
Çав шăпара-ши талан?
Е халь мана та пур-ши виç аршăн
Нÿрлĕ çĕре халалан?

1926

* * *

Çанталăк çанĕ — чух ула:
Ик-виçĕ шурă пĕлĕт ластăкĕ,
Çĕртме ешерĕвлĕ вăрман,
Хăй çыранне вырнаçнă Атăл...
Куçран çухалчĕ Чулхула.
Тулли тĕнче юрри юрлас теп эп,
Юрлас теп шыв пек вăрăммăн,
Пуçлас теп: чунăмçăм, ан ватăл!..

Ан ватăл çак саманара!
Мĕнле инкек-синкек пулсассăн та:
Тусу ан йышăнтăр, савни,
Тĕшленнĕ шанчăк ӳксе вантăр —
Пĕр çавăнпах, çампах вара
Эс хур ӳстерĕн-ши ху сассунта?
Малашлăх, сăвăç, эс шанни,
Пуласлăхшăн чĕрӳ сан таптăр.

Телей — ăна хăвалани.
«Хуса çитейрĕм, тытрăм»,— терĕн-тĕк —
Эс чи хăрушă тыткăнта,
Санран тек нимĕн те кĕтмеççĕ...
Сарлакалан, ăс-хал ани!
Янравлă хĕлĕх, ăса перĕн те —
Кăлар, кăваррăн хыпăнтар
Чун панчине, чĕре тĕпне çит!

1927

## МЕРЧЕН ТУМЛАМ

*Н. Шаланка (Ваçанккана)*

Хăçан тепре сана ыталăп,
Хăçан калаçăп куçма-куç?..
Шаланкăм, тусăм! Йарччĕ алă,
Кăмăлăма кулса ан хуç.

Санпа ялан ман чунăм урăх,
Йĕлместĕп хам та мĕншĕнне.
Ах, сывлăм шыв кĕтет-çке курăк,
Мерчен тумламшăн ĕшенет.

Туслашура та пур-мĕн сывлăм:
Ман сывлăм — саншăн, маншăн — сан.
Пайтах, пайтах эс ассăн сывлăн,
Çав хаклă сывлăм çухалсан.

Ан сивĕн, тусăмçăм, ан ватăл...
Асра усрап сăн-сăпатна.
Çурхи хумпа каллех ак Атăл
Мана çитерĕ сан патна.

1927

* * *

Хура каç. Шурă юр.
Темле Блок хĕлĕ пекрех.
Çак вĕçен сив кипекре
Иртнĕ тӳсĕм йĕрĕ пур.

Çил... çил... чăтма çук!
Пĕтĕм шăтăк-шăхăра
Шăхăртать, улаттарать.
Увертюра пуçлас чух
Çавăн пек пулать вара.
Пуçра сăвă ӳснĕ чух
Çавăн пек пулать вара:
Чĕрен кашни чĕлĕхне
Ĕнерсе пусса пăхан;
Килĕшмесĕр тĕлĕнен,
Авкалатăн сăмаха.
Хăвна çеç кирлисене
Кăларатăн йăлт хуса,
Е — сасартăк пĕр енне
Хайăран та — шарт хуçан.

Революципе тан ут,
Итле унăн музăкне!
Унта çеç хавхалану,

Вăл çеç çутă кун сĕнĕ.
Унпа çеç сан таланту
Хăтăлĕ те ӳсĕнĕ.

Хура каç. Шурă юр.
Блок хĕлĕ-и, ман хĕл-и,
Кирек камăн пултăр — пур
Шанчăк, çухалман халĕ.
Хура каç — сенкер ирччен,
Шурă юр — ешĕл çурччен.

1927

* * *

Тултарӑр савӑш куркине,
Тултарӑр, тусӑмсем, тултарӑр!
Тулта сархайнӑ кӗркунне,
Пирте... пирте халех кӗр мар-тӑр.

Тулта ӳкеҫҫӗ ҫулҫӑсем,
Чипер тирек ҫарамасланчӗ.
Анчах пӗлсемӗр, тантӑшсем:
Ҫак кун ман чи тӗреклӗ шанчӑк.

Саватӑп эп кӗрхи ҫиле,
Саватӑп сулхӑнӑн вӗрнишӗн.
Тирек ҫулҫипеле пӗрле
Вӗҫсе каять ман чирӗм-нишӗм.

Ҫанталӑк хухнӑ вӑхӑтра,
Ҫанталӑк тум пӑрахнӑ тапхӑр
Чӗрем тапать ман хӑвӑртрах,
Тулать пур кӑмӑл, шухӑш паттӑр.

Чӑпар вӑрман, ҫара ҫаран —
Тӗнчен хӑйне расна кӗрнекӗ.

Ан тартӑр вӑл сӑвӑҫӑран,
Пӗрне те ан тирке, пӗрне те...

Ан тив, сархайтӑр кӗркунне,
Пирте ҫапах халех кӗр мар-тӑр.
Тултарӑр савӑш куркине,
Тултарӑр, тусӑмсем, тултарӑр!

1927

* * *

Ку яла эп аван астăватăп,
Астăватăп çак тайлăк пÿрте.
Ун хуçи тахçанах ĕнтĕ ватă,
Шухăшлать пуль: «Хăçан кин кÿртем?

Хăçанччен лăш курмасăр ман хулăм
Çурла çакĕ?» — тет пуль вăл паян.
Пÿрт тăрри — пĕлтĕрхи çинчĕк улăм,
Пахчине пусса илнĕ мăян.

Ÿпкелет-тĕр: «Пĕртен-пĕрех ывăл
Пулаймарĕ иккен çурт пăхма...»
Анчах ывăлĕ, ывăлĕ — эп вăл,
Эп — тĕнче касакан тăр-ухмах.

Эп пĕлместĕп: аван-и, начар-и
Аннене пăрахса çÿреме.
Кам çăварлăхлĕ, кам тытса чарĕ
Ирĕке туртăнан чĕреме!

Вĕçĕмсĕр Туркестан çеçенхирĕ,
Караван çавăтать ватă курд.
Янкăса тĕнче тикĕс те ирĕк,
Хăй каларĕш — пĕр пуç та пĕр кут...

Ĕлĕкрех эп пăртак урăхлаччĕ,
Пуçăмра манăн пурччĕ ялккас.
Анчах халь ыттисем аппаланччăр,
Эп вĕсемшĕн те питĕ хавас.

Ĕлĕкрех эп çĕртишĕн çунаттăм,
Паян кун хӳрӳне ан тӳле:
Сăвăра ӳссе çитнĕ çунатăм
Хăпартасшăн çӳлтен те çӳле...

Ку çурта тахçанах эп пĕлетĕп,
Хуçине те паллатăп пулас.
Курăс хуп витсе лартнă кĕлет те
Çăка йывăрлăх пуснă лупас.

Кашни пушăт чĕлли йĕчĕ маншăн,
Астăвап кашни ӳкнĕ çулçах.
Пĕр-пĕччен хуçине ватăлмашкăн
Кинсĕрех турă çырнă пуль çав...

1927

### ХУМХАН, ХУРА ТИНĔС!

Хура пĕлĕтсем-и, уяр-и тĕнче —
Янра, манăн юрă, хумсем çиййĕнче!

Хумхан, Хура тинĕс! Кăтарт хăватна,
Курассăн сунмарăм килсе сан патна.

Виç çухрăм кайсан анкарти хыçĕнчен
Йăлт урăх çĕршывччĕ мана халиччен,

Халь манăн çĕршыв — тинĕсрен тинĕсе
Выртать шухăшпа виçейми çиçĕнсе.

Хумхан, Хура тинĕс! Кала такмакна,
Итлесшĕн çунаттăм тахçан эп ăна.

Мана эс туртаттăн, ача сăпки пек,
Халап-юмахпа, сăвăçсен сăввипе.

Чăваш куççулли те вĕрет-çке кунта —
Сан канăçсăр, тарăн сĕм авăрунта.

Тарпа шăваран анине пăрахса,
Çĕре чуптуса та тăпра чăркаса,

Ятне çухатса ĕмĕр-ĕмĕрлĕхе,
Ăсаннă чăваш, хум касса, Тĕрĕке.

Вăл тарнă тӳссе тӳсме çук мăшкăлтан,
Çĕрти-çӳлтине ылханса пур чунтан;

Вăл тарнă — карап хĕррине каранса
Йĕрсе ал суласшăн юлан парăса;

Вăл тарнă — Стамбул хӳмисен сулхăнне
Тăрса макăрасшăн, пăхса ку енне;

Вăл тарнă, çурхи тăрнаран Атăла
Ярасшăн салам çунакан ăшпала...

Хумхан, Хура тинĕс! Юрла манпала,
Пĕртен-пĕр çĕре эп мухтап, пахалап.

Мухтатăп эп сан ку енчи çыранна;
Пĕр çавăншăн юррăм юхать, янăрать.

Пĕр çак çĕрте çех, чĕремпе çĕкленсе,
Килти пек çӳреп тинĕсрен тинĕсе.

Янра, аслă шывăм, сăрнайăн-кĕслен!
Иртет çак самант нихăçан килмесле.

Телейĕм — тӳссе тĕрекленнĕ чĕлхе,
Мĕскер эп ыйтам-ши санран пиллĕхе?

Пуянлăх та марччĕ вăл, канлĕх те мар:
Хăват çăлкуçне типесрен эс хăтар.

Хумхан, Хура тинĕс! Хускат чунăма,
Ан парччĕ ăна сивĕнме, чулланма.

1927

* * *

Шупашкар, Шупашкар,Шупашкар!
Тыткăна эс илетĕн мана.
Хусанкай сан чуру пулса мар —
Юрласа пурăнасшăн çунать.

Чул çуртра пăчăхса лариччен
Пасара ман тухасчĕ чупса,
Шўлкемеллĕ хĕрсен чĕринчен
Чăн сăмах кăларасчĕ тупса.

Чĕлĕм хыпнă сухаллă мучей
Вырăсла такăна пуçласан:
— Тăна кĕр, эс чăваш хулинче,—
Тейĕттĕм эп ăна тăп чарса.

Аслă Атăл çине пĕрех хут
Пăхăттăм куçăмпа тинкерсе,—
Çавăнтах алари шурă хут
Хурĕччĕ шухăша тĕрлесе.

Хум шавне çĕр çумне лăпчăнса
Тăнлăттăм хăнăхнă чĕрепе,—

Çавăнтах шăхăртса, янратса
Чĕлĕхлĕттĕм кĕсле чĕлхемпе...

Шупашкар, Шупашкар, Шупашкар!
Тыткăна эс илетĕн мана.
Хусанкай сан чуру пулса мар —
Юрласа пурăнасшăн çунать.

1927

* * *

Ку чух поэт пулмашкăн йывăр мар-тăр,
Чапа тухма тата питех ансат.
Кашни ялах: Кавалĕ те, Вăрнар та
Сăвва кĕрет халь пирĕн «шăранса».

Сăвă çырма такам та пултарать-тĕр —
Каçхи улах, чипер хĕрсем çинчен.
Хăш чух эп хам аппаланмашкăн хатĕр,
Хăш чух эп хам та поэтах-и, тен!

Ухмах чĕре! Ăçтан тытса тăратăн,
Ăçтан калан ăна ан тап тесе?
Тен, çавăнпах паян тăлăх-туратăн
Çÿретĕп пулĕ эпĕ сĕтрĕнсе.

Тен, çавăнпах, пăртак пуçа йăтсассăн,
Йĕрес пек ÿкĕтлетĕп хама хам:
Илтетни эс: мĕскер юрлать ав массă,
Куратни эс — ялав илемĕ кам?..

Шупашкартан тухни çич-сакăр уйăх,
Час таврăнассăм çук эп халь унта.
Хăçан килетĕн тет мăнтарăн Уйăп,
Анчах... кăмăлламасть мана «Сунтал».

Пăсăк кĕсле хăçан кĕвве ĕнерĕ,
Пăсăк кĕсле пăсать кăна сасса,
Çĕршывăма эп улталас темерĕм,
Халь çавăнпа çӳреп тĕнче касса.

Ах, пӳрнĕ ĕмĕрĕм! Мĕскер кăтартăн?
Чăнах та санăн сарлака сакку.
Ашхабадран тухайса эпĕ тартăм,
Ĕнер çулта, паян ĕнтĕ — Баку.

Кунта — Америка. Пĕтĕм пурнăç — нехтă[1],
Кĕрлет Биби-Эйбат, Балахана.
Хура мазут хурлантармасть пĕрнех те,
Пĕр эп кăна-мĕн урăхла хăна.

Ман чунăмра вĕçĕ-хĕррисĕр улăх,
Чĕрешĕн хаклă сывлăмлă чечек.
Кунта илемлĕх пĕтĕмпех-мĕн урăх,
Этем хавасĕ урăх пĕтĕмпех.

Тарай тутри пек симĕсĕн-кăвакăн
Пĕркенĕ нехтă канăçсăр хума.
Çӳлти çăтмахшăн эсĕ кĕлтăватăн,
Ăна çĕртех пулать иккен тума.

Сĕм чатăр карчĕ кăнтăр лăпкă каçĕ,
Лăпланчĕ тинĕс, тухрĕç çăлтăрсем.
Фонтанĕсем синкерĕн тарăхлаççĕ:
Хитре-и пирĕн юрă, пĕлтерсем?

Хура пашне тăрри мана юнарĕ:
Пăрах пуçна усмашкăн эс, пăрах.

[1] Нехтя — нефть.

Чăнах Баку урамĕсен хунарĕ
Тин тулнă уйăхран вĕт çутăрах.

Эп хам та халь, пăртак пуçа йăтсассăн,
Йĕрес пек ӳкĕтлетĕп хама хам:
Илтетни эс — мĕскер юрлать ав массă,
Куратни эс — ялав илемĕ кам?

1927

## СĂЛПĂРАН

Пĕлĕт хăмăр, çилĕ — хирĕç,
Куç уçма çук сăлпăран.
Вак пăрсем тăхлан пек тиврĕç
Пĕрчĕн-пĕрчĕн çамкаран.

Хăçанччен хур курĕ йӳрĕк,
Килсĕр-çуртсăр пуçăм ман?
Хăçанччен кастарăп-çӳрĕп
Е утпа эп, е çуран?

Пăх-ха, лавăç: курăнмасть-и
Хăй çути тавраш малта?
Пур-и, лавăç, улăм ластăк
Ĕшенсе килен ута?

Пур-и санăн пĕлĕш-тантăш
Çак çĕршыв тăрăхĕнче?
Ăшăнасчĕ те халь ман кăшт,
Хырăм та хыр тăрринче.

Кĕл çине — шултра паранкă,
Ума — çутă сăмавар...
Кӳр-ха, лавăç, юрттарам-ха,
Тилхепе мана тыттар.

Пĕлĕт хăмăр, çилĕ — хирĕç,
Куç уçма çук сăлпăран.
Вак пăрсем тăхлан пек тиврĕç
Пĕрчĕн-пĕрчĕн çамкаран.

Мĕн хыпар-ши, мĕн хăнар-ши,—
Телефон юпи улать:

Ĕмĕтри телейĕм мар-ши
Е инкек картлать çула?

Ăçтарах эс, пуçăм, выртăн:
Аташса çĕтнипеле,
Чĕмере лексе е ыррăн —
Сарăмлах-ши вилмелле?

Е çулти вăрă-хурахăн
Çĕççине тăрнасси пур?
Е тӳсме хал çук юратăн,
Ху çине илсе хĕн-хур?

Е талант пекки хухсассăн,
Хам сиссессĕн ун çинчен,
Йăнĕ ман пăрахăç сассăм
Ватăлмалăх кунсенче?

Е кĕтмен çĕртен — ак кулă!—
Тишкерӳçĕ перине
Тӳсеймесĕрех салхуллăн
Хăвна ху пĕтерĕне?..

Пĕлĕт хăмăр, çилĕ — хирĕç,
Куç уçма çук сăлпăран.
Вак пăрсем тăхлан пек тиврĕç
Пĕрчĕн-пĕрчĕн çамкаран.

1928. Сиктĕрме

## ÇУРХИ ОКТАВĂСЕМ

1

Октавăсем пире те çитсе тиврĕç,
Курак[1] çунат çапсах кăраклатать.
Юрать-ха ку: тулла кирлех-çке тирĕс,
Халех ятламăп Курака, тата —
Эп хам та кивĕ йĕркене пит хирĕç;
Мана та, пытараймăп, тупата —
Каяшсăрах ку тапхăр çичĕ сыпăк,
Хĕпĕртесех çăра симпыл эп сыпăп.

2

Çав симпыла никам активиччен
Çĕклетĕп эпĕ, Çеçпĕлĕмĕр, саншăн!
Хура пинçуллăх тĕттĕм пӳртĕнчен,
Кăвар чĕре, хăюллăн та хастарлăн
Тĕнченелле эс касрăн чӳрече,
Йĕри-тавра тинкерттерсе пăхтартăн.
Ху калашле — чăваш чĕлхи пур чух
Сана эпир савма пăрахас çук.

[1] Курак Иванĕ сăвăç пурччĕ.

3

Ман иккӗмӗш куркам сана лекет-тӗр,
Тивӗҫлипе чыслас пулсан, Элкер.
«Сӑпайлӑ, тимлӗ, ӑслӑ...» Темӗн те пӗр
Каланӑ сан ҫинчен. Тата мӗскер?
Кун хыҫҫӑн сан тусу мӗнех теейтӗр?
Саманупа[1] пӗр шай утма пиллер.
Поэзи пӗлӗтне ҫуллен пӗр ҫӑлтӑр
Сан хӳттӳпе хыпинччӗ йӑлтӑр-йӑлтӑр!

4

Тӗрӗссипе кама-ха ку чухне
Тивейӗ виҫҫӗмӗш куркам? Вӑл — хамшӑн!
Анчах хӗл касрӑм, ҫитрӗ ҫуркунне —
Пулин ку яхӑнта пӗр сӑвӑ манӑн...
Пӑхса ларан профессор ҫӑварне,
Капла час рифма шырама та манӑн.
А рифма... рифма кирлӗ, эсремет:
Унпа ман шухӑш вирлӗ вӗҫленет.

5

Ну юрӗ. Каштамсем ман пурте хатӗр:
Ларсамӑр, вӗҫен кайӑк чӗпписем!
Ӗ ҫ х ӗ л[2] тени сире кӑшт хӑратать-тӗр,
Ҫапла та-ха... епле халех писем?
Хутран-ситрен вӗсем те кайкалаччӗр,
Анчах нумаях мар ун пеккисем.
Халь пирӗн ҫулӑмӑр ҫатма пек такӑр:
Силлабик — сухапуҫ вӑл, тоник — трактор.

---

[1] «Самана» — Элкер кӗнекин ячӗ.
[2] Ӗҫхӗл тесе ун чух грамматикӑри глагола калатчӗҫ.

6

Машшин сас пачӗ пирӗн уй-хирте.
Ырхан кӗсре, шăна-пăван таптавӗ,
Ҫӗкле пуҫна, айванăм, хӗпӗрте,
Сана кӳресшӗн ҫăмăллăх октава.
Час эс канма пултарăн витӳнте,—
Пăртакҫă реконструкцилер, тăхта вăт...
Эс те ҫаплах, аваллăх сăвăҫи:
Е кан, е трактора эс хуса ҫит.

7

Студент, студент! Апла иккен ун ҫулӗ:
Маркс, Энгельс, Дарвин, Песталоцци, Лай...
Хăҫан ку пуҫăн хăвăлӗ ман тулӗ?
Хăҫан, ҫын пек, эп пӗлӗп-ши нумай?
Пером та тутăхса саралчӗ пулӗ,
Хăҫантанпа ҫырманччӗ, ай-яй-яй!
Теори гранитнех кăшлаттараҫҫӗ,
Усси те пысăк та... кичем пăртакҫă.

8

Ăҫтан пурне те чикӗн пӗр тăна?
Ăҫтан пурин валли тупас-ха пӳлӗм?
Чӗлхеҫӗ патӗнче тăсатăн: «а»,
Ҫырулăхҫа илтсен — ху ҫырмăн ӳлӗм,
Пăлхар чулне авалҫă такăнать,
Диаматҫа вӗсемшӗн парăм тӳлӗн...
Сухал хырмашкăн та самантăм ҫук,
Епле ирткелӗ-ши тăвата ҫул?

9

Каплах пырсан ытла инҫех те каймӗ —
Кулсах пултарӗҫ педагог тума.
Анчах вăл халăх мансăрах нумай вӗт,
Ачи те ҫуралать те... мӗн ӗҫ ман!

Аюх! Манран ача пăхса пулаймĕ:
Пĕлӳ вăл — тĕнĕл... сăвă çаварма.
Чухлатăр хăвăр: самани пит вирлĕ,
Ăна туймашкăн сăвăçи те кирлĕ.

10

Пăхам-ха çавранса. Студент ĕççи
Ман тунсăх перона чылай кустарнă.
Çитет! Паркран вĕрет йыхравлă çил.
Тĕрленĕ кĕпепе ташлать Кустарин[1].
Халал ĕç хыççăн кирлĕ темеççи
Хулпа хула явни те? Стоп! Пуçтарăн.
Экзамен, сăвă, хĕр... Йăлт ĕлкĕрсен —
Паяншăн вуд[2] вара, этсемĕрсем!

1928. Хусан

---

[1] К. Я. Кустарин — Хĕвелтухăç институчĕн студенчĕ, чăваш хорне ертсе пыратчĕ.

[2] Вуд — ун чухнехи вĕренӳ паллисенчен пĕри: весьма удовлетворительно.

## ХУРИ

Чăваш студенчĕсене

I

Пĕлместĕн-и эс,
Чăваш:
Мĕншĕн çак кĕтес
Йăваш?
Мĕншĕн çакăнта
Мĕнпур
Этем тӳсейми
Хĕн-хур?
Ĕçлетĕр вĕт пит
Маттур.
Ĕçлетĕр ĕмĕр-
Ĕмĕр,
Çапах саплăк çеç
Йĕмĕр,
Çапах çăпата
Ура,
Пурнан пӳртĕрсем
Хура.
Е ку хăвăра
Кура?
Чăваш ĕнсине
Хыçать,
Пăхать мал енне,
Хыça.

Ытти те çаплах
Хресчен,
Такамшăн вăл та
Ĕçчен.
Мĕскер тăван-ха
Пĕччен?
Йĕрет, хурланать
Кĕсле,
Шырать урăхла
Меслет.
Анчах ун сасси
Çинçе,
Ялтан тухасси
Инçе,
Ларах кăмаку
Çинче.
Кавлет хĕвеле
Вăпăр,
Чӳке хатĕрле
Вăкăр.
Куçа тĕтĕрет
Кăмпа.
Сăра ĕçтерет
Чăмпа,
Кичем-тĕк — вĕрет
Хăмпа.

II

Çулсем шăвăнаç
Пĕр май,
Лăпланчĕ шăпăр,
Сăрнай.
Шăппăн тĕлĕрен
Яла
Кĕрет тĕрлĕрен
Йăла.

Çуралчĕ кĕрен
Ялав.
Манман пуль-ха эс
Ăна —
Пĕр çирĕм ик çул
Кăна,
Эпир çуралман
Чухне,
Раççей ĕççыннин
Юнне
Тăктарнă вĕт пит
Йӳне.
Чăваш çĕршывне
Ун чух
Хускатнă çĕнĕ
Учук.
Хастар Тимухха —
Хури*
Ялти халăха
Юри
Вĕрентнĕ пăлхав
Юрри.
Ăна эс пĕлен
Аван,
Вăл ирĕкпелен
Тăван.
Ăна астăвать
Чĕмпĕр...
Кайран хытăрах
Чĕлпĕр,
Вара ĕмĕрлĕх —
Çĕпĕр.
Мухтавлă вăрман

* Хури (Т. Н. Николаев. 1878—1918 çç.) — чăваш сен паллă революционерĕ.

Тайга,
Анчах эс кунтан
Кай-ха,
Çуратнă Кăшка...
Çынсем...
Ăçтан кăмăлпа
Тӳсен,
Ăçтан чăттăр-ха
Студент.

III

Çĕпĕр! Юмахри
Çĕршыв.
Паха ун мăйрин
Шăрши.
Анчах аллунта
Çăра,
Хуралçă утать
Хыçра —
Мăйăр та таттармасть,
Чарать.
Пăшаллă салтак
Хăнчăр,
Анчах урунта
Сăнчăр.
Сăнчăр чĕркуççи
Таран,
Утатăн аран-
Аран,
Ăçтан унпала
Таран?
Сăнарĕ иккен
Салтак,
Часах пилĕкне
Салтать.

Чăмăр саламат
Чĕнтен,
Выртах, ан ахлат
Хĕртсен,
Çапла касамат
Тĕнчен...
Лере инçетре
Кăшка,
Урам варринче
Çăка.

Çанталăк каллех
Уяр,
Çăка йăлăнать.
Каçар...
Ĕçсем курăнать
Начар.
Чăваш калаçать
Хуллен,
Кĕтеççĕ хыпар
Куллен.
Хыпар илтĕнмест
Ниçтан,
Хăрушă сăмах
«Ристан»
Усал хурахпа
Пĕр тан.

IV

Кунçул — ĕмĕре
Çеçке,
Ĕмĕр тĕрмере
Кĕске.
Кам курнă — пĕлет-тĕр,
Тен:
Хĕвел лекеймен

Çĕрте
Черченкĕ ӳсет
Серте.
Хури — сарăлсан
Чечек,
Сасартăк юлать
Хĕç пек.

Тискер тупăклах
Ăна
Хĕсет тăваткал
Стена,
Темтепĕр кĕрет
Тăна.
Чĕмпĕр... Шупашкар...
Хусан...
«Хресчен пĕр кавар
Пулсан,
Тен, лармăттăм эп
Кунта,
Анчах хĕрхенеп
Чунтан
Çав сӳннĕ хĕлхем-
Вута!»
Пĕрре кăментант
Кĕрсе
Каларĕ халтан
Хĕрсе:
«Сире паян кун
Хавас —
Тухатăр кунтан
Ак час.
Вăрçа! Раççее
Çăлас».
Унччен те пулмин
Пĕр çын
Сапать тĕрмене

Краççын...
Урам янрататъ
Хыпар,
Мĕнпур арестант
Чăл-пар...
— Суян, кăментант!
Ан тар!

V

Хĕлле. Шартлама
Февраль.
Ăна астумап
Эп халь.
Тухманччĕ ун чух
Килтен,
Анчах вунă çул
Иртсен
Юрлатпăр Хури
Çинчен.
Хури — мĕльюнтан
Пĕри,
Чăвашшăн тăван
Хури!
Çĕмĕр сăнчăрна.
Çĕмĕр!
Пуçланчĕ çĕнĕ
Ĕмĕр.
Хури, эс мĕншĕн
Чĕмсĕр?
Вуникĕ асаплă
Çул
Ăна пăхăнтарнă
Чул.
Илтет вăл «тапран»,
«Салат».

Анчах хӑй аран
Калать:
— Ӑҫтаччӗ-ши ман
Халат?..
Пӗри ак ӗнтет
Ташша,
Ури айӗнче
Патша.
Чӑн-чӑн Микулай
Сӑнне
Вӑл тунӑ кӗле
Тӗпне,
Ҫурать те каллех
Хӗнет.
Хури тӗлӗнсе
Пӑхать:
Ӑҫтан кун пекех
Хӑват?
Мӗне пӗлтерет
Карттин?
Патша кирлӗ мар
Эппин?..
Тинех революци,
Тин.

VI

Салатрӗ тара
Пӑшал,
Улать тайгара
Шакал.
Хӑйра ҫӗҫҫӗне,
Хӑйра!
Раҫҫей — сӗтӗрӗнен
Майра —
Ан пултӑр текех

Кайра.
Анчах ĕççыннин —
Аюх,
Нимĕн те çĕнни
Халь çук.
Çапать вăл, мĕскĕн,
Пĕççе;
Керенски çӳрет
Вĕçсе,
Çĕленĕ питне
Кĕççе...
Ӳсет урăхла
Вăй-хал,
Пуçтарчĕ тара
Пăшал,
Шăпах тайгара
Шакал.

VII

Хури таврăнать
Киле.
Кăшка, çыннуна
Пилле!
Ан ютшăн унран,
Ан чак,
Куран — вăл суран
Анчах.
Хавшаннă, куран,
Тăнчах.
Вуникĕ асаплă
Çул —
Ана кăвакартнă
Чул.
Килйыш палламасть,
Кам ку?

Мĕскершĕн-ха, ма
Салху?
Кăкăр таранах
Сухал,
Кĕтеслĕ янах
Ун халь,
Ниçтан паллама
Çук хал.
— Тимуш... Тимухха?
Çавах...
Чухлаççĕ пуль-ха
Çапах.
Ыйтаççĕ: ăçтан,
Мĕнтен
Мехелĕ килет
Тĕнчен?
Илет-ши çĕре
Хресчен?
Хури шухăшлать:
— Аха...
Керенски — мăкла
Така.
Вăл çакнă паха
Ука,
Кунта макăрать
Суха.
Эппин, пуçланман
Пуль-ха...

VIII

Хире кичемлет
Хăмăл,
Салху-çке темле
Кăмăл.
Шаланкă йĕрет

Çинçен,
Эс çав кĕвĕре
Сисен
Такам ĕмĕрĕ
Çинчен.
Ку кам-ши —васкать
Çулпа,
Мĕнле мăн каска,
Юпа?
Ку кам пăрăнать
Унтан?
— Тăхта! Чар ăна,
Шуйттан!
Ăçта çăвана
Чупан?!

Курмастăн-им эс,
Улпут,—
Ванать, тӳсеймест
Чул çурт.
Илтместĕн-им çак
Сасса:
— Пĕтех, юнĕçен
Сăпса,
Кăлар ман юна
Хăсса!
Октябрь! Çунать
Çĕршыв.
Мĕншĕн эп çунат-
сăр-ши?
Çĕклен эс, часрах
Вăран,
Этем тивĕçне
Курман
Асаплă чăваш —
Тăван!
Илтсемччĕ, мĕскĕн,

Илтсем:
Çăтмах — çĕнĕ тĕн
Çĕнсен!
Пăхсамччĕ вĕçрен
Вĕçе —
Хĕрессĕр этем
Миçе?
Хĕçе эс ĕнен,
Хĕçе!

IX

Ан чарăн, йĕтре,
Юрла.
Кăвак пĕлĕтре
Çурла.
Ан çывăр, çĕнĕ
Хурал,
Октябрь чĕнет —
Хускал,
Тĕлле тĕнчене.
Путвал!
Кĕр-рĕс! ишĕлет
Пашне.
Тустар, ан шелле
Ăшне.
Çак ылтăн калпак —
Пире,
Вăл пирĕн халпа
Хитре,
Шăратăр унтан
Йĕтре!
Çак тутлă эрех —
Ман юн,
Эп пурĕпĕрех
Мĕльюн...

Чипер çарамас
Хěртен
Çаратар алмас,
Мерчен.
Вăл пирěн хавас,
Пиртен!
Мěльюнлă сасса
Пěр сас
Ăçтан каласа
Парас?
Анчах мěльюнтан
Пěри —
Чăвашшăн тăван
Хури —
Пулса-мěн наган
Хурри.
Çак пысăк хуйха
Пěлме
Сěмленчě çăка,
Йěлме.
Калан никамах та
Çук,
Çил çеç такама
Хăш чух
Чўклет тем амак
Учук.

X

Çулсем шăвăнаç
Пěр май,
Каллех вăранать
Сăрнай.
Каллех шеремет
Тухъя,
Тухса илемлет

Туя.
Сӳнмест-мӗн ӗмӗт,
Туян.
Кунçул — ӗмӗре
Çеçке,
Ӗмӗр тӗрмере
Кӗске.
Анчах асăрха,
Сăна:
Экран çийӗнчи
Çынна
Палларӗ мӗнпур
Хăна.
Çăтаймӗ, эппин,
Çăва,
Куран — миçе пин
Чăваш
Унпа пӗр кавар
Çак кун:
— Паян Шупашкар
Ман чун,
Юлташ, алă пар,
Ыр сун...
Çитмен ӗмӗтсем
Çитсен,
Аваллăх тӗксӗм
Иккен.
Анчах вăл асапсăр
Мар,
Кӗлленӗ пайтах
Кăвар.
Ăна та пуçа
Таяр.
Çухалнă ята
Тупсан,
Чуну хӗпӗртет

Пуль сан.
Анчах ятсӑрри
Миҫен,
Ҫӗклентӗр тӑпри
Вӗсен!
Ҫак юрӑ Хури
Ҫинчен...

192(?)

* * *

*Савнӑ Туса*

Ҫӗре чечек пек вӑхӑтра
Кӗре сайра асра тытатпӑр:
Пурнасчӗ тетпӗр хӑвӑртрах,
Пурне те астивме васкатпӑр.

Ун чух ялан ҫурхи кунсем
Пире-мӗн туйӑнать савассӑн.
Тӑкать хӑй хевтине этем
Пӗр шелсӗр, сӑххӑн та хавассӑн.

Эп те ҫаплахчӗ, Савнӑ Тус,
Ӑна халь тин тунмастӑп пулӗ.
Ӑҫта кӑна пырса ан пус —
Тумхахлӑччӗ ман яшлӑх ҫулӗ.

Сӑхлав нумайччӗ таврара,
Уйла-суйла пӗлместӗм эпӗ.
Пуҫтахлӑх шӑрӑхне вара
Тӳсеттӗм пушхирти тӗве пек.

Пуртех кантарайман ӗҫ, ҫук!
Хӑйӑрлӑхра сайраччӗ чатӑр.
Тепри сана эс ҫуннӑ чух
Хӗрхӳ эрех пама та хатӗр.

Анчах сыпмарăм эп ăна,
Тен, чунăм çаплипех сыхланчĕ.
Таçта, шалта, ман яланах
Йăлтăртататчĕ çутă шанчăк.

Паян çав шанчăк çиелте,
Ман шухăшăм уяр та уçă.
Тен, эп те пулăп тĕпелте
Чăваш кĕрекине ларуçăн.

Чылай тĕреклĕ пек чĕре,
Тĕпчевлĕ асăм та халь сывă...
Сана асилнĕ сехетре
Кĕвĕленсе тухать çак сăвă.

1930

## Г. Т. АЛЕНТЕЕ

Кунçул иртет. Ман пурăнăç уявĕ,
Çурхи шыв пек ман çамрăк ĕмĕрĕм
Шавларĕ те лăпланчĕ. Халь, туяп эп,
Тĕреклĕ çыранпа хĕстерĕнтĕм.

Эй, Алентей! Ман яшлăх сăн-сăпачĕ
Сан умăнта эрешленсеччĕ, тусçăм.
Сана пула, тен, чунăм сасă пачĕ.
Пилле: янратăр ху шайлах вăл уççăн!

Эп астăвап: чылайăнччĕ эпир —
Йӳле чĕреллĕ çăмăлттай этем,
Паян кунта выртсассăн, ыран ир
Ăçта вăранасса пĕлменскерсем.

Шăвать кунçул. Сиксе вĕрен романтик,
Эп хытрăм хĕллехи сенкер пăр пек.
Пĕрех çăл, Атăл куçĕ пек, сыхланчĕ,
Пĕрех çăл ман шăнмасть пуль хĕлĕпех.

Йăхран йăха тапан çав юрă çăлĕ —
Вăл кăчăр та ан пултăр сывă чух.
Асаттесен юрри манра çĕнелĕ,
Манне çĕнетĕ, тен, хастар мăнук.

Тӗлӗнмелле йӗрке çак çӗр çинче:
Чакмасть те, хушӑнмасть те-мӗн матери.
Эп пур, айван, темскер хушасшӑнччӗ,
Эп ӳстересшӗнччӗ... Епле май терӗн?

Пӗлетӗп, нимӗн те ӗмӗрлӗх мар —
Çуралчӗ, ӳсрӗ, ватӑлчӗ те вилчӗ.
Анчах пурнать Гомер, пурнать Омар,
Пурнать Пракситель, Рафаэль те Винчи.

Çаплах эп те пурнасшӑнччӗ пӑртак.
Ан кул: яш чух эпир мӗнпурӗ — Гамлет.
Тин кӳлнӗ тихалла тек тӑпӑртат,
Кайран çавах сана турта ытамлӗ.

Турта вӑл — тимӗр куллен-кунлӑх тусӑм!
Хресчен тымарӗ пит çирӗппипе
Ӗмӗрлӗхшӗн йӑлӑнтармасть ман муза,
Пуласшӑн мар вӑл турӑш пек пике.

Çӗршыв сӗткенӗ, çак çӗр сиплӗхӗ
Ҭапса тӑрать ун çамрӑк пӗвӗнче.
Улма пек кӑкӑрлӑ çав пиçӗ хӗр
Капла ӗçчен пулманччӗ халиччен.

Идилли мар. Çапах çак çуртӑмӑр
Мана халь ӗç керменӗ пек ӗлккем.
Вӗлле тулли сӗрлет-и хурт-хӑмӑр?
Çаплах ман пуçӑмри ӗмӗтӗмсем.

Çулсем якатнӑ çӳлӗк çийӗнче
Сулмаклӑ кӗнекесемех пӗр ушкӑн;
Стена тулли сӑнсем, хӑйне тӗнче:
Мицкевич, Байрон, Иванов та Пушкин.

Пӗр иккӗш-виççӗш хальхисем те пур —
Пера çарне лексе ят илтнисем...
Килсе курсам, юлташăм, килсе кур,
Кӗрсе йăпат пӗрре, асна илсен.

Кӗрхи çӗрсем тӳлек кӗрекере
Тӗрленӗ иртнӗ шухлăх, мыскара.
Юлташлăх çамрăклăх пекех: кӗрет,
Тухса каять те — тыт ăна вара!

Килсе курсам. Туссемшӗн, эс пӗлетӗн,
Ялан ман хатӗр сарлака путмар.
Пурне те тарават эп халь, пурне те,
Пӗри те эсӗр чунăма ют мар.

1931. Сиктӗрме

* * *

Пулчĕ вăхăт çапла: бульварта çĕр каçах
Çарамас çăкана çил лăсканă чухне
«Александăр Çеркейĕч! Санпа ăшăрах»,—
Тесе эп йăпшăнаттăмччĕ Пушкин çумне.

Пулчĕ вăхăт çапла: çумăрлă каçсенче,
Автомат будкисем ăшĕнче пытанса,
«Эй эс, шăтнă тӳпе,— теттĕм эп,— чаранччĕ!
Тасатаймăн ватсупнă Çĕре пит ансат».

Пулчĕ вăхăт, анчах... çитĕ, урăх ан пултăр!
Çĕнĕ шуçăм, çутат тухăçа, анăçа.
Çук халь ман çĕршывра ĕнтĕ килсĕр те çуртсăр.
Пĕр талант та тек юлмĕ халь тин манăçа.

1931

* * *

Пытансам, салхулăх, шаларах,
Савăнăçăм таврăнтăр киле.
Кам чунпа юратĕ шалпара —
Ун пуçне ялан тăвăр килет.

Чун-и, юн-и, мимĕ çеç-и вăл...
Пур этемĕн ĕмĕт, çав чĕнет:
Тапратать пуçра вăл çил-тăвăл,
Чĕрене çĕлен пекех ĕмет.

Хура тинĕс каскăн хумĕсем
Хам çил каснă вăхăтăмсене
Асилтерчĕç акă, пăхнăçем
Умра иртнĕ яшлăх сĕмленет.

Иксĕлмиччĕ хал. Тĕллев — тĕнче,
Сахалтан та — Гамлет калăпĕ.
Ĕмĕт ку. Чăн пурнăç умĕнче —
Порт, вокзал, теплушка, палуба...

Пытансам, салхулăх, пытансам!
Курам мар пурне те хам куçпа.
Пĕтĕмпех курсассăн — пит ансат
Макăрса яма та мăн пуçпа.

1931

## СУХУМ

Сухум. Тĕрĕкле — шыв та хăйăр ун ячĕ,
Пăхатăн та — пит килĕшмест çĕршывне!
Çук: ешĕл пахча тесе каламаллаччĕ,
Шыв, хăйăр пытаннă йăлт çулçă ăшне.

Унта та, кунта та пăт-пат шурă çурт.
Каç. Лампа асамлăн çунать çĕрĕпе,
Çути уйăхран çутăрах вунă хут.
Пĕр тинĕс кăна темшĕн кăмăлсăр пек.

Пĕр тинĕс кăна, шухă шухăш астарнăн,
Хаш-хаш сывласа хыпалать çыранне.
Мана вăл калать пек: çак пурăнăç тарăн,
Шик-шик шăхăрса тухма çук ун анне...

Эп халь каçсерен — сăлтав пур-и ман, çук-и —
Çыран хĕррине уттарап пĕр-пĕччен.
Йăлтах çырса хухнă поэт пек чуп-чухăн,
Пуш-пушă çӳреп хам йĕре ӳкиччен.

Хăш чух, юлашки самантне пурнаканăн,
Эп лăнчă яратăп чĕре чĕлпĕрне:
Нимпе савăнмастăн, нимпе хурланмастăн,
Йăлтах астивсе-тутанса ĕлкĕрнĕ,
Тутам Мефистофелле çеç йĕлпĕрнĕ.

Эрехсӗр эп ӳсӗр, мухтавсӑр мӑнаҫлӑ,
Магноли аллейӗсемпе утӑмлап.
Тӗп пултӑр теп сӑвӑ! Эп ун урлӑ каҫнӑ,
Эп ӳтлӗн ҫитесшӗн алла-утмӑла.

Анчах мана пулӑҫӑсем пӗлтереҫҫӗ:
«Уяр каҫсенче ким ҫинчен тинӗсре
Куратпӑр хула ишлӗкне эпӗр,— теҫҫӗ,—
Паян тинӗс лӑпкӑ, пӑхас теместре?»

Пӑхас. Акӑ шыв тӗпӗнчен Диоскури
Тухса ҫӗкленет авалхи илемпе.
Вара эп пӗлместӗп — умра тинӗс пур-и?
Хумсем-и, хӳме-и умра? Тӗлӗк пек!

Ҫав путнӑ хула, шыва кайнӑ пахалӑх
Мал ӗмӗт кӑна чӗррине пӗлтерет.
Вара, тунӑ ӗҫ вилмессе шаннӑ майлӑ,
Сасартӑк туртса хытарап чӗлпӗре.

Вара эп хама уйрӑмах перекетлӗн,
Тирпейлӗн тытап, упрарах тӑкаклап.
Хивре самана тӗлсӗр мар ӗрӗхет-мӗн,
Вӑл манӑн хуҫасӑрлӑха та кӑклать...

Хумхан, Хура тинӗс! Хускат ҫыранна,
Путар та пытар хӑть пиншер Диоскури:
Кунҫул кӗнеки сӑмахпа ҫырӑнать,
Ӑна шыв илеймӗ паян-ыранах,
Тен, манӑн сӑмах та мана чӗррӗн усрӗ.

Хумхан, Хура тинӗс! Салам, пӑтӑрмахҫӑ!
Алт манӑн чуна ҫӗнӗ, тарӑн йӑран.
Хальхи пурнӑҫпа тан пыма каласамччӗ,
Кӑтарт тӑшмана карап пек аякран.

Хумхан, Хура тинĕс! Анчах... хура мар эс:
«Потемкин» матрусĕн çухи пек кăвак.
Лере, кăнтăрла чиккинче, шурă парăс,
Хĕвелтухăçне карăнать хĕрлĕ ак...

Хăш тĕсĕ халь тухĕ çĕнсе, çиеле?
Шур кăпăк йўçсе чашкăрать кăлăхах:
Хĕрли çăраран çăрарах кĕвĕлет,
Юнланнă, суранлă хум çарĕ, «пăлхав!
Пăлхав!» кăшкăрса, кустарать хĕвеле.

1931

## КУÇСЕМ

Утатăн çуран, автопа эс шăван,
Этем хушшинче трамвайра хĕвĕшетĕн —
Куçсем тĕл пулаççĕ, кураççĕ ялан,
Куçсем алхасаççĕ чĕкеç чĕвĕлтетнĕн.

Куçсем калаçаççĕ сăмахсăр, ансат:
Пĕри «нихăçан та сана курас çук» тет,
Тепри: «Питĕ шел, çакăнтан йăлт мансан,
Анчах та анмастăр-çке эп аннă чух»,—тет.

Ав виççĕмĕш куç ӳкĕтлет: «Ăнсăртран
Пуçланнă ĕçсем тепĕр чух ăнăçуллă,
Тĕл пулăпăр, тен? Шухăшлăр. Мар пулсан —
Телейлĕн вĕçлентĕр, куçсем, кунăр-çулăр!»

Тăваттăмĕш куç илĕртет, шантарать,
Тĕнче хĕррине кайма хатĕр ун хыççăн.
Анчах — чарăну. Вăл анать. Антăра?
Пăхса кăна юлтăр вăраххăн та выççăн.

«Куçа пăхма тунă,— тет пиллĕкмĕшĕ,—
Сире кăна мар, эп пурне те пăхатăп.

Анчах мана халь, тен, эсир килĕшĕр.
Суйлап, çавăнпа çын паха та...»

Куçсем — музăк евĕр, кашнин хăй юрри,
Илтсен ирĕлет темле çыннăн чĕри те.
Куçсем — кăвакки, хăмăрри, хуп-хури...
Куçсем — çирĕмри, вăтăрти, хĕрĕхри те...

1932

## СĂН

Санран пĕр ҫын кăна туса
Кăшт йăнăшнă-мĕн ҫутҫанталăк.
Материал ҫитет пуль сан
Ик-виҫ этемлĕх е ытлалăх.
Йăваш та эсĕ, шăллă та,
Япшар та эсĕ, эсĕ — хытă,
Хаяр та ҫепĕҫ, ăслă та...
(Ухмах теейменп: ку ен — ытă.)
Тăп-тăп та, ярханах та эс,
Сăпайлă та, пуҫтах та питĕ.
Кĕскен сана мĕскер теес?
Эсрел те эсĕ, пирĕшти те.

1934

## ВЛАС ПАЙМЕНА

Пин те пӗр айӑп манӑн, Влас!
Сывах. Кунтах. Манман.
Чӗрем те улшӑнман пулас.
Ҫапах ҫыру ҫырман.

Каҫар мана эс, пултарсан.
Ятла, халу ҫитсен.
Анчах хура ан пултӑр сан
Ҫиллӳ ман тӗлӗшрен.

Сан шанчӑкна хӑвармасса
Ӗҫлесчӗ хытӑ ман.
Хам ку таран аппаланса
Ҫур сӑвӑ та ҫыхман.

Ҫак пурӑнӑҫ пуҫа сӑмах
Пулса вырнаҫиччен —
Мӗнле йӗрке-ши? — яланах
Чӗрри туртать иккен.

Уй-хир сӗтелӗ хушшине
Ларса иртен те ир
Хура тӑпра кӗнекине
Эс кассӑн-кассӑн сир.

Шултра та тутӑ рифмӑллах
Акатпӑр та пӗрче —
Виличченех вӑл выртмалла,
Вилсессӗн — пин ӗрчет.

Ак ҫутҫанталӑк пӗрлӗхӗ,
Ак ӗмӗрне ҫиҫен,
Чуна хавассӑн тӗрлекен
Тӗп тупсӑмӗ тӗнчен.

1934. Микушкель

## ÇУЛСЕМ-ЙĔРСЕМ

Иеллĕ те йĕрĕхлĕ сулăнкă-лакăм,
Учук çырмисем, сакăлта вар-васан...
Эп мар сире саврăм, эп мар халапларăм,
Ача-пăчана сирĕнпе хăратса.

Хĕлле çил-тăманлă, çулла сĕм тусанлă,
Ялан арçуриллĕ çулсем те йĕрсем!
Эп мар сирĕнпе хуйхă-суйхă пусарнă,
Сăвва-юррăма сире май ĕнерсе.

Кĕрпе кĕрен сарă, çулла йăлтăр ешĕл,
Ялан ӳхĕлле çӳçенен сĕм вăрман!
Эп мар кайăку сан, эс мар чĕрене шел,
Эп мар канлĕх суннă сана çывăрма.

Анчах çак тĕлленчĕк çĕршывăн сăн-пичĕ,
Пĕртемлĕ çанталăк вăйии-тĕррисем —
Суранăм мана паян кун аса килчĕ,
Чĕре варрине çĕçĕлле тирĕнсе.

Мĕн чухлĕ тискерлĕх, мĕн чухлĕ суялăх,
Мĕн чухлĕ айванлăх! (Ан ил йывăра.)
Паян тата манăн сана, чăтăм-халăх,
«Ыйху тутлă пултăр», теес-ши вăра?

Эп мар сан пуҫелӗк, эп мар сан вителӗк,
Ҫемҫе тӳшекне те эс ан кӗт манран.
Сана эпӗ сиплӗ вӗлтрен пек вӗтелӗп:
Ӗҫчен ал-уру сан сахал хӑпарман.

Вӗтелӗп те хам та эп канӑҫ пӗлеймӗп,
Ыратнӑ чунпа лӑпланаймӑп минут.
Кӳп-кӳп ҫупӑрлан пек, чее шӑлйӗрен пек
Юптармӑп эп ҫӑмӑллӑн: хам сан ҫынну.

Эп мар ӗмӗтӳ сан, эп мар мухтаву сан,
Анчах мана пӳрнӗ — санпа юнашар —
Пур кивкирӗке ҫунтармашкӑн навусӑн
Хӑртса чи малтан хамӑрти йӑнӑша.

Эп мар автану сан, анчах эс вӑрантӑн,
Хӗвел хӗпӗртевлӗ. Ҫанталӑк таса.
Ҫитет сӗнккеме ерипен те вӑраххӑн,
Кӳлсе-тӑварса, чӗлӗме паккаса.

Эп мар вӑратуҫӑ, анчах шуҫӑм куҫлӑн
Вӑрантӑм санпа эп пӗрлех, уяртсан.
Хура пӳртсенчен кермене алӑк уҫнӑн
Пуян та хаваслӑ малашлӑху сан.

1934



ПЕТĔР ХУСАНКАЙ

МЕХЕЛ

# САВНИ

* * *

Мерчен куçлă кĕмĕл çĕрĕ
Пĕр ята асăнтарать.
Эх, мăнтарăн сарă хĕрĕ,
Хыптарать те çунтарать!

Çеçкеленнĕ улма сачĕ
Тĕлĕрет-ха шăп-шăпах.
Алтăр çăлтăр, каласамччĕ:
Мĕнле пулĕ ман шăпа?

1923

* * *

Хурама та пĕкĕ, йĕс шăнкрав.
Сĕм вăрмана çурать янăрав.

Эх, аван-çке иккĕн каçпала
Çӳремешкĕн савнă туспала!

Тин ӳкейнĕ мамăк юр выртать
Кĕреке çитти пек вăрманта.

Анчах эрех-сăра тăкăнмасть,
Ман чун савни хушпу тăхăнмасть.

Юртах, утçăм, юртах тулхăрса,
Ан ахлатсам, тусăм, хуйхăрса.

Нихăçан та, санпа пĕрле чух,
Ман куçăма куççуль нӳрлес çук.

Шур пĕркенчĕк витĕннĕ чăрăш,
Мана сăхлантарма ан тăрăш,

Çумра ларан хĕрĕн чĕрине
Ан ыраттар, пăхса ман çине...

1923

* * *

Тур ут вичкĕн тихине
Йĕнерлесе утлантăм,
Инçе çула савнине
Хампа пĕрле йыхăртăм.

Савнă тусăм хурланса
Пуçне усрĕ çĕрелле;
Пăхса илчĕ, кăшт тăрсан,
Ман çине куççульпеле.

«Тĕнче касса пурăнма
Çуралман эп!» — терĕ вăл.
Манăн çамрăк чунăма
Çурса ячĕ çил-тăвăл.

Ăмăрткайăк утăма
Чĕн чĕлпĕрпе хистейрĕм.
Утçă юртрĕ, çиле май
Хура çилхи вĕçейрĕ.

«Сывă пулах, мĕскĕн чун!» —
Тени анчах илтĕнчĕ.
Ман чĕрери вĕри юн
Урăх ĕçшĕн кимĕлчĕ[1].

1923

[1] Кимĕлчĕ — чакрĕ, сахалланчĕ, иксĕлчĕ.

## ÇУХАТРĂМ

Мăшăр кăвак куç
Ман çине
Ăшшăн пăхатчĕ.
Ăрăскалсăр пуç
Хуйхине
Сирсе яратчĕ.

Тĕл пулмассерен
Чĕкеç пек
Чĕвĕлтететчĕ:
«Тусăм, ан кӳрен,
Сар чечек,
Эпĕ — сан»,— тетчĕ.

Эпĕ манмарăм,
Ĕмĕте
Тасан усрарăм;
Çичĕ ютра та
Ют çĕрте —
Асран ямарăм.

Шанаттăм ăна,
Чĕререн
Ĕмĕтленеттĕм:

Кĕтет пуль мана,
Кунсерен
Кĕтет пуль теттĕм.

«Çитĕп ак, тусăм,
Кăлăхах
Ан тăк куççульне»,—
Тесе çыраттăм
Яланах
Çырура хăйне...

Ак ĕнтĕ тăван
Çĕршывра,
Хам çуралнă ял...
Утатăп... çаран...
Улăхра...
Савăшма кал-кал!

Анчах савнисĕр,
Пĕр-пĕччен
Мĕн тăвас-ха ман?
Ăна ирĕксĕр
Килĕнчен
Вăрланă пуян.

Тăван ашшĕне
Эрехпе
Чыхăнтарнă-мĕн,
Ватă амăшне
Хисепе
Картас та темен.

Вунçакăр çулхи
Мĕскĕне
Мул астарас çук.

Епле тӳсрĕ-ши
Ун чунĕ
Хĕве хупнă чух?

Читлĕхри чĕри
Ман патма
Ăнтăлмарĕ-ши?
Манăн инçетри
Ытама
Вăл туймарĕ-ши?

1924

* * *

Хура чӗкеҫ вӗҫет ҫӳлелле,
Ик ҫуначӗ юлать хыҫнелле.
Эпӗ шухӑшлатӑп малалла,
Ӑрӑскалӑм юлать каялла.

Кӑвик кӑвакарчӑн пулӑттӑм,
Карлӑк ҫине ларса юрлӑттӑм,
Хуйхӑ-суйхӑ мӗнне пӗлмӗттӗм,
Куҫҫуль сая ярса йӗмӗттӗм.

Ҫӳл тӳпере сӳнчӗ ҫут ҫӑлтӑр,
«Сан ҫӑлтӑру» тесе ан калӑр.
Ман ҫӑлтӑрӑм ҫӗртех, пӗлсемӗр:
Ҫулӑм кӑвак куҫлӑ чипер хӗр.

Чӗвӗл чӗкеҫ чӗппи пулӑттӑм,
Шурӑмпуҫа хирӗҫ тухӑттӑм,
Сар хӗр шӑналӑкне сирӗттӗм,
Тутлӑ ыйхи тӗлне кӗрӗттӗм.

Вӑратмӑттӑм эпӗ савнине,
Ыраттарса ҫамрӑк чӗрене:
«Юрататӑп, тусӑм!» — теейсе
Хӑварӑттӑм ӑна илттерсе.

1924

* * *

Йӑлӑмри йӑмра хӳттинче
Эп хӗпӗртерӗм:
Йӑлтӑрти хӗвел, ҫут тӗнче
Эсӗ пуль  терӗм.

Санӑн чӗнтӗрлӗ чӗрҫине
Пуҫӑма хутӑм.
Ӑшӑ аллупа ҫӳҫӗме
Якатрӑн, туйрӑм.

Ҫывӑхра ҫӑл ҫук — сулхӑн шыв
Шӑнкӑртататчӗ,
Юман тӑрринчен ылмашӑн
Ку-ку! янратчӗ.

Выляттӑн та эс савӑнса
Юрӑ пуҫлаттӑн,
Ҫамрӑк кунҫула асӑнса
Чунтан мухтаттӑн.

Ем-ешӗл курӑк, сар чечек
Пирӗн тавраччӗ;

Сăрт çинчи кĕтӳç вăрттăн тек
Пире пăхатчĕ.

Ăнланчĕ пуль вăл ĕççыннин
Ирĕк тивлетне,
Йывăр ĕç хыççăн савăнни
Килĕшӳллине.

1924

* * *

Ĕнер кăна тĕнче чăпарччĕ,
Паян вăл акă шап-шурах.
Хĕвел те именсе хăпарчĕ
Çанталăк тасине кура.

Ĕнер кăна тумхах та лакăм
Илетчĕ çул çинче чуна.
Паян ут кӳлтĕм те юрттартăм,
Пĕр сассăр вирхĕнчĕ çуна.

Çемçе те нӳрлĕ шурă юрĕ
Пусăрăнса çул пулнăçем
Ăшра ман çитĕнчĕ пĕр юрă,
Чĕре туптарчĕ сăмахсем.

Инçе-и, çывăх-и — çитетпĕр,
Тухатпăр асăннă çĕре.
Сиксе ларсам манпа, чипер хĕр,—
Ман чун хавалĕ, ман чĕре!

Илемлĕ ир, çунаçăм хӳтĕ,
Тип утă унăн ăшĕнче.
Çапах пĕччен шăнса эп кӳтĕп,
Сана та сивĕ-тĕр пĕччен.

Сиксе ларсам манпа эс, тусӑм.
Ларсам хӑюллӑн, тачӑрах.
Ҫурма ҫула ҫитет ман утӑм,
Иртсе те кайӗ сансӑрах.

Иртсе кайсассӑн, эс кӳренӗн,
Тӑванӑн курӑнӗ ҫуна...
Пуҫне ухса юртан ҫӳренӗм
«Чипер юл!» тенӗ пек сана.

1925

* * *

Ак ӗнтӗ ҫур ҫӗр. Куҫ хупӑнмасть.
Темӗншӗн пуҫ та ыйха парӑнмасть.

Шав умӑмра хӗрача тӑнӑ пек,
Пӗр нихӑҫан манӑнми сар чечек.

Ҫав чечеке эпӗ кӳтӗм парне
Чи малтанхи юрату кӑварне.

Ман ӗмӗрех асӑмран каяс ҫук:
Эп унпала юнашар ларнӑ чух —

Тен, юлашки лӗп уяр кӗрхи каҫ,
Шӑп... кӑшт кӑна ҫирӗксем хумханаҫ.

Ҫепӗҫ саспа юхӑм шыв кӗрлени,
Шыв юррипе тӑп ҫыран тӗлӗрни —

Пурте ҫаксем кунти мар, инҫетри...
Эх, ачашлать-ҫке чуна хӗр чӗри!

1925

* * *

Кӗтрӗм, кӗтрӗм эп сана, савниҫӗм,
Йӑмӑхтартӑм мӑшӑр куҫӑма.
Кантӑка йӑр-яр ҫуратчӗ ҫиҫӗм,
Халь — хуллен пуҫларӗ лӑпланма.

Инҫетре вылян шупка шевле те
Сан туту чеченӗн кулнӑ пек,
Тапхӑр-тапхӑр вӑшӑрхан ҫиле те
Пурҫӑн тутӑр вӗлкӗшет пуль теп.

Ыйхӑла пуҫланӑ куҫӑма эс
Халь килсе уҫассӑн туйӑнан.
Тӗлӗрсе ларатӑп-ҫке, айван ӑс:
Кӗтӗн... Ыталарӑн мӑйӑмран...

Кӑкӑра кӗртех турӗ чӗремҫӗм,
Сана чӑмӑртарӑм хам ҫумма.
Ҫаплипех тӳнсе вара, пикемҫӗм,
Тӑснӑ эпӗ тутлӑ ыйхӑма.

Шурӑмпуҫ тула сенкеррӗн хыпнӑ,
Эпӗ аташатӑп тӗлӗкре.
Вӑранайрӑм — ыталаса тытнӑ,
Чӑмӑртанӑ мамӑк минтере.

1925

* * *

Çуркуннеччĕ. Кĕрлетчĕ çыр-варĕ.
Эп лараттăм унпа иккĕнех.
Ман умра унăн куçĕ вылярĕ
Кăвакарчăн вĕçсе иртнĕ пек.

Куç харши — кăвакарчăн çуначĕ —
Пĕр саланчĕ, пĕр вашт пĕрĕнчĕ.
Çĕрĕ куçĕ кăвар пек çунатчĕ
Унăн ятсăр пӳрни тĕпĕнче.

Хăйраса шĕвĕрлетнĕ чĕрни ун,
Кăтралатнă сар çӳç пайăрки
Хускатмарĕ манра тек пĕр нимĕн.
Тĕлĕнтерчĕ хĕре эп лăпки.

Çӳп-çӳхе тутисем реçинкке пек
Карăнса сирчĕç вак шăлсене.
Вара сулхăн саспа — илтрĕм эпĕ —
Вăл каларĕ, пăхса ман çине:

«Эс куратăн манра чура çеç-мĕн,
Тумтирпе хакласа кăмăла.
Кам мана выляса пит илесшĕн —
Çав хăйне выляса ямалла!»

1925

* * *

Вăшăлах та вăшăл, ай, сулхăн çил,
Улма çеçкисене татса ан ил.

Ан çаратах ĕшнен илемĕшне,
Ӳпкелĕ-çке сана чечен ĕшне.

Çил мар иккен вăл, тусăмçăм, çил мар,
Вăл — ман ăшри сиксе çунан кăвар.

Çеçке вĕçмест иккен, çеçке ларать:
Вĕçет ман шухă шухăш пуç тавра...

1926

* * *

Уяр та сивӗ — кун илемлӗ!
Кун Пушкин сӑвви пек таса.
Ҫӑрха лаша кӳлсе килем-и,
Хӗр-тантӑшӑм, сана савса?

Ҫуна ӑшне тултарӑп утӑ,
Туллатнӑ тӑлӑп витӗпӗр.
Чӗремӗрте сӳнмеслӗх вут та —
Ӑҫта шӑнмашкӑн иксӗмӗр!

Эс — чаплӑ ҫӗр ӑсти, тееҫҫӗ,
Эп тӑрмашап сӑвӑпала.
Кӗрлеттерер-ха пӗр, поэзи
Чӑнне тупмашкӑн, тавралла!

Ҫырма хӗрри, ҫаранлӑх, улӑх
Шап-шур тумпа чӗнет пире;
Кӗрер тин ешӗл, тулӑх пулнӑ
Вӑрманалла, тухар хире...

Эс юр епле ларнине сӑнӑн,
Калча мӗнле юлать кӑҫал:
Шӑнмасть-и, хӳтӗ-и... Вӑл — санӑн
Хӗпӗртевӳ-ҫке, сан вӑй-хал.

Нарспин йӑваш сӑвӑҫине
Эсех пуль тупӑнман...

Эс пур-и, ҫук-и тӗнчере —
Мана ку пурпӗрех.
Сана ялан чӗнет чӗре,
Шырать вӑл ӗмӗрех.

1926

* * *

Тинкер мана, анчах ан курăн:
Манра сан урăх сăну пур.
Телейлĕ пул, нумай çул пурăн,
Асап та, хурлăх та ан кур.

Пĕлетĕп эп: эс çак илемлĕ
Ӳсентăранлă çĕр çинчех.
Çапах сана татса илеймĕн
Этемĕн хытă аллипех.

Ав, лĕпĕш, вут-чечек тесе-тĕр,
Вĕçсе кĕрет хĕпĕртесе.
Хăш чух çаплах уйла пĕлместпĕр
Эпир те икĕ пĕр тĕсе.

Çак шухăшсем чăн мар пулсассăн,
Ан кул айван сăвăçăран:
Сана вăл ытлашши тасанăн
Курма вĕреннĕ ачаран!

1926

* * *

Эп çирӗмре. Мана «талантлӑ
Пуçлавçӑ» тетчӗç. Астусан —
Çак урамсем тӑрӑх саланнӑ
Кил-çуртсӑр çамрӑклӑхӑм ман.

Тӑхта, такси! Çак хӑна килӗ
Пӗр сӑн кӑларчӗ ман ума.
Ӑçта вӑл? Чӗрӗ-ши е вилнӗ?
Пӗлсен эп хатӗр тем пама.

Пӗрремӗш хирӗçлев ку манӑн
Пултарупа юратура.
Шӳтле пек халь. Ун чух вӑл шавлӑн
Çӗкленчӗ тӑвӑл пек хура.

Епле туртатчӗ çав хӗрарӑм!
Анчах эп пултӑм айванни:
Эп унпала кайма тумарӑм,
Халь, ак, тен, лайӑх кайманни...

1927

* * *

Хура тинĕс лăпкă мар,
Хура тинĕс хумлă.
Асăрхар-ха, асăрхар —
Мĕн амакĕ пулнă?

Пăнчă пек кăна карап
Эс куратăн пулĕ?
— Эп куратăп та хăрап:
Е çĕтсессĕн çулĕ?

Кун пек çиллĕ вăхăтра
Пĕр урсан çанталăк —
Чарас çук ăна вара
Пилĕк-ултă талăк.

— Тепле, темĕн... Эс пĕлен.
Эп чухлаймăп лайăх.
Пĕчĕкрен хумсемпелен
Эс кĕрешнĕ кайăк.

— Ай, мăнтарăн! Пуçласа
Эс куратни тинĕс?
Пурнăç — тинĕс пуласса
Ăнланман эппин эс?

Кĕрешет карап инçе,
Те тухать, те путĕ...
Çавнашкал çак çĕр çинче
Кĕрешетпĕр пурте.

Эс пĕччен тен хăвна ху,
Хурланатăн хытă.
Тĕрĕс мар сан сăмаху:
Эп санпах-çке пытăм.

Хам та эп мăшкăлпала
Тарăхсаттăм питĕ...
— Юрĕ, юрĕ. Ан кала.
Эп ăнлантăм. Çитĕ.

Йăнăш турăмăр чылай.
Иккĕленчĕ шухăш.
Асаппа тухан çула
Ĕнтĕ тек ан улăш.

Пăнчă пек инçе карап,
Вăл çапах хур пулмĕ.
Пурнăç — тинĕс, ăнланап,
Этем — унăн хумĕ.

1927. Сочи — Туапсе

* * *

Тавтапуç çуралнă çĕршыва
Таварнишĕн ырă та сывах.

Тахçанах çак йывăç кĕпере
Эп курасшăн çуннăччĕ тепре.

Кĕпер урлă каçрăм та — çаран,
Ĕрĕхессĕм килчĕ ман çарран.

Шурути пĕркеннĕ сывлăма
Сирпĕтессĕм килчĕ чунăма.

Сулхăн шыв çăвать йăмра ӳтне,
Тăсăлса выртайăттăм ӳпне.

Сиктĕрмен шерпет пек çăлĕсем
Сиплĕ теççĕ манăн ялйышсем...

Пĕр лаши ула, тепри хăла,
Шăварма анать-мĕн хĕр çăла.

Те палларĕ, те ют çын тӳрри,
Те палламĕш пулчĕ вăл юри?

Янратса кĕçенчĕ ула ут,
Янкăсланчĕ чунăм тепĕр хут.

Утланассăм килчĕ ман пĕрле.
Чуптăвассăм килчĕ сар хĕрне!

1927

* * *

Уйӑх ҫук. Тӗтреллӗ хӑмӑр каҫ.
Шухӑшпа чӗре ман ӑмӑртаҫ.

Парӑнасшӑн мар эп чӗрене,
Сивӗрех пулмашкӑн вӗренеп.

Анчах шухӑш... шухӑш та пӑр мар,
Унпала сӳнмест ҫунан кӑвар.

Сӗнксе лартӑм, лартӑм эп самай,
Тухрӑм та уттартӑм ҫиле май.

Ҫилпеле пачах пӗрлешиччен
Асилесшӗн пултӑм тем ҫинчен.

Ӑшӑмра ҫак тунсӑх хыпсанах
Куҫ умне ҫ̌ӑратрӑм эп сана.

1927

* * *

Мĕнле уяр! Ман ыйхăм çук.
Пĕр сан çинче çак каç ман шухăш.
Юн тунсăхпа вылянă чух
Юмах та, пурăнăç та хутăш.

Эс халь ик-виçĕ хут чипер,
Пăхсан ху пек те, ху пек мар та...
Юрла-ха «Чĕнтĕрлĕ кĕпер» —
Сассу чуна çунатлантартăр.

Юрла-ха. Лăпкă кассăма,
Арман умне аса илем пĕр.
Каçкӳлĕм лĕп тӳлек çырма,
Унта миçе шыва кĕмен-тĕр!

Юрла-ха. Йывăç кĕпере,
Хам каçнă кĕпере, курам эп,
Ăçтан пĕлейĕн: тен, тепре
Нихçан унпа каçса кураймăп.

Хăвартăм эп тăван яла,
Хăвартăм, тусăм, хĕрхенмерĕм...
Хирте ак халь ула-чăла,
Йăрансенче — хуралнă эрĕм.

Çурхи шывсем юхса пĕтсен,
Каллех тапранĕ ешĕл курăк.
Пĕртен-пĕрех килйыш пĕччен,
Ăна каллех эп çукшăн хурлăх...

Юн тунсăхпа вылянă чух
Пĕр сан çинчеччĕ манăн шухăш.
Юрăпалаą çĕкленнĕ чун
Пурне те ăнкарать халь хутăш.

1927

* * *

Лар-ха, тусăм, çума-çумăн,
Юнашар манпа эс лар.
Яланах кун евĕр çунмăн,
Капла ялкăшмĕ кăвар.

Юратмашкăн пурте тивĕç,
Пурте савнă такама.
Вилнисем кăна тек килмĕç
Тепĕр хут ыталама.

Вăр çавралнă кăкăр-çурăм,
Хумлă-хумлă хăмăр çӳç!
Эс мана тиркевлĕ турăн:
Никама курмасть халь куç.

Çӳçенӳллĕ хулпуççи те
Чăр пăхан кăвак куççем —
Чунăма уçмашкăн çитĕ,
Уçрĕç ак ярах вĕсем.

Чуна уçрĕç те, каларăм
Усрăп тенĕ сăмаха:
Халиччен эп пĕр хĕрарăм
Чуптуса курманччĕ-ха.

Тутине-мĕнне пĕлместĕп,
Тен, вăл йӳçĕ пуль сĕре.
Чуптуман-тăр халĕ эс те,
Çавăн пек туять чĕре.

Çавăн пек систерчĕ санăн
Вăтанса кулан туту.
Тĕрĕсех пулсан — ан парăн,
Улталан пулсан— чупту!

1927

* * *

Ман çине пăхса пуçна эс ан пĕк,
Чунна сивĕ сисĕмпе имле.
Ман сана хăватлă талисман пек
Ĕненес килет, шанас килет.

Сивĕ сисĕм чĕрене шăнтать-тĕр,
Анчах вăл хăпартĕ ăстăна.
Эп сана халь пуççапмашкăн хатĕр
Пĕр пăрланнă сисĕмшĕн кăна.

Тытса чарнă вĕри юн таппишĕн
Сума сăвĕ çур тĕнче сана;
Тинĕсре карапсăр эсĕ ишĕн,
Пуç тайтарăн вата Монблана.

Чи мухтавлă сăвăçă-чĕлхеçĕ
Сăмахсем тупаймĕ сан валли.
Пурте, пурте тĕнчере вилеççĕ,
Эс — вĕлермелли те чĕртмелли.

«Ах, Мадонна!» — теççĕ, куç илмеççĕ,
Анланасшăн Рафаэль чунне.
Сан умна çав вилĕмсĕр илемçĕ
Шкул ачи пек тăрĕ ку чухне.

Сан сăнна тумашкăн сăр тупайměç,
Сан куçна кўмешкěн тěс те çук.
Сана пурте калěç: вăл асамăç,
Куçпăван вăл,— тейěç пăхнă чух.

Ахаль мар хăватлă талисман пек
Эп курап санă ěмěтпеле.
Ман çине пăхса пуçна эс ан пěк,
Чунна сивě сисěмпе имле.

1927

* * *

Пӗлӗтлет. Ҫап-ҫамрӑк уйӑх
Пӗр чӑмать те пӗр тухать.
Пит ан иртӗн, пит ан ҫуйӑх,
Куҫран ан пӑх, ан тухат.

Ялтӑркка таса хӗр куҫӗ —
Тӑрӑ-тӑрӑ ту ҫӑлӗ.
Чӗрене манне вӑл усӗ,
Анчах кӑмӑл хуҫӑлӗ.

Эп курап ҫав ялтӑр ҫуттӑн
Ӑшӗнче хам иртнине.
Ҫавӑнпа санран кӑшт юттӑн
Уйрӑлап ҫак ирхине.

Эс те маншӑн, тен, пит ҫунмӑн,
Шухӑшламӑн ман ҫинчен.
Халь ларатӑн ҫума-ҫумӑн,
Ыранах пулан инҫе.

Ҫутӑлать. Ҫап-ҫамрӑк уйӑх
Шупкалать ав тӳпере.
Пит ан иртӗн, пит ан ҫуйӑх,
Сиввӗн ҫеҫ чупту пӗрре.

1927

* * *

> Как я хотел себя уверить,
> Что не люблю ее...
>
> *М. Лермонтов*

Часран часах хама эп шантаратӑп
Сана тек юратмастӑп пуль тесе.
Анчах мӗскершӗн-ха ман асӑмра та,
Куҫ умӗнче те — эсӗ... шав эсех!

Мӗскершӗн ман чӗрем сана усрать-ши:
Сан илемне парӑннипе кӑна.
Е ҫав тери таса чунна кура-ши?
Пӗлме пултараймастӑп эп ӑна.

1927

* * *

Санпа эпирчченех ҫак ҫӑлтӑрсем ҫуталнӑ,
Эпир сӗмленӗпӗр — ҫуталӗҫ ҫаплипех.
Анчах шанас пулать: ҫын ҫӑлтӑрпа ҫуралнӑ,
Ун куҫӗ хупӑнсан — пӗр ҫӑлтӑр сӳнетех.

Санпа эпирчченех шавланӑ ҫакӑ тинӗс,
Эпир шӑпланӑпӑр — вӑл шавлӗ ҫав-ҫавах.
Анчах шанас пулать: ӑна илтетӗн тин эс,
Этем чӗнми пулсан — пӗр хум чарать шава...

1928

* * *

Тулли уйăх — лирика çулпуçĕ —
Ак каллех сана асилтерет.
Эс кулатăн, кăмăлу сан уçă,
Йăлтăртатрĕ шур шăл икĕ рет.

Эс кулатăн манăнми, пĕртен-пĕр,
Хăвна çеç пилленĕ куллупа.
Кул, выля! Анчах ан иккĕлентĕр
Куçусем тăван сенкер тупа.

Сăвăçăн сăмахĕ сăн-сăпатлă,
Çавăнпа тупа та тĕссĕр мар.
Эп пĕрре çуралнă, пĕрре ватлăп,
Çавăнпаваскатăп та çырма.

Сăввăмсен кунçулĕ хамран иртĕ:
Этем чунĕ ирĕкленнĕ чух
Шўлкеме-сурпан та, катанпир те
Сăвă чухлĕ кирлĕ пулас çук.

Эс кулатăн, кăмăлу сан уçă,
Мĕншĕнне пĕлетĕп, ан кала...
Тулли уйăх — лирика çулпуçĕ —
Хутăшайрĕ кайрĕ санпала.

1928

* * *

Сан ялу — мухтавлă Кушкă,
Ураму сан — Чечен кас.
Тусăм, кам-ши пирĕн Пушкин?
Кам ятне сума сăвас?

Сăввăмăр пит чухăн халĕ,
Сăвăçсем çукпа пĕрех.
Пĕр Кĕçтукăн чун хавалĕ
Ялтăртатĕ ĕмĕрех.

Иртнĕ пурнăç сăн-сăпачĕ
Сăхлантармĕ тек пире.
Аталанчĕ урăх каччă,
Урăх хĕр халь Силпире.

Эсĕ ху та ĕнтĕ урăх,
Шӳлкеме-тевет çакман.
Сăн-питӳ шупкалнă, шурă,
Çийӳнте çӳхе сăхман.

Пир кăнтарăмĕ те мар-мĕн,
Кĕнеке сан умăнта.
Аллу хултăрчă кустармĕ,
Вылянтарĕ кăранташ.

Ахалех сана чĕнет-мĕн
Явăнса юхан Кăнна:
Эс унта шыва кĕместĕн,
Хур чĕппи кĕтен кăна.

Эп пĕлетĕп: ушкăн-ушкăн
Саншăн хаклă Чечен кас.
Çапах кам-ши пирĕн Пушкин,
Кам чапне пуçа таяс?

1928

* * *

Чăвашра сан пекки эп курманччĕ,
Анчах ман пытарма халăм çук:
Хĕпĕртерĕ те чунăм... хурланчĕ
Санпала юнашар ларнă чух.

Сăмаху айĕнче шухăш урăх,
Вăл сана пăхăнтарнă пуль çав.
Çуркунне ешерет йывăç-курăк,
Кĕркунне хăртмаллах вăл çулçа.

Ĕмĕрлĕх нимĕн те çук-ĕçке,
Çутçанталăк пире — хăна килĕ.
Çитĕнсе çурăлайнă çеçке,
Сана камăн алли татса илĕ?

Асăмра темиçе сăн пур ман,
Кашниех хăйне майлă хитре.
Сан пекки эп çапах та курман,
Сан пекки кунта мар — ĕмĕтре.

1928

* * *

Салху ан лар, пуҫна ан ус,
Ман куҫăмран ан тар, ан ютшăн.
Пĕр эс кăна аппа та тус
Пулма пултарăн ман кунҫулшăн.

Эс ҫеҫ тиркеш поэт чунне
Хĕвеллĕ шанăҫ тăхăнтарăн.
Санра ем-ешĕл ҫуркунне,
Куҫ пек тулли эс, чун пек тарăн.

Нумайăн эпĕр тĕнчере,
Кашни-пĕр пурăнăҫ тытатпăр.
Анчах кашнин расна чĕре:
Пĕрин хавшак, теприн вăл паттăр.

Пулать этем: вутла ҫунать,
Сӳнми хĕвел пек ун кăварĕ.
Хавшаннă, ыванă чуна
Хĕлхем сапса вăл ялкăштарĕ.

Аташнисемшĕн чĕр маяк
Пулса вăл ҫул кăтартса пырĕ.
Вăл ҫунĕ, ҫунĕ пĕрмаях,
Хĕрӳллĕ ҫунĕ, ҫутă, ырă.

Ăна палласçĕ аякран,
Ăна парне кӳрсе саваççĕ.
Вăл хăй вилсен те — нихăçан
Сӳнмест ун çутă сăн-сăпачĕ.

Ăна усраççĕ этемсем,
Унпа хăйсен чунне виçеççĕ...
Ĕнен хăвна, ĕмĕтленсем:
Çапла пулмашкăн тивĕç эсĕ.

1928

* * *

Сан сӑну ҫине те сулхӑн ӳкӗ:
Ҫумӑра вылять хӑш чух шевле.
Санпала пиншер чӑваш Анюкӗ
Иртнӗ ҫамрӑк ӗмӗрне шеллет.

Куҫусем ялан капла ҫиҫеймӗҫ,
Тутусем те тӗссӗрленӗҫ, тен...
Ӗлӗкхи пекех санпа эп ҫепӗҫ,
Ӗлӗкхи пекех чӗлхем чечен.

Ӗмӗрте пӗрре кӑна саватӑн,
Пӗрне ҫеҫ чунтан хӗртет кӑвар.
Ыттисем — е виҫҫӗн, е тӑваттӑн —
Вӗсем пурте ют, вӗсем эс мар.

Вӗсем пурте сӑсӗнкӗсӗр сивӗ,
Чӗрене чӗртме пултарас ҫук.
Пӗр сана ман юррӑм пырса тивӗ,
Пӗр санпа тӗлленӗп пӗччен чух.

Эс мана тӗл пулнӑшӑн ан ӳкӗн,
Эп сана шыранӑ тахҫанах.
Ҫавӑнпа пиншер чӑваш Анюкӗн
Сӑн-сӑпачӗ те санпа танах.

1928

* * *

Кирек кам пулсассăн та эс халĕ,
Эп сана юратрăм тĕппипех.
Сăвăпа тăртаннă чун хавалĕ
Санпала ман çеçпĕл çеçки пек.

Кăмăлăм тĕтресĕр, ĕмĕт уçă,
Пĕчĕк мар пек ыранхи тивлет.
Анчах ма кĕрхи сĕм шурăмпуçăн
Сан куçу салхуланса илет?

Ма эс ассăн сывласа яратăн,
Ма пăхма хушмастăн ху çине?
Е куратăн эс вара манра та
Ĕмĕрхи хĕрарăм хуçине?

Эп малтан санпа этем пуласшăн,
Тус, тăван пуласшăн, вара тин
(Кам пĕлет: тен, каярах юлсассăн!)
Эп пулма пултарăттăм арçын.

Эп сана сывлаймиччен ыталăп,
Ирĕлсе йăлтах шăраниччен.
Ывăнассăн туйăнмасть çак алă,
Çак тута та сивĕнмĕ, ĕнен.

Манпала эс вилĕме çĕнтерĕн,
Чĕрĕ сим эп сапăп чĕререн.
Тӳсеймесĕр çыртнă хĕр минтерĕ
Ĕнсе кайĕ сывлăш вĕрирен.

Анчах ху... мĕскер мана эс парăн?
Мĕнпе хаклă пирĕн самана?
Е чура пек мĕскĕн сăмах а р ă м
Çырлахтарĕ тетĕн-и мана?

1928

* * *

Ăшунта мĕскер ларать-ши санăн:
Пирĕшти е хуп-хура çĕлен?
Ятăмран чĕнмесĕр ыталатăн,
Куçăмран пăхмасăр тимсĕлен.

Ĕмĕрне те кивелми пĕр çемĕ —
Юратушăн чун тирне сĕвӳ.
Сан умна пăхса тинкернĕçемĕн
Çӳлерех çĕкленчĕ пек хĕвӳ.

Çӳлерех çĕкленчĕ те анмарĕ,
Чĕрепе чĕре тĕл пулчĕç пек.
Ĕшеленчĕк тутасен кăварĕ
Чĕрене тирет вĕри хĕçпе.

Йăпшăнатăн акă, чăмăртатăн,
Сывлама пăрахрăм пĕр самант.
Ман суран тӳрленнĕччĕ пăртакăн,
Çĕнĕрен ăна эс ан амант.

Эп пĕлместĕп-çке, пĕлместĕп халĕ:
Те çĕлен, те пирĕшти санра?
Те санпа ман ĕмĕтĕм çуталĕ,
Те пуçа тултарăн сĕм анрав?

Каçарсам мана, вылянчăк шухăш!
Каçарах, вĕçерĕннĕ чĕре!
Телейпе асап ялан вăл хутăш,
Йĕкĕреш çÿреççĕ тĕнчере.

Кам сывлать, камра вĕренĕ сисĕм —
Çав пурне те курĕ астивсе.
Ним те мар ăна хĕреслĕ çиçĕм,
Ним те мар хаяр аслатисем.

Анчах кам хăйне, пĕлетăркаçă,
Лачаканалла илсе каять —
Ун пеккишĕн пурте тарăхаççĕ,
Ăна пурте парĕç ирсĕр ят.

Çавăнпа хăратăп та эп питĕ,
Тем ларать-ха санăн ăшунта:
Тен, çĕлен те пулĕ, пирĕшти те,
Тен, ачашлăн та эс... сăхăн та!

1928

* * *

Никам та ал сулса юлмарĕ.
Ют курăнчĕ тăван çыран.
Анчах та эсĕ... манпа мар-и
Çак пăрахут çинче пыран?

Хакла хумастăп кăтартуллă
Илем-эрешсене питех.
Ман хурлăх — ĕненӳллĕ хурлăх:
Тен, халь санпах пуль эпĕ те.

Ятран чĕнсе эс пăшăлтатрăн:
«Пăрахмăн-и? Пăрахмăн-и?»
Сан сăмахна эп хăвăрт татрăм,
Тупамçăм пулчĕ — чуптуни.

Ытарайми, анчах салхуллăн
Тăраттăн эс, каçарсамах.
Мĕнпур халичченхи кунçулăм
Вĕçсе вĕлтлетрĕ çав самант.

Сахал унта илемлĕ мусăк,
Пулсан та ӳкĕнĕçсĕр мар.
Каçар мана иртнишĕн, тусăм,
Малашлăх ячĕпе каçар.

Эс çеç ăшра, эс çеç... Эхер те
Эс те вĕлт çеç вĕçсе иртсен,
Вара эп юратса пĕтернĕ,
Пĕтернĕ пурăнса та, тен...

Пулма пултараймасть! Эс манăн —
Чĕрен чи çепĕç чĕлĕхĕ.
Туятăн эс, эс ăнланатăн:
Чунăмăрсенĕн пĕр чĕлхе.

Эс — ман ĕçченлĕх, канлĕх, ӳсĕм,
Эс пурăнма хавхалатан.
Эс — çĕнтерӳ. Эс ман чи хӳхĕм
Сăмах. Эс вилĕмсĕрлĕх ман.

1928

* * *

Я вас любил...
*А. Пушкин*

Сана саваттăм эп. Тен, халь те
Сӳнмен-тĕр ман ăшра çав вут:
Тен, сан кусу ăна хускатĕ,
Чĕртсе хыптарĕ тепĕр хут.

Сана саваттăм эп: пĕр çепĕç,
Пĕр кӳлешӳллĕн тарăхса;
Пĕр сăмахсем пĕтсе килетчĕç,
Пĕр чараймастăмччĕ сасса.

Сана саваттăм эп. Тен, урăх
Нихçан та савас çук ун пек.
Чĕрем çинче çап-çутă хурлăх.
Асапăм çук. Вăл пулмĕ тек...

1928

* * *

Эс ан хуйхӑр урмӑш сӑвӑҫушӑн,
Ун чӗри кӑшт хытнӑшӑн ан ҫун.
Сан сӑнна ялан усрас пӗр шут ун,
Санпа ҫеҫ сывлатӑр тетӗп чун.

Ҫывӑхрах та... инҫерех пуласчӗ,
Ан кӑкартӑр сӑнчӑр ирӗке.
Каҫарах мана эс, каҫарсамччӗ:
Юрату — чун сӑнчӑрӗ пекех.

Шухӑшра кӑна сана тытсассӑн,
Тикӗсрех куратӑп ҫул-йӗре.
Вирлӗрех янрать ун чух ман сассӑм,
Ӗмӗтӗм те ҫутӑ, ҫӳлерех.

Ун чухне никам та, нимӗскер те
Ҫӗнтерессӗн туйӑнмасть пире.
Санпала ҫума ҫунат ӳстертӗм —
Ярӑнса вӗҫмешкӗн ирӗкре.

Ҫӳлерех ҫӗкленӗттӗмччӗ эпӗ,
Йыхӑрать, чӗнет пек самана.
Пӗлӗтри ҫут ҫӑлтӑрсен хисепӗ
Хушӑнассӑн туйӑнать мана.

Ытларах хавасланасчĕ манăн,
Каяс çулăм вĕçĕмсĕр-и, тен...
Тӳпене çитсен те калле анăн,
Чĕрӳнте хăват çитеймесен.

Çавăнпа ан хуйхăр эс, ан хуйхăр,
Сăвăçун чĕри пăртак шăнсан.
Сивĕллех сан илемне вăл туйтăр,
Пĕр чĕре пек пултăр санпа ман.

1928

* * *

Нихăçан юрламăп, нихăçан! —
Тесе хам ăшра эп тупа турăм.
Анчах сан çине пĕрре пăхсан —
Иксĕлми пек туйăнать ман юррăм.

Ансăртран, пӳртре пĕр-пĕччен чух,
Эс пурри çинчен аса илсессĕн,
Чĕрене чĕртмесĕр тӳсме çук,
Сăвăпа хыпмасăр тӳсейместĕн.

Алла лекнĕ татăк-кĕсĕк хут
Ним те мар вĕт ахаль чух пăхсассăн.
Ун чухне вăл — çулăм, вĕри вут,
Ялкăшать, çунать унта ман сассăм.

Саспаллисенче ман юн вĕрет,
Ман юнпа вĕсем çавраланаççĕ.
Салтаксем пекех ĕрет-ĕрет
Сăвă йĕркисем аталанаççĕ.

Эп вĕсенĕн командирĕ пек,
Эп вĕсенĕн ывăнми çар пуçĕ.
Парăнманнине çĕнтерĕпех,
Пăхăннисемпе ман кăмăл уçă.

Хӑйсене хӑйсем вӗсем хуҫа,
Эп ҫӗнтернӗшӗн парне ыйтмастӑп.
Никам умӗнче те хам пуҫа
Ытлашши усмастӑп та йӑтмастӑп.

Пӗр сана эп, сана ҫеҫ хӑш чух
Чӗрене касса памашкӑн хатӗр.
Анчах эс ӑна йышӑнас ҫук:
Хӑвӑн та, тен, ытлашши пулать-тӗр.

1928

* * *

Сивĕ çумăр сирпĕнчĕ, çăвайрĕ,
Тĕссĕрленчĕ янкăс кĕркунне.
Савнă тусăм! Кам тути-çăварĕ
Ĕмсе илнĕ санăн сĕткенне?

Кам арки çине тăкса хăвартăн
Чĕрӳне çутатнă ахаха?
Кам ăна пуçтарĕ, мĕнле таркăн
Вăрлама хăяйĕ, кала-ха?..

Хуларах-и, пĕр тӳлек ялта-и,
Е çулла, е шартлама хĕлле,
Ман чĕрен алхаслă çăмăлттайĕ,
Эп сана тĕл пулăп-ха каллех.

Ĕмĕте каллех санпа çĕнетĕп:
Вĕри сывлăш... ирĕлнĕ тута...
Куç хупса чуптунă каçсене те —
Пĕтĕмпех асилĕп минута.

Пĕтĕмпех асилĕп те хăвалăп,
Çухатасшăн пулăп хăвăртрах.
Урăхла хастарлăх, урăх калăп
Пăркăчлĕ мана вăл вăхăтра.

Кам пĕлет: халь хывнă сăвă-юрă,
Тен, ун чух та пулĕ хисепре.
Анчах юн капла вĕреймĕ урăх,
Сĕврĕлсе лăпланĕ кив çĕпре.

Тен, эс ху та шăпăртах лăпланăн
Çумăр умĕн çил лăпланнă пек.
Пĕр ӳпкевсĕр килĕштерĕн манăн
Çумăр витĕр тухнă кĕввĕмпе.

1928

* * *

Ют çĕрте, пĕччен сехетсенче,
Пуçна йывăр шухăшсем килсен,
Асна ил таçта инçе-инçе
Саншăн çуннă чун пурри çинчен.

Асна ил — çак аслă тĕнчере
Шăнăçман чĕре пурри çинчен;
Сан пекех вĕри вăл, çав чĕре,
Сан пекех канусăр та... пĕччен!

1928

* * *

Кантӑкран карӑнать кӑвак шуҫӑм,
Тул ҫути ӑнтӑлать пӳртелле...
Сана мар юрататӑп эп, тусӑм,
Сана мар манӑн куҫӑм тӗллет.

Санӑн сӳннӗ сӑну халӗ, ахӑр,
Теприне асилтерчӗ мана.
Вӑл санран кӑшт кӑна ҫамрӑкрах-тӑр,
Хыткanрах та пулас кӑшт кӑна.

Анчах унӑн чӗри, чӗри урӑх,
Эс пӗлетӗн-и: мӗн вӑл чӗре?
Пӗр чечексӗр хӑран йывӑҫ-курӑк
Хитре мар пек мана тӗнчере.

Ун чӗри ахӑртнех чечекли-тӗр,
Ахӑртнех чуна хушӗ ҫунат.
Сан хӑюсӑр, йӑваш куҫу витӗр
Унӑн куҫӗ кӑваррӑн ҫунать.

Мӗн тӑвас! Пӗтӗмпех тӗрӗсси-ӗҫ,
Кӳренсе кӑмӑлна пит ан хуҫ:
Сан черченкӗ, имшер хулпуҫҫийӗ...
Сан туту... те турпас вӑл, те шуҫ?

Ĕнтĕркенĕ те сивĕннĕ чунăн
Чечекки пулайман, пулас çук.
Ну ăçтан манпа тан халь эс çунăн,
Халь — эп çулăм çеçке сарнă чух!

Вăл кăна ман чуна сывлăм сапĕ,
Вăл кăна — тĕс кайми, йăмăх сăр.
Унпа çеç сăвăçăн çăмăл чапĕ
Хăрса ӳкмĕ харам, вăхăтсăр.

1928

* * *

Ăçта пулсассăн та эс халĕ,
Кирек ăçта пулсассăн та,—
Санпа пĕрле ман чун хавалĕ,
Ман юррăм санăн асунта.

Пĕрре çеç мар юратăн, савăн,
Пĕрне çеç мар ыталăн эс.
Анчах пĕрехçи пулĕ санăн,
Асран ярайман пĕрне çеç.

Çынсем усламшăн çеç ураççĕ,
Тесе мана эс ан кала.
Ман сан сăнна ялан усрасчĕ,
Илсе каясчĕ хампала.

Çынсем хăйсемшĕн çеç чĕтреççĕ,
Тесе те эс ан ӳпкеле.
Çут тĕнчере пурнать поэзи,
Çавна парне ман кӳмелле.

Парни вăл — хам та, ман савни те...
Ăна пĕлместĕн эс иккен.
Мана халь йывăр, йывăр питĕ:
Чĕремçĕм уйрăлчĕ икке!

1928

* * *

Кун пек каç вăл пулать пĕрех çех,
Иккĕ курмăн ăна, иккĕ илтмĕн:
Шăпчăксем шăхăрса, пĕрĕхсе
Карса илнĕ çĕре... тен, çĕр пинĕн!

Чапсăр-сумсăр, юратнăшăн çеç,
Хăй савнийĕн тăп-тăп йăви çийĕн
Сăвăлать вăл турат ăшĕнче,
Анăрать итлесе улмуççийĕ.

Тусăм, тусăм, хăçан эп сана
Шăпчăк пек пусма ларнăн курайăп?
Хăш тĕлте сан йăву? Тупсанах —
Чăрăнмасăр янратăп юрра эп.

1928

* * *

Вăрман çара. Тумхах тункаталать хире.
    Çӳхен пăрланчĕ çырма шывĕ.
Чӳк уйăх çилĕсем саламатла хивре,
    Мана халь урăххишĕн сивĕ.

Çанталăк мар шăнтать, шăнтать пĕр эс çукки:
    Сĕм каç та, тăрă кăнтăрла та,—
Умра пĕччен сĕтел е йышлă тус ĕçки,—
    Сан патналла эп ăнтăлатăп.

Эс çеç асра, эс çеç... Пур иртнĕултава,
    Пур сурана манса сан урлă,
Сана эп умăмри çап-çутă çул тăвап:
    Санпа пурнать ман пултарулăх.

1928

* * *

Пӗлетӗп эп, систерчӗ чунăм:
Эс иккӗленнӗ ман пирки.
Минтер ҫине куҫҫулӗ ҫунă,
Саланнă хăмăр ҫӳҫ тӗрки...

Хутран эс, кӗнеке вулуҫăн,
Пăхатăн тӗлсӗр айккалла...
Сан умăнта ман шухăш уҫă,
Итле — чӗрем чăнне калать.

Ан тив, пире тиркевсӗр пурнăҫ
Асаттăр уйрăм сукмакпа:
Ман куҫăмсем юта юп курмӗҫ,
Эсех юлташ, эсех — аппа.

Эппин атя иккӗленместпӗр,
Эс маншăн йăлт ӗлӗкхи пек.
Ҫурпа та пӗр, кӗрпе те эс пӗр —
Чуна сыватакан чечек.

1929

* * *

Урамра ҫил-тӑман та сӗм-тӗттӗм.
Эс пӗлместӗн. Эс чирлӗ выртан.
Эп сана йӑпатмашкӑн килсеттӗм,
Компресу мана пӑврӗ мӑйран.

Сӑмах ҫеҫ — саншӑн халь пит те йӳнӗ,
Халь эп хам та кунта ытлашши.
Сӑвӑра сӑрхӑнан поэт юнӗ
Ма сана чӗртмелле пулман-ши?

1929

* * *

Ак тухрăм эпĕ Атăла та...
Каятăп, тусăм, сывă пул!
Асра сана эп ыталатăп,
Кăкру тавра ман сылтăм хул.

Туятăп акă: вирлĕ-вирлĕ
Тапать сан çитĕннĕ чĕрӳ.
Ăна халь чĕре-тантăш кирлĕ,
Мĕскер вăл сăвăри хĕрӳ!

Тăхта эппин пăртак, ан хуçăл,
Каймастăп эп таçта юта.
Малашлăх ячĕпе чун уçă,
Пĕчченлĕхĕм те çап-çутах.

Тĕреклĕ, çирĕп вăйăм-халăм,
Çанталăк çех пăртак йĕпе...
Шупашкара салам эп калăп
Хам тунсăх тусăн ячĕпе.

1929

* * *

Мĕн-ма апла иккеннине
Пĕлетпĕр эп те эс,
Анчах санран халичченех
Ман чунăм сивĕнмест.

...Тин çеç тухсаттăм эп ялтан,
Санпа паллашсанах
Хамран эп ютшăнтăм: йăлтах,
Йăлт пăхăнтăм сана.

Эп вăтанаттăм ĕлĕкхи
Чарусăрлăхăмран,
Ун ĕмĕлки, ун кĕлетки
Тухсассăн ăнсăртран.

Юратакан поэт — ухмах:
Ӳксе ӳпне-питне,
Санпа эп хатĕрччĕ утма
Сĕм хăямат тĕпне.

Пăхасчĕ çех, илтесчĕ çех
Сивлек философла,
Анчах чĕр сисĕм хĕртрĕ тек,
Вĕрин сывла-сывла.

Эп кӳрентертӗм пуль сана?
Халь акӑ куҫ умне
Салхуллӑ сӑн тухсассӑнах —
Эп хыттӑн ӳкӗнеп.

Каҫарӑн эс, халу ҫитсен,
Ылханӑн... пултарсан!
Пӗр ҫакӑ ҫӑн: ман чун писмен,
Ялан вӑл пулнӑ сан.

1930

* * *

Хăçан та пулин, пурăнсан-пурăнсассăн,
Манма пуçласассăн, сасартăк пĕрре
Ярин юрласа ман умра уçă саслăн
Чăваш хĕрачи «Чĕнтĕрлĕ кĕпере»,—

Эп ӳкĕп хуйха, эп тӳсеймĕп, эп тухăп,
Куçа пытарса çынсенчен; тухсанах
Асилĕп уявлă, шăв-шавлă та шухă
Пуçламăш яш кунăмсене, Хусана.

Асилĕп çав юрă пек хумлă та хӳхĕм
Ман питĕм çумне шăлăнан çӳçсене.
Чĕрем тулли шеллĕм, ӳпкевĕм те ӳкĕм
Сасартăк çав асаилӳпе ӳсĕнĕ.

Асилĕп апрель тумлавне, шурă çуртăн
Улах пӳлĕмне, ешерен пахчана...
Ĕççийĕ пуçланнă: экзаменччĕ... Куртăн,
Тĕл пултăн ăна — эс хăвна ачаннах.

Ачан янăрать ун сасси те, пĕчченĕн
Путса хамăр йăх кунçулне шалалла.
Унпа, пĕр унпа иртнĕ кунăм чечен-мĕн,
Ун ылтăн уки чунăма явалать.

Хăçан та пулин — хулара-ши, ялтах-и? —
Пăртак сивĕнсе çитереххĕн, тепре
Асилĕп сасартăк, яланлăх, йăлтах эп,
Илтсен ăнсăртран «Чĕнтĕрлĕ кĕпере».

Кĕпер чăлт та тумĕ: пусатăн, каçатăн;
Анчах ун айне сăвайланнă чĕре —
Çав юрăриллех — никампа нихăçан та
Тек пусăрнаймасть, ыратать вĕçсĕрех!

1930

* * *

Ан ӳпкелешсем, Сетнер,
Мĕншĕн çынна ӳпкелес?

Ман чун халь çак кĕвве ĕнерчĕ,
Тăван тапра чĕннипеле-тĕр...
Ун чух кашни партак Сетнерччĕ,
Кашни пăртак Нарспиччĕ эпĕр.

Ман пурнăçăмăн пуçламăш —
Нихçан асран кайми ял шкулĕ.
Мĕн чухлĕ савăнăç, куляннăш,
Хăюлăх, имену мĕн чухлĕ!

Вуниккĕре — вунвиççелле-ши? —
Ман сисĕм пуçласа вăранчĕ.
Савниййĕн сачĕсем ем-ешĕл,
Савниййĕн куçĕсем кăвакчĕ.

Эп — чухăн çын ачи, юратнă
Хăюсăр, вăрттăн та салхуллăн.
Мĕн чухлĕ шанчăк эп çухатнă,
Мĕнле кăмăлăмсем ман юлнă!

Мĕн чухлĕ мĕскĕнленнĕ, ахăр,
Хавхаланан вĕри чунпа эп,

Ăшра хыпăнтарсан пăлхавăр
Поэзин çăп-çăмăл çункавĕ!

Тасаччĕ ĕмĕт, шухăш çӳллĕ...
Кунçул пурне те ӳпĕнтерчĕ:
Юратуран асилĕм юлĕ,
Чĕр сисĕмрен — шупка ӳкерчĕк...

1930. Тбилиси

* * *

Тĕттĕм каç. Кĕрхи йĕпе-сапа.
Ун чухне мана мăйăх сăрманччĕ...
Манăна пуçланă сăн-сăпат
Çĕнĕрен ман асăмра сăрланчĕ.
Эп ун чух вунвиççĕри ача,
Асăнман та ялăмран тухмашкăн.
Анкарти, арпалăх, укăлча —
Хăйне майлă пĕр тĕнчеччĕ маншăн.
Шухăшсем ман тикĕсчĕ ун чух.
Çутçанталăк кунсерен чиперччĕ.
Ваттисем тăватчĕçĕ учук,
Эп çиеттĕм юсманпа икерчĕ.
Хăш чухне çӳреттĕм эп кĕлле.
Сăхсăхаттăм. Мĕншĕнне пĕлместĕп.
Эп çуралнă çурт — тĕлĕнмелле! —
Тиркеместчĕ йĕрĕх те, хĕрес те.
Тĕттĕм каç. Кĕрхи йĕпе-сапа.
Ун чухне мана мăйăх сăрманччĕ.
Чакăр куçлă сар хĕр-тантăшпа
Манăн чĕмсĕр юрату тапранчĕ.

1930

* * *

Çак самант сан çинче манăн шухăш,
Асăмра сан сассу — ян, çинçе.
Юнăм урнă Кура евĕр шухă,
Лăпланасчĕ — çыранăм инçе.
Çыран — эс, сан çинче манăн шухăш.

Сакартвело [1] хĕвелĕ хĕрӳллĕ,
Хĕвелтен те хĕрӳ — юрату.
Тепĕр çур сехетрен тăрĕ юлĕ
Руставели чĕлхи, Кура, ту...
Сакартвело хĕвелĕ хĕрӳллĕ.

Ытарма çук грузин хĕрупраçĕ
Хĕвеле пула пуль хӳхĕм пит.
Куçусем санăн çулăм упраççĕ.
«Сывă пул,— терĕн эс,— мшвидоби!» —
Грузинла янăрать çак çу касĕ.

Сывă пул, Кетеван, сывă пулччĕ!
Ман пекех çул çинче эс паян.
Курнăçма пӳрмесен — сăвă юлчĕ,
Тĕнчене, тен, вăл тухĕ кайран...
Сывă пул, Кетеван, сывă пулччĕ!

1930

[1] Сакартвело — Грузи (грузинла).

* * *

«Кӑтра шур пӗлӗтсем тӑртаннӑ,
Çумасть пуль çумӑр,— терӗн эс,—
Пуçелӗк пултӑр — чӑматанӑм,
Сан аçамна çие витес.

Айра — лӗпленнӗ сарӑ хӑйӑр,
Вӑл вӗриленӗ час каллех.
Эпир халь иккӗн-çке, ан хуйхӑр,
Тӑнла-ха, тинӗс мӗн калать...»

Çапла мана эс йӑпататтӑн.
Эп — Коновалов евӗрлех —
Пӗлӗтелле пӑхса, тӑнланӑн
Выртаттӑм, тусӑм, месерле.

...Шавлать, пуплетчӗ Хура тинӗс
Тӗнче çинчен, кунçул çинчен...
Çук, таврӑймӑн ӑна тин эс —
Шӑвать иккен, иртет иккен.

Юрлать, юрлатчӗ тинӗс хумӗ —
Кӗске такмаклӑн, вӑрӑммӑн,
Пӗр хурлӑн, пӗр хаваслӑн... Ку мӗн?
Ку — ман хавасӑм, хурӑм ман.

Сӗм кӑнтӑр каҫӗ тӗпсӗр тарӑн.
Эпир — ҫап-ҫамрӑк этемсем,
Таҫтан тӗл пулнӑ та, тӑваннӑн,
Выртатпӑр шиксӗр пӗркенсе...

Эп маннӑ эс х ӗ р н е, юлташӑм!
Мана, тен, уншӑн намӑсрах?
Кайран сана эп пач ҫухатрӑм,
Анчах ҫав каҫ ялан асра —

Ҫав пӗр тумтир айӗнче иккӗн
Ача пек чыслӑн ҫӗр каҫни.
Ах, ма мана, ма халӗ пит хӗн
Ун пек пулма, пӗлместӗн-и?

1930

* * *

Каллех паллана еверсем —
Ёлĕкхиллех, чĕп-чĕррĕнех
Асилĕнсе — кĕвве кĕрсе
Ыраттараççĕ чĕрене.

Каллех, çак кантăкран пăхса,
Апрель тумлавĕпе пĕрле
Юхтар — ăшра — куççуль: тасан,
Ачан, кĕлтунă евĕрлех.

Каллех — йĕпе тротуара
Вăл халь тиркемĕ-çке тесе,
Сăна, итле те тух, вара —
Йăван тирпейсĕр кĕтессе!

1931

* * *

Çуса иртейрĕ çумăр. Нӳр.
Панель пĕлев пек çуланать.
Ак эсĕ те каятăн. Кӳр —
Асра усрам эп аллуна.

Çĕрле. Шет, икĕ сехетсем.
Çывăрассăм çук тул çутличчен.
Лăплан. Ан йыхăр. Ан кĕтсем.
Час эп те пулăп çул çинче.

1931

* * *

Эс марччӗ пӗрремӗш, эс мар юлашки, тен...
Паллах, кунпала каппайни килӗшмест.
Анчах ку таран эс манран юлман шит те,
Пӗр ҫаваншӑнах ҫак сӑвва тивӗҫ эс.

Ӑҫта эп пырсан та — ҫӗршыв ал тымарӗ
Тапатчӗ ман сисӗмсӗр мар ӳтӗмре.
Анчах никам майлӑ та чунӑм выртмарӗ:
Сан хыҫҫӑн пурне те тиркет пек чӗре.

Кӗслен эп пуҫларӑм, сӑрнайӑн ӗнертӗм,
Эп пултӑм трибун халӑх ушкӑнӗнче.
Анчах сан ҫинчен калаймарӑм пӗрне те,
Эс шав ман ӑшра пурӑнаттӑн пӗччен.

Пуҫтах тӗнчекасмӑш, хастар ҫулҫӳревҫӗ,
Сӑрлавсӑр артист, ывӑнми ҫӑмӑлттай —
Эп куртӑм йӑлтах: ҫил ман витӗр вӗретчӗ,
Лӳшкетнӗ сив ҫумӑр мана хӑмӑлта.

Эп аслӑ ҫулсен хӗрринче ҫӗр каҫаттӑм
Сурат ҫумнелле йӑпшӑнса сӑввӑмпа.
Мӗскер эп тӗнчешӗн? Тусан пӗрчи, атом.
Анчах эс хистеттӗн: шыра ҫӗн шӑпа!

Эп пулăçăсен киммипе Атăл урлă
Вашлатнă, çунан вутсене виртлесе.
Эп пулнă хаваслă, салхуллă та пулнă,
Сана, ăшăмри пĕр сана итлесе.

Эс марччĕ пĕрремĕш, эс мар юлашки, тен,
Ма тин пытарас: эп сăпайлă пулман.
Анчах ку таран эс манран юлман шит те,
Санпа, пĕр санпа çĕкленет кăмăл ман.

1931

## ЧӐРЕЧЕ

Манми яш ӗмӗр çуртӗнче
Эп астӑвап пӗр чӳрече...

Тӑсмак та ансӑр кӗлитур.
Унта ман тусӑн йӗрӗ пур.

Мӗн чухлӗ эпӗр иксӗмӗр
Вӑрӑм çӗре кӗскетрӗмӗр!

Часрах тухасшӑн çӗр вӗçне
Сехет ӗçлетчӗ хӑй ӗçне.

Анчах телейлисем ӑна
Пӑхмаççӗ, паллӑ тахçанах.

Телейлӗ пулнӑ эпӗр те,
Пӑхман пулсассӑн сехете!

Чунсем тасаччӗ, тӳрӗччӗ,—
Упратчӗ хупӑ чӳрече.

Вылянӑ та, чуптунӑ та,
Анчах юмах туса чӑнтан.

Кунсем-çулсем расна çĕре
Ăсатрĕç тусăмпа пире.

Яр уçăлчĕç шăпамăрсен
Тем пысăкăш чӳречисем.

Эп куртăм хам пек тĕнчене,
Вăл та курать хăй енченех.

Эп утрăм пĕр сукмакпала,
Ун — хăйĕнле сукмак, паллах.

Анчах çав яшлăх çуртĕнчен
Эп пăхнă ансăр чӳречен

Çути сӳнмен: тен, çур чĕре
Ман юлнă çав чӳречере!

1931

## ВИÇШЕР ЙĔРКЕН

Пăх чĕрӳне...
*Данте*

I

Пĕрремĕш астăву ман — хуран айĕ.
«Апап!» тесе юнарĕ те анне,
Çат çыпăçрăм хам ларнă вырăна эп.

Анне тухса уттарчĕ шыв патне.
Ла̀ратăп сак çинче. Çулла. Яр-уçă
Умри пĕр чӳрече урам енне.

Вута пăхса тинкернĕ шиклĕ куçăм.
Апап — мĕскер вăл? Чĕрĕрех кăвайт
Шăрт-шарт тăвать çунса кăварланусăн.

Эп пит çав ялкăшан кĕрен кăвак
Япалана анса тытса пăхасшăн,
Анчах анне сăмахĕ куç пăвать.

Кĕтӳ кĕрет. Пӳрт çумĕпе вăраххăн
Чаркаланса утаççĕ ĕнесем.
Сĕнкеççĕ сурăхсем анранă халлăн,—

Пуҫне чиксе, кӑшт ӳсӗркелесе.
Тусан. Хӗвел анса пытаннӑ, ахӑр.
Ларап кӗтмен пекех ҫын килессе.

Тӑкӑрлӑкран тухайрӗҫ симӗс, капӑр
Палланӑ витресем сулкаланса —
Эп кӑшкӑрса та ятӑм чӑтаймасӑр:

«Анмарӑм!» терӗм мӑнкӑмӑлланса.
«Маттур, маттур!» тесе чӳрече умӗн
Анне иртет, ман пуҫӑмран шӑлса.

Ун пек хаваслӑх нихӑҫан тек пулмӗ:
Темскер пултарнӑ пек сикет чӗре.
Халичченех асра ҫав сисӗм хумӗ.

Ун чух эп пулнӑ пулӗ виҫҫӗре.

II

Юрлаттарса пур шӑтӑк-шӑхӑра,
Ҫил, мечӗт тӑрринчи санкрав асан пек,
Хӑй сассине илтмесӗр шӑхӑрать.

Урайӗнче урхамахсем касап эп
Сӳсе пӑрахнӑ пушӑт хуппинчен.
Манран инҫе атте-анне асапӗ.

Ҫӑка хӑма ҫинче пӗр вӗҫӗмрен
Урхамахсем юмахалла юртаҫҫӗ,
Ури ҫӗре лекмен пекех вӗсен.

Эп васкатап, хистеп тата пӑртакҫӑ:
Часрах, часрах — аяккарах кунтан
Ҫилҫунатсем ҫине ларса тарасчӗ!

Тем ҫӳллӗш ту, мӑн тинӗс, сӗм вӑрман
Тӗрлет, хӑй пӗлнӗ пек, айван ӑс-пуҫӑм,
Курать вӑл аҫтаха та арӑслан.

Кутник панчен тӗпелелле чупуҫӑн,
Сак хӗррине сасартӑк перӗнсе,
Чӑл-пар ванать пӗрремӗш ҫутӑ шуҫӑм.

«Авланиччен тӳрленӗ-ҫке!» тесе
Анне, ман юнлӑ сӑмсапа куҫҫуллӗ
Пите шӑлса, каллех туртать сӳсе.

Мӗнле илемлӗ, вӑйлӑ ҫын! Мӗн чухлӗ
Ачашлӑх унӑн ҫӗмӗрт куҫӗнче!
Ҫавна эп пуҫласа туятӑп пулӗ.

Пӑхап, куҫа илместӗп ун ҫинчен.
Сӗвем тӑсса анан йӗке, тӳнмесӗр,
Урайӗнче ташлать ик-виҫ хутчен.

Анне юрлать: ҫырла татать чипер хӗр...
Аҫта-ши вӑл? Курасчӗ ҫав хӗре.
Е манӑн аннерен те вӑл чипер-тӗр?

Ун чух эп пулнӑ, ахӑр, пиллӗкре.

III

Эп пулнӑ пӗр ача. Пӗччен те чурӑс
Ӳсме тӳр килнӗ. Кӳршӗ хӗр Праски
Мана астукаланӑ — лайӑх юрӑҫ.

Садра выртатчӗ хурама каски.
Кӑмпа шӑтатчӗ. Эпӗ шӑвараттӑм.
Ҫиеттӗмӗр каска кӑмпи яшки.

Каҫ-каҫ пӗччен тула тухма хӑраттӑм:
Тем тӗрлӗ усала та тӗселе
Йӗри-тавра ҫӳренӗ пек кураттӑм.

Вӗренекен ачасемпе пӗрле
(Вӗсем ҫуллен ик-виҫҫӗн пурӑнатчӗҫ)
Хавасчӗ кӗнекеллӗ сӗтеле.

Саспаллисем асамлӑн курӑнатчӗҫ,
Тӳсме хал ҫук туртатчӗ кӑранташ,
Шур грифель тем пултарнӑн туйӑнатчӗ.

Хутран ҫав япаласене йӑваш,
Хӑюсӑр алӑпа, пӗр ним чӗнмесӗр,
Тыткаласа пӑхаттӑм эп кӑшт-кашт.

Саспа вулакана, куҫа илмесӗр,—
Пӗр ун ҫине, пӗр кӗнеки ҫине
Пӑхса илеттӗм эп куҫ пӑвнӑ евӗр.

Ҫапла хам тӗллӗнех ҫыру мӗнне
Чухла пуҫларӑм эп пӑртак-пӑртакҫӑн,
Ҫул уҫрӑм тӗлӗнтермӗш тӗнчене.

Пӗрре, атте-анне туя кайсассӑн,
Улах хӗр-пикисем юрла-юрла
Тӗрленӗ хыҫҫӑн ҫыврӑрма выртсассӑн,

Чӗвен тӑрса утса эп вӑрӑлла
Пӗр хӗр пуҫелӗкӗ патне ҫывхартӑм,
Минтерӗ айӗнче лекет алла

Паллану кӗнеке... Вӑшт-вашт кӑлартӑм,
Мӑч-мач ҫунан чӗпкуҫ пек ҫутӑпа
Пӗр сывламасӑр вулама тапратрӑм.

Тăван чĕлхем! Ку эс-и? Юн тапать.
Чĕре сиксе тухас пек кĕртлетрĕ.
Ăшра тĕвĕленет таса тупа:

Умри мал ĕмĕтĕм — чăваш Сетнерĕ,
Чун туртăмĕ — Нарспи çак тĕнчере!
Çĕрĕпелех ман ыйăхăм килмерĕ...

Ун чух эп пулнă çиччĕре.

1932

* * *

Вăл савнă ăна тахçанах,
Анчах каламашкăн именнĕ:
Малтан — çитĕнмен папкана
Татса хăртасран вăл шикленнĕ;
Кайран, ун çулçи ешерсен,
Вĕри сывлăшне кăлармасăр,
Сыхланнă ăна ĕнтесрен,
Куçпа киленсе пулнă сапăр.
Халь вăл шухăшлать: камшăн-ха,
Кама эп капла турăм ырă?
Чечек ĕлкĕрсен кам-ши халь
Татса хăй умне ăна тирĕ?

1932

* * *

Кĕрхи йĕпе-сапаллă каç
Çилсем лăкаççĕ алăка,
Чӳречĕне... Лăкаччăрах!
Симпыл вĕрет кĕрекере.
Тăхтавлă сыпкăмсемпеле
Ăна, кичемлĕхпе пĕрле,
Ĕçетĕп эп. Ĕçеп пĕччен,
Инçе хам тенĕ çынсенчен:
Инçе ачалăх туссенчен,
Яш тантăшăмсенчен инçе,
Инçе хам çамрăклăхăмран,
Хавасăмран, шухлăхăмран;
Инçе çитмен ĕмĕтсенчен,
Телей пек илĕртен чечен
Юратуран, сив мухтавран —
Инçе, инçе, эп... катара!

1932. Сиктĕрме

* * *

Сана аса илсессĕн, лирă
Пайтах чĕнмен çĕртен
Янăрама пуçларĕ ырă
Пур хĕлĕхĕпелен.

Эп шухăшларăм: çакă-ши-мĕн
Хавхалану вăл ман?
Ма урăх кирлĕ мар-ха нимĕн?
Çыран, çыран, çыран...

Авалхисем ĕненнĕ музă
Пĕр чĕрĕлес пулсан,
Сан евĕр пултăрахчĕ, унсăр
Вăл маншăн çук нихçан.

1933

* * *

Туллилĕх. Август перекечĕ.
Чĕрĕлтететчĕç вĕршĕнсем.
Хутран лĕп çумăр пĕрĕхетчĕ,
Çĕмел ларатчĕ сĕршĕнсе.

Вăрман. Çăкалăх, хырлăх — хутăш.
Çуллана йывăç — йăвă, тан.
Е яр уçланкă, чăтлăх уртăш...
Çĕршыв — чĕр Шишкин, Левитан.

Сайра сыхланнă пĕрчĕк-пĕрчĕк
Хăмла çырли юлашкисем.
Эс пит хавас, эс питĕ пĕчĕк,
Пăртак тупмашкăн май килсен.

Эс алхасатăн. Ик çырлаллă
Сапак татса мана сĕнен.
«Пĕри, шупки, ку — эпĕ, паллă,
Тепри, хĕрли, ку — эсĕ»,— тен.

Ах, тусăмçăм! Шупки — тасалăх,
Мал ĕмĕт вăл, тулас сĕткен...

Ан хапсăн, куçăм, ан ас, алă,
Теетĕп халь эп инçетрен.

Нумай çырла татса эп илтĕм:
Пĕри — телейччĕ, тепри — шар...
Пытан, лăплан, ман çут асилĕм!
Эп тивĕç мар, эп тивĕç мар...

1933

* * *

Кăнтăрлари лĕп çумăр евĕр
Час иртрĕ пирĕн юрату.
Сыв пул! Ан ӳпкеле. Квит эпĕр:
Иксĕмĕрте те ырату.

Кăнтăрлари ылмашлă çил пек
Час улăшăнчĕç сисĕмсем.
Каях. Чипер кайсам! Ан кил тек.
Кив сурана ан вистесем.

Кăнтăрлари ачаш хум майлă
Асаилӳ те иртĕ час.
Иртин. Лăпки паха: нумай вăл
Кӳретчĕ ӳкĕнĕçлĕ сас...

1933

* * *

Мамăк çурăлнă тапхăр.
Шăрăх тăраççĕ кунсем.
Эпĕр иккĕн утатпăр,
Хирĕç çилпе ӳпĕнсе.

Çил каскăн мар, тӳлек çеç,
Ме кăкăра — вĕр, вĕрех!
Шухăшăмсем тĕвлеççĕ
Пурнăç çинчен пĕр кĕввех...

Вăхăт çурать акă мамăк,
Вăхăт пуян çимĕçрен.
Тусăм! Яш кун кăна памĕ
Вăхăт пире çĕнĕрен.

Иçĕм çырли сĕткенĕ
Сиплĕх илсе йӳçнĕ пек,
Пурнăç пире йӳçĕтет-мĕн
Хăйĕн йăли-йĕркипе.

Çул иртнĕçем хăватлă
Йӳçнĕ сĕткен-эрех,

Симӗссӗн те кӑваккӑн
Вӑл ялкӑшать черккере.

Ҫул иртнӗҫем эпир те
Витӗмлӗрех, тӑрӑрах.
Ҫук ӗлӗкхи шух иртӗх
Савӑшура, сӑвӑра...

1933

* * *

Кӑтраланать, чӗтренкелет хумҫи.
Хумсем ҫинче ҫӳрет аташнӑ ҫил.

Хӗрсем каҫаҫҫӗ Атӑл леш енне,
Хӗрсем пӗлесшӗн мар эп пӗчченне.

Тин тухнӑ хур чӗппи тӗслӗ берет
Паян ман чӗрене вӗчӗхтерет.

Беречӗ айӗн шиклӗн, хурлӑрах
Вӗҫет ик кӑвакарчӑн урлӑрах.

Пӑхсам! Ачаш эс, ҫепӗҫ пулмалла.
Пӑхсам! Эс мӗншӗн именни паллах.

Ман ӗмӗт сӑпӑ: хамӑр йӑлӑмра —
Ҫаран ҫинчех е ҫӗмӗртпе йӑмра

Хӳттисенче — хулпа хула кӑшт ҫех
Сӗртӗнтерсе, таткаласа чечек,

Утта таптанӑшӑн, тен, ӑнсӑртран
Штрафа лексе, кулса чунтан-вартан,

Санпа эп ҫӳреттӗм, берет хуҫи!..
Чӗтренкелет, кӑпӑкланать хумҫи...

1933

## КУҪАРНӐ ХУШӐРАН

Ыйхӑм ҫук. Татах, татах-шим
Хускалса ӗлӗкхисем
Канлӗхе манне татасшӑн,
Чӑнлӑха тӗлӗклесе?

Шалта куҫ, янравлӑ сасӑ,
Хупӑ кӑмӑллӑ, йӑваш...
Ма мана сывлатнӑ ассӑн
Ҫав хӗрарӑм, ҫав чӑваш?

Халӑх халӗ, иртнӗ чиксӗр
Хӗн-асапӗ — пӗтӗмпех
Курӑнман-ши ҫав сӑн витӗр
Кинора кӑтартнӑ пек?..

Чӳречен пӗр куҫӗ уҫӑ:
Вӗлтлетет пуҫламӑш юр.
Ҫӑкасем ҫӑра та усӑк.
Улать йытӑ. Уйӑх пур.

Лампа. Даль. Графин. Онегин.
Аллă çиччĕмĕш çавра[1].
Тĕрĕсех пуль çав, коллегăм:
Эпĕр пурте çапларах.

1934

[1] Замечу кстати: все поэты —
Любви мечтательной друзья.

*А. Пушкин* («Евгении Онегин», пĕрремĕш сыпăк, I—VIII).

* * *

Эп таврӑнӑп-ха сан патна.
Ан ӳпкеле, сӑвввӑмсенче
Тупаймасан ху сӑпатна:
Сарлакаланчӗ ман тӗнче.
Эп таврӑнӑп-ха сан патна.

Калаймӑп: намӑс амантма
Самантшӑн сывӑ чӗрене.
Ҫук, юрату вӑл самант мар:
Пӗр сӑвӑра, пӗр чӗррӗнех
Эп таврӑнӑп-ха сан патна.

Ӑҫта эс халь: кулатӑн — а
Яш ушкӑнра е пӗр-пӗччен
Ӳпкелешетӗн кӑшт кӑна —
Ялан, поэтлӑх иртиччен,
Эп таврӑнӑп-ха сан патна.

Мана сас панӑ самана
Тӗл-тӗл манах халь тиркесен,
Ан ман: санран вӑл, эс мана
Йӑвашлаттарнӑ йӗркесем...
Эп таврӑнӑп-ха сан патна.

1934

* * *

Илткелетӗп кассӑн-кассӑн:
«Ма эс сивӗ пӑр пекех?
Сӑввусем ҫине пӑхсассӑн —
Пасарать куҫ хӑрпӑкӗ».

Нимӗскер чӗнме аптрарӑм,
Хуравларӑм тӗрлӗ май:
Ватӑлатӑп, ҫук хастарӑм,
Ҫук савни хастарлама...

Кам чӗрин ачаш кӑварӗ
Вӗрилетӗ ман сӑвва?
Кам яланлӑх йӗр хӑварӗ —
Эп ҫавна кӑна савап.

Тен, ирттернӗ юратса та,
Тен, вӑл шухӑшран писем?
Анчах паллӑ: ырӑ сатӑн
Пулмалла-ҫке улмисем.

Ӑҫта ҫимӗҫ? Эп курмастӑп.
Астиветӗн — аплах мар...
Юратас та теп, юрлас та:
Ҫӗнӗрен, эппин, пуҫлар.

1935

* * *

Пурте, савни те мана, савманни те,
Чунăм тĕпне йĕр хăварнă пулсан,
Пурте паян ман уявăма килтĕр,
Чи кăмăллана тумне тăхăнса.

Ку юлашки ман тулли кĕреке-тĕр,
Тек нихăçан капла хыпмĕ талантăм.
Ларăр кĕрсе, пикесем-чиперсемĕр,
Итлĕр: сиртен пĕрне çеç эп сăхлантăм.

Курăр: ташша пĕрне çеç чĕнтĕм эпĕ.
Пинĕн чĕре алăкне ав шаккаç.
Пушă хирти шывсăр типнĕ тĕве пек
Чунĕ вĕсенĕн те, ман та çак каç.

Шырăр çăлкуç, сывлăм-юн пĕрĕхсемĕр!
Сирпĕнтĕр сиплĕх йĕри-тавралла.
Ан ӳкĕн эс, чĕрӳне вĕçертсен-пĕр:
Ванĕ те вăл чăмăртанĕ каллех.

Сирĕншĕн, çур тутăра кăна сирнĕшĕн,
Пĕр сывлăшпа çеç сывлана пулсан та,
Е куçăмпа çеç киленнĕ-и — сирĕншĕн
Ман сăвăпа кăпăкланнă пуç-алтăр.

Сирĕншĕн, кăнтăр кунта тĕлĕкленнĕшĕн,
Каç çывăрмасăр хитре асапланнăшăн,
Пурнăç пăрне сирĕнпе ирĕлтернĕшĕн,
Чăрсăр чуна сирĕнпе тытса чарнăшăн!

Сирĕншĕн ман шерпетлĕ сĕткенсем кĕçĕр
Çак сăвăра сăрханаççĕ туп-туллăн.
Мейĕрччĕ савăш курки, астивсе ĕçĕр!
Ме çул курки, ăсанан яш кунçулăм!

Шăппăн шуса çывхарать Вальпурги çĕрĕ,
Шăнк варринче эпĕ — Фауст-асамçă.
Эй, Мефистофель! Эп ырлăх курки ĕçрĕм.
Çак саманта эс яланлăх чарсамччĕ!

1935

* * *

Мăчлатми ик çăлтăр куçлăн
Шав пăхатăн... Кам эс, кам?
Мĕн курайăн-ши? Мĕн шутлăн
Ман çинчен эс, тăпăлккам?

Асунта усратăн пулĕ
Тĕрлĕрен халап-юмах.
Тикĕс мар этем кунçулĕ
Сана хушĕ сых пулма.

Пит нумай сана каланă
Чăннине те суйине.
Иртнĕ пурăнăçăм манăн
Çăмăлттаййăн туйăнех.

Ӳкĕнетĕп, тусăм, çавă
Пуш вутра эп çуннăшăн,
Ӳкĕнетĕп сăвăçа вăл
Çунтарса тĕп тунăшăн.

Пĕр сана, сана итлесшĕн
Çак кунран эп малашне,

Кӑмӑлу пулсан — пиллесшӗн
Пӗтӗм чунӑн ачашне...

Мӑчлатми ик ҫӑлтӑр куҫлӑн
Шав пӑхатӑн та пӑхан...
Пӑх та кур эппин: эс пуҫлӑх,
Эс тӳреҫӗм пулӑн ман.

1935

* * *

Килет, килмест... Килет, килмест...
Шав тинкерет хăлха.
Çук, шаккамарăн иккен эс
Паян ман алăка.

Илтмен пулсанччĕ сан ятна,
Асамлă куçпăван!
Тататăп ак — туятăна? —
Чуна строфан-строфан.

Стена çинчен сан сăнусем
Хĕртеççĕ ĕмĕте.
Мĕнпе эп лăпланам, тусем?
Çук нимĕн мелĕм те.

Çине-çине вĕриленсе
Тулан чĕр сисĕме
Чарсамăр, тунсăх кĕввĕмсем,
Мел парăр сивĕнме!

Килет, килмест... Килет, килмест...
Утатăп пўлĕмпе.
Паян килмерĕнех-мĕн эс.
Тен, килмĕн ўлĕм те?

Камран тарасшӑн, ҫепӗҫӗм?
Ыран, хӗвел ансан,
Туту ҫинче вӗҫе-вӗҫӗн
«Каҫар» шӑранӗ сан.

Кӗрейӗн алӑкран — «каҫар».
Илтсе ӗлкӗриччен
Ӑна эп хуплӑп, пӗр ырҫа
Тӑкса вӗри мерчен.

«Каҫар» — эс салтӑнатӑн. Эп,
Илсе сан тумтирне,
Ҫакичченех вӗтеленеп
Сӑмаххуна ирме.

Ларатӑн эс: «Каҫар»,— тен. Ман
Илтессӗм те килмест...
Ахалӗн мар мана паян
Кӗтсе суптартӑн эс!

1935

* * *

Пуш уйăх пĕтсе кĕç килетчĕ,
Каç кăчăр пулатчĕ ҫăн пăр...
Ан тив, манăн юррăм тивлечĕ
Санпа паянтан ăшăнтăр.

Ютран эс килсе юта кайрăн,
Хăвартăн самантлăх телей.
Çĕре çитиех пуçа тайрăм
Сана сăввămпа эп пĕрле.

Сыв пул! Уçă мар пурнăç пилĕ.
Эс манăн. Лăплан эс. Ман —
Çак март, Шупашкар, хăна килĕ
Асра тĕрĕленĕ ялан.

1935

* * *

Юмаххăн кĕтĕн ман пата,
Юмаххăнах тухса каятăн.
Анчах эс, кам пулсассăн та,
Çĕре çитех мана таятăн.

Паян каларăн пĕр сăмах:
«Манпа эсех пыратăн»,— терĕн.
Эппин эпех? Эппин чăнах?
Эппин нимрен те именмерĕн?

Тавах, чиперĕм, тавтапуç!
Эс уншăн хуçăлса аманăн.
Ăçта уçсассăн та вăл куç —
Пиллеп ăна: вăл сан, вăл манăн.

Ăна эп курмăп нихăçан,
Вăл манăн чĕлхене пĕлеймĕ.
Кала ăна: хăюллă, тан
Юратуран вăл тĕвĕленнĕ!

193(?)

* * *

Эс ман чĕремĕн чĕлхине
Сăмахсăрах чухлаттăн, тусăм.
Çапах сан кĕнекӳ çине
Çырасшăн эп сывпуллашуçăн.

Каллех юратнă юрруна
Итлетĕп эпĕ. Иртрĕ уйăх.
Санпа пыма пуçтарăнать
Иксĕмĕр çеç пĕлен пĕр хуйăх.

Ман тантăшăм! Ху çĕрӳнте
Çав хуйхăмăр телей пулайтăр.
Куçна тĕтре ӳксессĕн те,
Туту мал ĕмĕтпе кулайтăр.

Пĕрремĕш туртăшупалан
Чи кайранхи асапуччен эп
Тархаслăп пур чунтан-вартан:
Вăй патăр, тӳсĕм патăр тейĕп.

193(?)

* * *

Савниҫӗм! Ман анне тӑван чӗлхипеле
Ача чухне мана калатчӗ те сӑмах,
Сана ман халь ҫапла, ҫапла чӗнес килет,
Тӑп-тӑп кӗлеткӳне ҫумма чӑмӑртасах.

Ман ылтӑн ҫупкӑнӑм, ман иксӗлми сӗткен!
Санпа иксӗмӗртен калчаланан чуна
Тӑртаннӑ кӑкӑрна пӗрремӗш хут сӗнсен,
Чӗнсемччӗ ҫав ачаш сӑмахпалан ӑна.

193(?)

* * *

Мĕскер вăл пурнăçшăн пĕр уйăх!
Анчах санпа çак вăхăтра
Нихçан туйманнине эп туйăп,
Çĕр хут юн тапрĕ хăвăртрах.

Нихçан капла эп пурăнманччĕ —
Капла туллин, капла ансат.
Мĕнпур пытанчăк вăй тапранчĕ,
Сана пула хавхаланса.

Мĕнле ансат! Çук ним тăртанăç,
Йăлт пĕлнĕ пек пĕрне-пĕри!
Вылявсăр, йĕкĕлтевсĕр, тăнăç,
Анчах илемлĕ çав тери.

Алла вĕрентнĕ кайăк евĕр
Чĕрем лăш ячĕ çунатне.
Эс ним хушусăр та хистевсĕр
Çывхартăн чурăс чун патне.

193(?)

* * *

Ют çурт. Ют хурăн. Ют çерем.
Паранкă склачĕ патĕнче
Çĕрĕпелех улать пĕр йытă.
Вăл сăнчăрта. Вăл каçсерен
Астутарать: çак çут тĕнче,
Çак пурăнăç — ачаш та хытă.
Хăвна хупсан, тулти вара —
Епле пулсассăн та — паха,
Илемлĕ, илĕртӳллĕ, тунсăх.
Пралукĕ вĕççĕн склад тавра
Çӳрен йытта та тунсăха
Пĕлтерейместĕн — çавă хурлăх!
«У-у!...» Салху кăмăлпалан
Ӳпкелешет кашкăрпăван.
Сивлек. Сăрăлтатать çанçурăм...
Йыт сăнчăрĕ пек сăввăм ман
Карăнкалать çавран-çавран,
Пĕр сассăр пăвăнать чăн юррăм...

1938

* * *

Нумайранпа эп макăрманччĕ,
Паян — вăтанăçăм таçта...
Чĕрем кӳлешӳпе тăртанчĕ,
Улман-улман куççуль çăтап.

Çук, тусăм, çук, Отелло мар эп,
Эс ху та Дездемона мар:
Мĕнле хавас сана эп парăп —
Çаплах асап мана эс пар.

Эс манăн сăнăма пытартăн,
Мĕскер тăватăн эс унпа?
Пĕлетĕп: витĕнĕ сăпатăм
Çурма çултах сивлек хумпа.

Эс ăнланаймăн, ырă тусăм,—
Салхуллă куллăм айĕнчен
Мĕн тилмĕрет ман хурлă куçăм,
Эс ăнланаймăн... нумайччен!

193(?)

## МУЗА

Пĕлместĕп: турпике-и, мар-и?
Анчах хĕрарăм вăл. Ку паллă.
Тултарăп вăтăр, хĕрĕх, аллă —
Çаплах вăл куçĕнчен пăхтарĕ.
Сăмахĕ ун сахал, словарĕ
Çителĕксĕр çыракана.
Анчах ăнлан пĕрне кăна —
Пĕр сăмахран вăл пин кăларĕ.
Кала-ха, тейĕн, ыра ту:
Мĕнле сăмах вăл? — Ю р а т у.

1935

## ИКĔ САН

### 1

Ылмашăнсах тăрать ун куçĕ:
Пĕрре кăвак, тепре сенкер;
Хăш чух, шăрçи пысăкленуçăн,
Сĕм-тĕттĕм авăр пек синкер.

Ак-ак сана хыпса çăтассăн
Кăпăкланса вăл çаврăнать.
Путсан ишсе тухма ан асăн!
Путма — такам та пултарать.

### 2

Хаваслă ушкăнра ларать-и —
Вăл пуринчен хаваслăрах:
Шăнкăртатса кулса ярать те —
Итлен ун сассине анчах.

Сасартăк шухăша каять-и
Такам çинчен е тем çинчен —
Хаш сывласа пуçне таять те —
Пур тĕнчере хăй пĕр-пĕччен.

1940



ПЕТĔР ХУСАНКАЙ

МЕХЕЛ

# «ПӲЛЕР КĔВВИСЕМ» ЯРĂМРАН

## КАÇХИ МĔЛКЕСЕМ

...Хĕвел ансан, мĕнпур ăннă-ăнманă
Ĕçĕмсене мансассăн ерипен,
Кавказ тӳписене шупка тăхланăн
Тĕссĕрлесе, сив уйăх çĕкленсен,
Тахçан иртсе çухалнă самананăн
Ĕмĕлкисем тухаççĕ инçетрен.

Хисепсĕр юланут вĕçе-вĕçĕн
Таçтан капланнă шăрчăк пек куçаççĕ,
Тĕлпулуна хирсе хĕçе-хĕçĕн,
Ту хушшипе кĕшĕлтетсе каçаççĕ.
Ахру, юрлу, кулу... Е вил, е çĕн —
Калле çул çук. Кĕртмест хускалнă Ази.

Анăçалла тапать этемлĕх хумĕ.
Ман йăх та пур. Европа хысине
Вăл пĕрĕхĕ ытти нумай йăх умĕн
Ĕрчевлĕ, каскăн, тӳсĕмлĕ юнне,
Хăй çеç кайран пин çул ытла астумĕ
Аттилă Атăлпа пĕр иккенне...

1931. Тбилиси

* * *

Уйăхран эп ыйтрăм: ма эс, уйăх,
Тĕксĕмленнĕ тивĕççĕр тесе.
Вăл каларĕ: сана пуснă хуйăх,
Çавăнпа сĕмлерĕм хам тĕсе.

Çăлтăртан эп ыйтрăм: ма эс, çăлтăр,
Ярăнатăн, терĕм, йăр та яр?
Вăл каларĕ: кăмăлу çуталтăр,—
Ни ачаш ан пул эс, ни хаяр.

Шăпчăкран эп ыйтрăм: ма эс, шăпчăк,
Юрламастăн, терĕм, юрруна?
Вăл каларĕ: сан чĕрў пит шăпчĕ,
Хускатма хăймарăм эп ăна.

1927

## ПӐЛЕР КӖВВИСЕМ

Куккук ҫӑкри чӗркуҫ таран,
Чӗркуҫ таран куккук ҫӑкри.
Асран кайми ана-ҫаран
Каллех ӑшшӑн-ӑшшӑн пӑхри?

Каллех хушпу, тухъя, тевет
Ҫакать юсавлӑ Ҫарӑмсан.
Такам сасси чуна тивет,
Анчах ӑна эс ан ӑмсан.

Ҫеҫке! Ҫеҫке! Мӗнле йӑваш,
Мӗнле телейлӗ сан яту!
Ҫеҫке! Ҫеҫке! Эп те чӑваш,
Пулар-и иксӗмӗр тату?

Ах, апла мар... ах, апла мар...
Ҫунса курман-ха сан чӗрӳ.
Пурин те мар вӗт ҫак кӑвар,
Пурин те мар кун пек хӗрӳ.

Мерчен тухъя, кӗмӗл тевет!
Те савӑнам эп, те йӗрем...

Пĕлместĕн эс — мана ĕмет
Йăваш кăмăл, хавшак чĕрем.

Пĕлместĕн эсĕ — çак ĕшне
Мана нимрен те пахарах.
Кĕрер-ха, тусăм, чи ăшне
Сума сумашкăн Пăлхара.

1927. Çĕртме уйăхĕ. Пӳлер

* * *

Ах, аппа! Эс ăсан тараса пек
Манăн пуç п шкĕнет çĕрелле.
Пусăри шывпала мана сап эс,—
Эп пăртак çуталам, хĕрелем.

Илеме манне тахшин вăрларĕ,
Эс çаплах-мĕн кĕрнеклĕ, хитре.
Хĕрхенетĕп сана: йывăр мар-и
Ху куçу пек тулли ик витре?

Ĕçпе пирĕн хĕрсем пике мар та,
Сан çапах хулпуççийĕ чечен.
Эп ялтан тахçанах тухса тартăм,
Анчах чунăм ман халь те хресчен.

Ĕмĕрех юрламашкăн эп хатĕр
Юратса Нарспипе Сетнере.
Пĕр чун çеç маншăн та макăрать-тĕр
Халиччен эп ютра çĕтнĕрен...

Эс пĕлетĕн, эс ăнланан вĕт:
Ман сăвва пахалаç йӳн хакпа.
Ырлăхне курас çук ĕнтĕ, ан кĕт,
Хурлăхне — тӳссе пулмĕ, аппа.

Çавăнпа вĕт юта эп тарса та —
Ман кичемлĕ, сархайнă тĕсе
Силпире çитĕнмен Шахразада
Розăпа чиперлеттĕр тесе.

Юмахри илемсем... Пултăр канăç,
Çăмăл пултăр вĕсен вилтăпри!
Ĕмĕртен ĕмĕре сире манмĕç,
Шахразада, Офели, Нарспи.

Юмахри илемсем! Ма, аппаçăм,
Вĕсем çук-ши пурнан çĕршывра?
Эп шырарăм вĕт ирĕн те каçăн,
Кăлăхах иккен — ан та шыра.

Кăлăхах-мĕн ман пек сăвăçа вăл,
Ĕмĕтленнĕ ĕмĕт çитес çук.
Çавăнпа хурланатăп та çавă,
Çавăнпа тăкăнать те куççуль.

Çавăнпа çак хыткан тараса пек
Усăнать те ман пуç çĕрелле.
Пусăри шывпала мана сап эс —
Эп пăртак çуталам, хĕрелем!

1927

* * *

Шурăмпуç шуса килсессĕн ерипе,
    Таврара шăп чух,
Куç пăвайрĕ мана шăпчăк юррипе —
    Ытарма хал çук!

Кам чунне вăл çемçетесшĕн савăшать:
    Савнинне-ши? Е
Çĕршывне аслăлатан çĕн чăваша
    Йăпатас теет?

Тавтапуç, апла пулсассăн, тавтапуç!
    Пӳлерпе Сăвар
Çыннине, Тимур керменĕ, алăк уç:
    Вăл — хăна, ют мар.

1926. Самарканд

## ТĂВАН ПОЭТА

Ан хĕрхен, тăванăмçăм, хăвна,
Хĕрхенмелли вăхăт мар иккен.
Янраттар — çырах эс сăввуна,
Юн тумласа тăтăр чĕрӳнтен.
Ан хĕрхен, тăванăмçăм, хăвна.

Чăвашсем вĕт пулнă, тет, Пăлхар,
Асăнсах йĕрессĕм килет.
Паян анне чĕлхи вилме мар —
Чăн-чăнах тепре вăл чĕрĕлет.
Чăвашсем вĕт пулнă, тет, Пăлхар.

Чăн поэт пулсассăн эс, ăнлан:
Пурăнăçна тума ĕлкерĕн,
Хăвăншăн ялан вĕт пурăнан,
Анчах тăван йăхна мĕн кӳрĕн?
Чăн поэт пулсассăн эс, ăнлан.

Поэтсем çыраççĕ юнĕпе,—
Есенинпа Çеçпĕл пĕртăван.
Анчах йӳнĕ вĕсен юнĕ пит —
Куçне хупсассăн тин кăшкăрсан.
Поэтсем çыраççĕ юнĕпе.

Этем тени ĕнтĕ выльăх мар,
Мĕншĕн татас çунан ĕмĕте?..
Пĕри сӳнсен, тепри ялкăшар,
Юрлар телей сунан ĕмĕрте!
Этем тени ĕнтĕ выльăх мар.

1927

* * *

Ыран ирех вăрат мана, анне,—
Шурăмпуç кăвакне эп курам.
Кашта çинчи тухъяллă автанне
Сассăмпа хупăрлайса хурам.

Ыран ирех вăратчĕ ыйхăран —
Пахчари шăпчăка эп илтем.
Мерчен-ахах пĕрчиллĕ курăкран
Сăввăма тăхăнтарăп илем.

Ыран ирех вăрат мана, ирех —
Эреветлĕ чĕкеç эп пулам.
Чĕкеç чĕвĕлтетеӊ чĕлĕхсĕрех
Чĕлхене чĕлĕхлем те юрлам.

1927

## ХĂНАРА

Чӳрече ҫинче чечек,
Ячĕ ун — Бухар кăни.
Эп паян каймастăп тек,
Эп паян — Пӳлер хăни.

Ҫутă куҫлă ҫурт хуҫи —
Икĕ ҫивĕтлĕ инке.
Ҫавракa ун хулпуҫҫи,
Ун ури — чипер йĕке.

Ун тевечĕ хĕррипе —
Икĕ ярăм хурткуҫҫи.
Тулăн-шалăн ерипе
Кумкалать вăл — чун уҫҫи.

Йĕрĕлче пек тутинчен
Тухрĕҫ ăшă сăмахсем,
Ҫак ҫынна эп куриччен
Чĕлхемре пулман вĕсем.

Йӳҫĕ аварлă чăмра
Йӳҫсе ҫитнĕ мăрссала.
(Ҫав ятпа ку тăрăхра
Ҫӳретеҫҫĕ симпыла.)

Симӗсрех тӗспе ҫиҫсе
Чашкӑрать тулли курка.
Пӑтӑпа тулса пиҫсе
Ларчӗ ак касман кӑркка.

Чавсине хитрен авса,
Инке тытрӗ куркине.
Куҫӑмран тӳрех пӑхса
Тӑчӗ вӑл ури ҫине:

«Тав та чыс хӑнамӑра,
Пурнӑҫ кайтӑр малалла!..»
Тепӗр тапхӑр сар чӑмра
Чашӑлтатрӗ мӑрссала.

Ҫук, каймастӑп эпӗ тек:
Эп паян — Пӳлер хӑни.
Чӳрече ҫинче чечек,
Ячӗ ун — Бухар кӑни.

1935

## АТĂЛ

...Риме! Çеçенхир шуйхашать çĕр пин саслăн.
Кăлкан тĕмĕсем астивеççĕ хĕçе.
Хĕвел юн кӳлленчĕкĕ пек кусса тухрĕ,
Пушаррăн хыптарчĕ мĕнпур таврана.

Риме! Васкаварлăн утсем йăлмакласçĕ.
Чĕнӳ, шăхăру, кĕçенӳ, тулхăру...
Çар пуçĕ хăй чатăрĕнчен курăнсассăн,
«Мухтав Атăла!» çухăраççĕ çынсем.

Риме! Тапса сикрĕ эшкер урхамахĕ.
Шуйттан кустăрми кустарать çиле май.
Вĕçет çилхесем. Хирлӳсем карăнаççĕ.
Йĕнер айĕнче лаша ашĕ пиçет...

1930

* * *

Эс манăн халăхăм çинчен,
Çĕршыв çинчен ыйтатăн, тусăм.
Пăх ман çине: мана пиччен*,
Тӳнтер те пĕлтĕн кутăруçăн.

Супан этемлĕх несĕлне
Хунсем касса кĕнĕ тăваррăн,
Истори анисем çине
Шух варвăрсен ятне хăварнă.

Эп — çав тăвар. Пĕр пĕрчĕ пек.
Ман юн кайран нумай пăтраннă.
Пин çул ытла п ă л х а р ч ч ĕ эп,
Унтан мана ч ă в а ш ят панă.

1935

---

* Пиччен (диалект) — питьен.



ПЕТĔР ХУСАНКАЙ

МЕХЕЛ

# СОНЕТСЕМ

## ИККĔЛЕНӲ

Ак иртрĕ тепĕр кун. Туман-ха нимĕн те.
Ирпе листанĕ календарь тепре.
Чӑнах та ман хевтем пĕтсех пĕтним ĕнтĕ,
Е манӑн вӑл пулман та чĕрере?

Е эп пуҫтах чунпа, хӑюллӑ чĕремпе
Ҫука пур турӑм-ши хам ӑшӑмра?
Нихҫан суха тивмен пӑрахӑҫ ҫерем пек
Ӑрӑвӑма мĕнех вӑл ман пера?

Ман ĕҫ — Сизиф ĕҫĕ: тӑрмаш ҫав чулпала,
Кустар ӑна сӑрт-ту тӳпинелле.
Хӑҫан, мĕнле мелпе унта улӑхмалла?
Хӑҫан ун тӳпине ман ҫитмелле?

Ҫитеймесессĕн — мĕн тӑрмашмалла?
Тытам эп шĕшлĕ пĕрех хут алла!

1927

## АРХЕОЛОГА

Тип-тикĕс тăваткал. Йĕри-тавра канав.
Тĕш хытарса хуллен чăштăртатать сар тулă.
Упраннă кĕнеке калать иккен сана:
Пин çул авал кунта хула кĕрленĕ пулнă.

Тытатăн кĕреçе. Тем тĕрлĕ самана
Эс чавнă çĕр çине тăпра сийленĕ хулăн.
Анчах пĕр нухратрах куратăн эсĕ муллă,
Шăв-шавлă пасара, тӳсме çук нушана.

Чӳлмек катти чĕртет сăрапала юрра;
Ют кĕреке умне тухса тăрать салхуллă,
Чĕркуç таран çарран, тăм çăракан чура.

Тупатăн кивĕ хĕç: элек пуçне вăл çулнă
Е, чăнлăха касса, хăтарнă суяна?
Кам ун хуçи? Тарçи? Йăлт калăн эс çакна.

1935. Сăвар

## ВИРЬЯЛ ХĔРĔСЕМ

Шап-шурă шупăрлă, хура ураллă —
Чарлан пекех вирьял хĕри-пăраçĕ
Ким варрине карталанса лараççĕ.
Улт сар кĕсмен, вуникĕ хăмăр алă.

Эп вĕсене куратăп, ир-и, каç-и:
Витрисене витсе, ялан янравлă
Йăлăмалла е каялла каçаççĕ.
Сĕт сиплĕхĕпеле сывлать йăмралăх.

Йăмăкăмсем, вăрман кайăкĕсем!
Савса ыйтас килет, пĕлтерĕрсем:
Ма тăр-çуллах хура тăла сыратăр?..

Кунта асра пуль, тен, ĕмĕртенхи
Чăтлăхсенчи çĕлен-калта сăххи,
Е урăх-и сăлтав? Этнограф, калăр!

1936

## ЧӐВАШ

Эп ватӑ ҫав тери! Истори шурӑмпуҫӗ
Кӑвакарайнӑччӗ — вӑрантӑм ыйхӑран.
Кунҫул ани ҫине уттартӑм янкӑр уҫӑ
Пуш пӗлӗт айӗпе малтисемпе пӗр тан.

Тӗрен тивмен ҫӗре ман йывӑҫ акапуҫӑм
Хуратрӗ ҫӗклесе пайтах асаппалан.
Кӑкланчӗ ерипен пиншер ҫулхи кӑлкан:
Кайран акакана — ӗҫ ҫӑмӑл кутӑруҫӑн.

Ӑҫта ҫитмерӗм-ши? Асра яланлӑх пур
Вут пек хӗртен хирсем, нихҫан кайми кӗрт-юр.
Лӗп тинӗссен тӗпне анса мерчен кӑлартӑм...

Телейшӗн хушӑнан мулпа илем ҫинче
Этемлӗх ҫӳпҫинче — пӗлсе тӑтӑр тӗнче! —
Пурин тенкипелен пӗр хак ҫӳрет нухратӑм.

1939

## КОМПОЗИТОР ПАТĔНЧЕ

*Г. Я. Хирбю кăмăлне*

Çак пĕчĕк пӳлĕме аслăлатать мăн шухăш.
Паха ĕмĕтпелен тухап сан патăнтан.
Эс тупнă кĕвĕсем хастарлă та салху кăшт,
Тӳссе çăвăлнисен кăмăлĕпе пĕр тан.

Сăрнай сассипеле хум-шавлă Атăл хутăш
Йĕрсе те тарăхса пăлханнă авалтан.
Юрра саван çĕре çăвар уçма паман!
Çавна халь ылханса çунать ман тепĕр хут ăш.

Янран илем ăсти! Мĕскер сунам сана?
Хаяр кĕрешĕве çĕкленчĕ самана,—
Юратнă халăхна ăмăрт çунат хушсамччĕ.

Шанатăп хамăрти сӳнми чун хавалне.
Пĕлетĕп: çут тĕнчен йĕркесĕр вăй-халне
Гармони тумалла чăн ирĕк ĕç хăвачĕ.

1939

## ЭЛЕК

Пĕлетĕп: куçăма хупсассăнах,
Ман пуç вĕçне пырса вăл ларĕ.
Малтан — пĕрре, унтан ик-виç сăмах,
Вара чăп тулĕ ун çăварĕ.

«Поэт? Пулин! Вăл хамăр пек çынах.
Нимпех те иртеймен».— «Каларĕ!
Пиртен çĕр хут варланчăк мар-и?»—
«Çĕр çеç-и? Пин!»— «Чăнах, чăнах, чăнах!..»

Чĕрне ÿсме те чарăнмĕ-ха ман —
Пуçне вăл çĕклĕ, ĕмĕрхи тăшман.
Пĕлейĕттĕм: хăçан ăнланăн,
Çук чунупа намăсланса?—
Поэтăн сурчăкĕ те — санăн
Суя куççулÿнтен таса!

1939

## ХӐТӐЛНИСЕМ

...Пӳртне-и? Вучахне те хӑварман.
Кӗл ҫех парӑлтатать кӗрхи ҫилпе.
Ҫапах та пурнӑҫ, пурнӑҫ чарӑнман.
Калай листи ҫинче ыраш типет,
Ӑна кӑларнӑ вӑрттӑн шӑтӑкран.
Ҫынсем паян тин таврӑннӑ ирпе,
Пытарнӑ вӗсене хура вӑрман.
Ҫарран. Ҫийӗсенче ҫӗтӗк кӗпе.

Кӑлтӑртатать сулмаклӑ ал армань.
Ӑна ҫаврать ӗшеннӗ хӗрача,
Кулсан — шупка шӑл тунине куран.
Мӗнрен кулать? — Пӗлет пӗр хӑй анчах.
Мӗн ма кулать? Мана вӑл кулнӑ пек
Хаяр тӑшмансенчен хӑтӑлнипе.

1943. Орел облаҫӗ

## САЛАМПИ

Телейсĕр савăшăн пĕртен-пĕрех калчи...

*Байрон*

Нумаййăнччĕ вĕсем — хура, кăвак куçли...
Китай çĕршывĕнчен Суоми таранччен
Чăваш ăрăвĕсем кĕшĕлтетсе куçни
Курнатчĕ çав пĕр мар куççен сăнарĕнче.

Нумаййăнччĕ вĕсем — асли те кĕçĕнни,
Танни те тан марри ман çул тăршшĕнче.
Анчах илтмерĕ, çук, илтмерĕ эп чĕнни:
Вăл пулчĕ аякра, эп юлтăм пĕр-пĕччен!

Кăна эс чухлама пултарас çук халех,
Кайран пит ăнланма, тен, пулмĕ те кирлех:
Илем те, чăнлăх та пырать улăшăнса.

Ун чух... ун чух поэт, куçран пăхса хĕре,
Хăй халăхĕн чунне шыранă илемре...
Санра халь ман ăна тупасчĕ, иçмасса!

1943. Тула çывăхĕнче

## ПĂР ÇУРĚ

Ахаль те халăхěн хуйхи
Кěреймě пěлěт çӳпçине,
Тата пăр çурě... Юлашки
Сапа пулах йěпе çине!

Ырашăн ешěл пучаххи
Кěтсе илеймě тěшшине.
Улма чечекěн çупаххи
Мехелсěр сирчě тěввине.

Шанать вителěксěр панча,
Сарăпламасть ача анчах:
Алхаслă, шухă шăлйěрен
(Пулсан пулать тăваттăра)
Чěкěнтěр пек урипелен
Кула-кула таптать пăра.

1944. Чарне Лозе. Польша

### ХАВХАЛАНУ

Вăл лартрĕ юлашки пăнча.
Кăвапине касман ача пек
Турткаланать сăмах. Анчах
Ĕмĕрлĕхех çуралчĕ чапĕ.

Çунса кĕлленнĕ ăвăс çапă.
Икерчĕ сивĕннĕ. Анмасть.
Апат-и, тум-и халь, сăвап-и?
Çак саманта тĕнче тăмасть!

Куçкĕскире çунать асапĕ:
Ик куçĕ — ик хура алмаз,
Ыран ăна çĕршыв пуççапĕ,
Паян вăл — тăлăх, ют, усрав...
Пур çутçанталăк — хăмла хапĕ,
Ун мухмăрĕ — çак пĕр пуçра!

1948

## ХӖВЕЛ УРИ

Чӗлхеҫӗпе чӗлхе пирки калаҫрӑм.
Вӑл ӳпкелерӗ кӑшт сӑвӑҫсене.
Эп пур — вӗсен хутне кӗрсе тавлашрӑм,
Ҫапах та шухӑш ӳкрӗ пуҫ ҫине.

«Мӗскер шыратӑр? — терӗ ҫав юлташӑм. —
Пӑхма вӗренӗр халӑх куҫӗпе.
Пӗлесчӗ санӑн, иҫмасса: чӑвашӑн
Хӗвелӗ те утса ҫӳрет ҫын пек.

Уралла вӑл, ярӑнтарать хӗвел
Ҫынпа пӗрле шултра утӑмпалан...
Хальччен те сӑнаман-и? Питӗ шел!»

Хӗвел ури... Илтетпӗр ачаран.
Анчах ҫав сӑнлӑха нихҫан та ман ӑс
Художник пек тавҫӑрайманччӗ. Намӑс!

1949

## АТӐЛ КУÇӖ

Хӑш чух хӗлле, шыв-шур шӑнсассӑн,
Пӑрланнӑ Атӑл анинче
Çавра кӳлленчӗк асӑрхатӑн,
Вӑл çап-çутах хӗл каçиччен.

Пӑр хулӑн — аршӑн пур, виçсессӗн.
Кӳлленчӗк парӑнмасть пӗччен.
Вӑл — Атӑл куçӗ: халӑх темшӗн
Çапла каланӑ ун çинчен.

Çил уртӑр, шартлама кастартӑр —
Вӑл кӑчӑр та пулмасть иккен,
Чӳхенкелет кӑна хуллен.

Çапла, çул иртнине пӑхмасӑр,
Хавхалану ман чӗрере
Тапса тӑринччӗ ӗмӗре!

1949

## БАКЕН

*М. Я. Сироткина*

Эс курнӑ-и? — Ҫӗрле Атӑлпала
Пӑрахутпа е кимӗпе каюҫӑн
Пӗр хупланать, пӗр ялтӑрать каллех
Йӑваш та лӑпкӑ ҫутӑ чӗрӗ кусӑн;

Пӗр хум ҫинче вӑл авӑсӑнкалать,
Пӗр чӑмнӑ евӗр... Руль тытса пыруҫӑн
Ăна аякранах курса паллать,
Вӑл сӳнмесессӗн — малалла ҫул уҫӑ.

Ҫак пурнӑҫра ҫын ҫутӑрах ҫунасшӑн,
Вӑл тинӗсри маяк пек курӑнасшӑн,
Кам тиркӗ пархатарлӑ ӗмӗте?

Анчах ман асӑмра кирек хӑҫан та
Ҫав пӗчӗк пӑнчӑ: тӗксӗм ҫутатсан та —
Вӑл ҫул уҫать, вӑл вырӑнлӑ ҫӗрте.

1949

## САЛАМ СОНЕЧĔ

*Н. В. Никольские*

Тахçан-тахçан, ача чухнех,
Сире пĕрремĕш хут тăнлуçăн,
Эсир мана кăтартрăр уççăн
Чăвашăн тӳсĕмлĕ чунне.

Хусанăн хӳмисем çумне
Пуласлăх хăпаратчĕ куçăн,
Çунатланса вĕçетчĕ чунçăм
Часрах тухасшăн ун çулне.

Паян çав кун çывхарчĕ мар-и?
Мĕнпур Тăван çĕршывăм тăрăх
Янрать чăваш ăс-халĕ хурçăн.

Эппин — шăтрех, сая каймарĕ
Эсир акса хăварнă вăрлăх.
Тавсси, профессор! Тайăн, пуçăм!

1958

## ЯН АМОС КОМЕНСКИЙ

Сӑнне пӑхсан — йӑваш та ырӑ кӑмӑл
Куратӑн ватӑ вӗрентекенре...
Мӗнле вӗри вут-ҫулӑм, мӗнле тӑвӑл
Кӑларнӑ ҫак ӑс-хакӑл, ҫак чӗре,
Ун савнӑ ҫӗршывне тӑшман пуссассӑн,
Хӑйне вара тӗнче касма тивсен!
Тӑван ҫӗрте пророк эс пулаймастӑн.
Анчах ӑҫта ҫитмен, мӗскер тӳсмен —
Вӑл чехшӑн чех чӗлхи упрасшӑн ҫуннӑ,
Пур халӑхшӑн чӗлхе алӑкӗ уҫнӑ*.
Чӑваш пуҫпа эп килнӗскер, туятӑп,
Ҫав аслӑ алӑкран эпир те кӗнӗ:
Умра эп Яковлев сӑнне куратӑп,
Вӑл — ҫак Коменскин вӗренекенӗ.

1961. Прага

* Автор кунта Коменскин Европӑпа Азири нумай чӗлхене кусарна «Чӗлхесем патне уҫнӑ алӑк» ятлӑ кӗнеки ҫинчен калать.

## ЙЁКЕЛ

Йӗкел шӗкӗлченмесӗр пит ӳкмест:
Ҫил-тӑвӑлпа кӑна вӑл хӑш чухне
Персе анать те — ним тума пӗлмест,
Сип-симӗслех ҫӗртет хӑй вӑрлӑхне.

Чипер чухне вӑл саралсассӑн тин
Хывать ҫап-ҫавракка тӳпеттейне.
Пат! патлатса ӳкет вара туллин,
Унпа мухтаннӑн тутӑ кӗркунне.

Сӑввусене пит васкаса тирсен —
Кайран хӑвах вара намӑсланан.
Юман ҫинчи йӗкел пек туличчен
Кашни сӑмахӑм ҫитӗнтӗрччӗ ман.

Эп пурнӑҫра тӳсӗмлех мар, пӗлетӗп,
Поэзире — тӳсмешкӗн вӗренетӗп.

1962

* * *

...Çук! Килĕшеймĕп ĕмĕрне!
Мĕнле ан пултăр-ха манпа
Çак хыр, улатакка е чĕмсĕр
Çак чĕрĕ е çĕрĕшĕнен
Кив çулçă айĕнчи кăмпа?
Пур чĕрĕ чун — ман тус вăл ĕмĕр!

Çак чарлана та курмăп-и,
Хупланĕ-и çак ким вĕçни
Хумхантарса çак Атăла?
Пĕлетĕп: Гамлетăн шăпи,
«Пулатăп-и е çук?» — тени,
Халь «çук» тесе вăл татăлать.
Çапах... çапах та ман пуласчĕ,
Май пур пулсан — кунтах юласчĕ!
1962



ПЕТĔР ХУСАНКАЙ

МЕХЕЛ

# ВУТРА ШĂРАННĂ КĂМĂЛ

## АСЛАТИ

Аманнă ăмăрткайăк пек
Сас пачĕ ĕмĕр аслатийĕ,
Чăваш çĕршывĕн анĕпе
Вăл кайрĕ тертлĕ Атăл çийĕн.
Хум çăтрĕ хуçăк çиçĕме —
Типшаррăн, пуринчен те кулнăн...
Чуна кун евĕр пиçĕхме
Миçе пин çул-ши кирлĕ пулнă?

1941

## САЛАМПИ

1

Пĕчĕкçеççĕскерĕм!
Ма эс пысăк мар-ши?
Çырăттăн чиперрĕн
Кунсерен пĕр аршăн.

Салтака манмашкăн
Епле эс пултарăн?
Вăл сана ачашшăн
Асăнать, мăнтарăн.

Ун лутра çĕрпӳрчĕ
Санпа çеç илемлĕ.
Кӳр чуппине, кӳрччĕ!..
Вилĕм тек килеймĕ.

2

Чĕвĕл-чĕвĕл чĕкеçсем
Ларчĕç бруствер хĕррине.
Алă вĕççĕн çĕклесе
Чĕкеçрен чĕлхе илме
Эп сана вĕрентеймерĕм,
Каçарах, пĕчĕкçĕскерĕм!

Вĕлле хурчĕ тутанать
Çеçпĕле те ӳхлĕме.
Сим кӳмешкĕн тутуна,
Çу пек çепĕç пуплеме —
Пылпа çу эп сĕреймерĕм,
Каçарах, пĕчĕкçĕскерĕм!

3

Кунĕн-çĕрĕн çумăр, çумăр,
Тăхлан çумăр пуç çинче...
Эс, юрать-ха, çума-çумăн.
Эс, юрать-ха, пит инçе.

Хăш чухне эп, ывăнсассăн,
Сан сăнна пăхатăп та —
Çĕкленет каллех ман сассăм,
Ватăлма каллех тăхтап.

Хăш чухне, стройра пырса та,
Юнпа хытнă çӳçсене
Эп куратăп та — сасартăк
Тăп тăратăп, çӳçенеп...

Кунĕн-çĕрĕн çумăр, çумăр,
Тăхлан çумăр пуç çинче...
Эс, юрать-ха, çума-çумăн,
Эс, юрать-ха, пит инçе.

4

Урамра çилсем кумаççĕ,
Шăтăк-шăхăр шăхăрать.
Иксĕрех эсир кун-каçăн,
Япăхатăр, ахăрах.

Кив тетте те пушă аркă,
Кам кӳрес-ха çĕннине?
«Чăвашла юрласа пар-ха»,—
Тетĕн эс асаннӳне.

Асаннӳ юрлать... Пĕлесчĕ:
Мĕн юрлать-ши ватăскер?
Ман пуласчĕ пĕчĕкçеççĕ,
Çип-çинçе те кĕп-кĕске.

Ман халап-юмах итлесчĕ,
Сывламасăр, санашкал,
Савăнса вĕçне çитесчĕ,
Сĕтĕресчĕ çунашка.

Халь ак эпĕ, итлесен те,
Манас çук салтак хĕçне.
Вăрçă юмах мар иккен те,—
Ман пĕлесчĕ ун вĕçне.

Анчах эп пĕлеп, пĕлетĕп:
Халапла кирек мĕнле,
Эс пур чух вăрçă вĕçне те
Чĕррĕнех эп çитмелле.

1942

### АННЕНЕ

Каçсерен сывлатăн ассăн,
Асăнман çĕр çук.
Таврăнмассăн, таврăнмассăн
Туйăнать хăш чух...

Сан таса сĕтне эп манмăп
Нихăçан, анне,
Мĕншĕн йăпшăнмăттăм мамăк
Çунату айне?

Анчах халь пурне те мар-и —
Ывăла, хĕре —
Куçран пăхрĕ, ыталарĕ
Пĕр анне пире.

Вăл — асаплă та суранлă,
Çапах ĕмĕр сыв
Эпир иксĕмĕр çуралнă
Сарлака çĕршыв.

Çав аннешĕн кĕрешмешкĕн,
Пăшал, туппа
Чуптуса, эпир пиншерĕн
Турăмăр тупа.

Çав аннешĕн ăнсăртран
Пуçăма хурсан,
Чăн, вара тек таврăнай
Айăп ан тусам.

Ачаран эс вĕрентеттĕн,
Лайăх астăвап:
Амăшне хисеплесессĕн —
Ĕмĕрлĕх сăвап.

Хĕрлĕ пурçăн ялав айĕн
Чĕркуçленнĕ чух
Туйрăм эп: çĕршывсăр халь-мĕн
Пур аннем те — çук.

Чап, хисеп кирек хăçан та
Çав çĕршыв ятне:
Çав ятран ман ят та, сан та,
Асăмри анне!

1942. Сталинград фрончĕ

* * *

Август касĕ çăлтăрлă та тĕттĕм.
Тĕлĕретчĕ пирĕн пуç хула.
Эп сана «йăпатмăш йăмăк» теттĕм,
Эс мана — «пичче», теме пула?

Астăватăп, çын çине пăхмасăр,
Аякка тинкернĕ сан куçна.
Астăватăп сисĕмлĕ те ансăр,
Çавралса çитмен хул-çурăмна.

Астăватăп ырă ылтăн кĕрĕн
Нарланса çиçен парка çӳçне.
Çĕнĕрен çав август çилĕ вĕрнĕн
Чĕремпе эп тутлăн çӳçенеп.

Анчах темшĕн хурлă, темшĕн хурлă
Шухăшпа сана эп асăнап.
Шав-кĕр урлă, вăрçă хирĕ урлă
Ман илтесчĕ санăн сассуна.

1942

## ÇĂЛТĂР

Ман чатăрăн шăтăкĕнчен
Пăхать пĕр çăлтăр каçсерен.

Шанас килет: ман çăлтăр вăл,
Манран инçе ан юлтăр вăл.

Ăçта пулсан та эп — часах
Мана вăл туптăр шыраса.

Вакун чӳречинчен пăхса,
Мана вăл ятăр ăсатса.

Палаткăра е окопра
Манпа вăл пултăрччĕ вара.

Разведкăна е хурала
Манпа вăл тухтăр каçпала.

Эп аманса ӳкес пулсан,
Мана вăл пăхтăрччĕ куçран.

Тăраймаслах хурсан пуçа,
Çав çăлтăр хуптăр ман куçа.

Куçа вăл хуптăр та манне,
Каллех хăпартăр тӳпене.

Пĕрне-пĕри тек туламан
Çынсемшĕн ялкăштăр ялан!

1942

* * *

Таçта — пин çухрăмра — ман сассăм
    Кулать, йĕрет-и, тен.
Çапах та, эс асăнмасассăн,
    Эп çав тери пĕччен!

Калаттăн эс: «Хĕрӳ ман евĕр,
    Ан юлтăр тăлăха.
Юрат ăна. Аттесĕр йывăр», —
    Тееттĕн. Кăлăхах!

Ăна эп манăп-и, ăна-и?
    Ун ячĕ сăвă пек.
Анчах мĕн-ма унпа сана эп
    Аса илетĕп тек?

Эй, ман тăранайми, ман антăх
    Юратăвăн чĕри!
Капла тапманччĕ вăл нихçан та,
    Çунманччĕ ку тери.

1942

## ТĔЛĔК

Лермонтова астуса

Çеçенхирте, хура çĕр ӳплере,
Эп, аманса минренĕскер, çĕр каçнă.
Çĕрĕпелех ӳленĕ-мĕн етре,
Эп çĕрĕпех тĕлĕкĕмре аташнă.

Эп курнă аслă шыв. Тӳлек хула.
Шур çурт тавра ем-ешĕл çуран каçĕ.
Ман тантăш-тусăмсем, кула-кула,
Кĕрекере ĕçсе-çисе лараççĕ.

Хитре хĕрсем, ачаллă арăмсем
Мана хаяр сунмасăр асăнаççĕ;
Курки кĕрекене çаврăннăçем
Ман ятăмпа сăра ăсса йăтаççĕ.

Шӳтлеççĕ шӳт. Тута вĕççĕн. Çемçен.
Сăмах вылять чуна кӳрентермесĕр.
Юрлаççĕ юрă. Нихăçан илтмен
Илемлĕ кĕвĕ тăсăлать тӳлек çĕр.

Анчах пĕри... пĕри çав ушкăна
Таçтан ютран килсе çакланнă евĕр.
Ун шухăшне чухлатăп эп кăна,
Мана та вăл чухлать тăванĕпе пĕр.

Салху ларать хӗр. Шухӑша кайса,
Ҫын сӑмахне те тӗлсӗр тавӑрать вӑл.
Тав куркине те, хурлӑхлӑн кулса,
Йӑлашӑн ҫеҫ кӑшт астивсе парать вӑл.

Ун шухӑшӗ ҫӳрет инҫе-инҫе...
Тулли курка ҫине пӑхать те акӑ —
Курать вӑл: ҫеҫенхирӗн варринче
Суранланса выртать чӑваш салтакӗ.

Салтакӑн куҫӗсем ҫак хӗвеле,
Ҫак пӗлӗте тек нихӑҫан та курмӗҫ.
Тӑри ун ҫийӗн юрӑ кӗвӗлет:
Пӗр вилӗмпе пин ҫыншӑн килчӗ пурнӑҫ...

Ҫапла хӗр сӗмленет. Ҫапах та: «Ма,
Ма эп унпа юнашар мар-ши?» —тет хӗр.

Ҫӗршывӑмӑр! Сана пурӑнтарма
Юратӑва та парнене кӳретпӗр.

1942

* * *

Иртеççĕ шурă пĕлĕтсем,
Чăваш пĕлĕчĕсем иртеççĕ;
Хĕвеланăçнелле вĕсем
Пĕрне-пĕри тĕртеççĕ.

Çав шурă пĕлĕтсемпеле
Шăвать чăваш шăпи, элчелĕ.
Вăл сӳнмĕ, чарăнмĕ, пĕлеп:
Анан хĕвел илемлĕ!

Шур пĕлĕтсен хĕррисене
Ылтăнласа, хĕвел пытанчĕ,
Ыран татах килессине
Астутарса хăварчĕ.

Иртеççĕ шурă пĕлĕтсем,
Тӳлек шывра мĕлкĕшленеççĕ.
Шупашкара пуçне пĕксе,
Пĕр сассăр хĕвĕшеççĕ.

Хĕвел пытанчĕ Атăла,
Атăлтанах ирпе хăпарĕ.

Чăваш шăпи Атăлпала
Тахçан тăванлă мар-и?

Анчах та шурă пĕлĕтсем
Паян унран писсе иртеççĕ:
Хĕвеланăçнелле вĕсем
Пĕрне-пĕри тĕртеççĕ...

1942

* * *

Çумăр, çумăр, çумăр...
Шав лӳшкентерет!
Ырă-сывă юлăр,
Çитрĕ ман черет.

Тулса çитнĕ Атăл,
Мансăр ан чаках.
Ĕмĕтĕм! Ан татăл:
Кайрăм салтака.

Йăлăмра халь çеçпĕл —
Малтанхи çеçке.
Тус—Ивник — вилес пек,
Кунĕсем кĕске.

Вĕри чуншăн сыхă
Пулма хĕн, пĕлеп.
Ивнике пĕр çыхă
Çеçпĕл леçрĕм эп.

«Çуркуннем ман çитрĕ»,—
Терĕ сăвăçă.

Сасси витĕр витрĕ,
Сывлăш тăвăнчĕ...

Çумăр, çумăр, çумăр —
Хирнĕçем хирет...
Ятласа ан юлăр,
Тăвансем, пире!

1942

## ÇУЛ ÇИНЧЕ

Ах, Тайпи, хура куçлă Тайпи,
Ман çул-йышăм, Канаш панчисем!
Уйрăлать, уйрăлать çул юппи.
Сывă пул, чипер юл-ха эппин,
Асилсем хушăран, асилсем...

Кӳр ĕçчен аллуна, чăмăртам,
Ассăн ан сывласам. Пăх куçран.
Эсĕ патăн мана çăмарта,
Ун пĕлтерĕшĕ халь хамăрта,—
Çынсене калас мар-ха... Кайран...

Эпĕ таврăнăп-ха вăрçăран.
Мĕн телейччĕ, çитсессĕн çаплах!
Пĕлме çук: тен, ун чух сăвăçран
Эпĕ атăçă пулăп... Ан ман:
Пушмакна урăха ан саплат.

Сывă пул, йăмăкăм, сывă пул!
Пĕртăван мар-ши эс Нарспипе?
Чĕре пулмĕ никамăн та чул,
Эс çапах та мана алă сул
Лăпкăнах. Йăл кулса. Хальхи пек...

1942

* * *

Ак çаплах — сывпуллашмасăр,
Пиллеймесĕр хĕрĕме —
Çухататăп пулĕ, ахăр,
Эпĕ хам ĕмĕрĕме.

Ак çаплах — ĕлкĕреймесĕр
Вĕçлемешкĕн ĕмĕте —
Тӳнсе юлăп... Манăр эсĕр,
Тăпран пулмĕ тĕлĕ те...

Эп шеллеп хама. Каçарăр:
Чăваша шеллеп хамра.
Хăçан та пулин ăнланăр,
Тавтапуç сире вара.

1942

* * *

Салтак фляги пуш-пушах,
Ĕçес килсе ăш çунать.
Пĕлсен, пĕлет шухăша
Çӳрен çăрха — çилçунат.

Эп кун кунлап, çĕр çĕрлеп
Йĕнер çинче унпала.
Тĕнче вăрçи кĕр-кĕрлет,
Куç йăмăхать юнпала.

Çил ман çăрхан çилхине
Пĕр пĕтĕрет, пĕр сӳтет.
Ман чун вĕçет инçене,
Унта пике хĕр кĕтет.

Çап-çавракан куркине
Вăл куç пекех тултарать;
Вĕре-вĕре кăпăкне,
Вăл асăнать, тутанать.

Сасартăках куçĕнче
Синкер мĕлки сăнланать:
Савни маттур ут çинчен
Йăваннăнах туйăнать.

Хӗр, вӑрӑммӑн сывласа,
Лартать тулли куркине.
«Тавсси!» —тес-мӗн, сӑйласа,
Пӗлмест ман ӑш ҫуннине.

Пӗлмест мӗнпе юрасса
Пин ҫухрӑмри савнине;
Пӗлмест — кӗтсе, юратса,
Мана хӑех ҫӑлнине.

1943

## ВĂРÇĂ ХИРĔПЕ

Хĕвеланăç Бугĕ
Сарлаках та мар.
Пĕр чăмса та тухĕ
Леш енне хастар.

Тухĕ те силленĕ,
Çаврăнĕ вăр-вар,
Хĕвелпе хĕмленĕ
Сывă ӳт йăр-яр.

Хăмăр пилĕк-çурăм
Тӳсĕмлĕ, патвар...
Анчах урăх юррăм:
Самани вăл мар.

Пуç кăларнă тулă,
Тулăра тулли
Вăрттăн хурçă вулă,
Тупăсен вулли.

Украина хирĕн
Шалĕ-тулĕпе
Утма тиврĕ пирĕн
Вăрçă çулĕпе.

Ешĕл тулă витĕр,
Хăмăл хушшипе —
Мăкăнь, мăкăнь — чиксĕр,
Пĕтĕм уйĕпе.

Те акса хăварнă,
Те шăтать хăех?
Тулă пуç кăларнă,
Мăкăнь хĕп-хĕрлех.

Лăпкă чух илемлĕн
Курăнать уй-хир.
Вăрçăри этемĕн
Пур хăйне хуйхи.

Илемрен писетпĕр:
Мăкăнь та — хире
Юн пĕрхĕннĕ евĕр
Туйăнать пире...

1944

* * *

Çĕр-йышăмсем! Мĕн-ма пурне те ыррăн
Курас килет-ши манăн çак самант?
Тăван уй-хир, вăрман, шыв-шурăм, çырăм,
Мĕлкĕшленсе чуна эс ан амант.
Ман юнăм юхрĕ Висла шывпала,
Ан хутăштăр вăл тăрă Атăла.

Эхер те эп сире кураймасассăн,
Çĕршывăмçăм, туссем, тăван-пĕтен,
Ман тунсăхлă, ман пăшăрханăç сассăм
Çитейтĕр-и кĕрхи çилсемпелен.
Пĕр шухăша упратăрччĕ инçет:
Рехмет сире, пуриншĕн те рехмет!

1944. Польша. Красник

## ÇĔНТЕРӲ ЮРРИ

1

Çĕнтерӳ юрри пуçлатăп.

2

Тултарсамăр куркăра,
Кăпăклантăр пыл сăра!

3

Иртĕр, ларăр тĕпеле,
Итлĕр чун-чĕрепеле.
Кăна пурте пĕлмелле.

Камăн ĕмĕт малалла —
Çавăн уççăн манпала
Ярăнса юрламалла.

4

Эп пăхатăп Сталинградăн
Медальне асăрхарах.
Паян кун вăл бриллиантăн
Çутатать ман кăкăра.

Симĕс хăйăвĕ ун маншăн
Изумрудăн курăнать.
Тинкерсе ăна пăхсассăн,
Дон хумханнăн туйăнать.

Хӗрлӗ йӗрӗ — чӑн рубинӑн,
Ҫук унтан таси, ҫутти;
Ҫав йӗрпе ҫӗнтерӳ пынӑ
Атӑлтан Рейна ҫити.

5

Ах, вӗриччӗ-ҫке ҫав август!
Ӗннӗ курӑк. Шывсӑр кавӑс.
Эшелон силлет пире:
Лӑстӑр-лӑстӑр... Сӑвӑр, авӑс.
Сапала ҫеҫенхире!

Хӗвелҫаврӑнӑш чечекӗ
Ҫаврӑнать хӗвеле май.
Станци. Кӑркӑс-и, узбек-и —
Кӗсйинчен кӑларчӗ пекӗ,
Тытӑнать вӑл хырӑнма.

«Сывлӑш!» — тет Хусан тутарӗ
Юриех. Леш хускалмарӗ,
Таварать ҫапла кӑна:
«Насредтин хуҫа каларӑш,
Эп мулла-им? Мӗн мана!»

Шӳтлӗн-тертлӗн марш пуҫланчӗ.
Кӗреҫе аври хистет.
Хӗтӗртет пӗр чӑрсӑр шанчӑк:
Нимӗҫе эпир курманччӗ,
Ну... курман-ха нимӗҫ те!

6

Утмӑл ҫухрӑм утнӑ хыҫҫӑн —
Хуп-хура та йӗп-йӗпе.
Паллашатпӑр вӑрҫӑн выҫкӑн
Чалӑш шӑл-ҫӑварӗпе.

Саманта сывланă чух
Çăвăнма та вăхăт çук.

Вăтăршарăн, хĕрĕхшерĕн
Çĕкленеççĕ çăхансем.
Кунĕн-çĕрĕн, кунĕн-çĕрĕн...
Кар-карлаççĕ çăткăнсем.
Эх, мăнтарăн кĕреçе!
Ма эс ансăр тетпĕр çеç.

Анчах çĕрĕ чул пек хытă.
Чĕрнесем юнланиччен
Çатăртаттарса эс тыт та
Вырт çунан ана çинче!
Эс çуран, эс — хир патши,
Е юта пустарăн-ши?!

Качăр-качăр танк хĕресĕ
Чуна çĕççĕн хайăрать...
Эс çуран. Хуçа халь эсĕ.
Çук тăма, çак хăйăра...
Ур, тулаш эс, вил, анчах
Каялла пĕр шит ан чак!

Пулчĕ: вилчĕç те — чакмарĕç.
Аслă çĕрĕмĕр-анне!
Нихăçан манмалла мар эс
Сталинградăн салтакне.
Манмăн, манмăн: çавăнтан
Çĕнĕ чап пуçланчĕ сан.

7

Эпĕ — калăпсăр машинăн
Пĕчĕкçеççĕ пĕр винтти.
Мĕльюншар ман пек вĕтти.
Анчах чунĕ — пысăк çыннăн,

Мăн чунех .çав вĕтĕсен;
Вăл калать, итле пĕлсен:
Эп — этем! Ак манăн чинăм.

Кĕвĕçместĕп эпĕ: пултăр
Генерал та, маршал та.
Анчах манăн пур шалта
Хамăн тивĕç, эпĕ шутсăр
Мухтанатăп унпалан:
Хут çине нимрен малтан
Ман ята çыраççĕ, вулăр.

«Салтаксем-юлташăмсем!» — тет
Пур приказ та малтанах.
Ăнланас пулать ăна!
Çавăнпа... мĕскер тес ĕнтĕ? —
Хамăн хĕсĕк окопра
Эп генералах вара,
Ăна пинĕн итлесен те.

Ман окоп сыхлать ыр-сыввăн
Генералăн блиндажне,
Генерал — хăй маршалне,
Маршал, калăпăр, çĕршывăн
Чĕрĕкне те — Мускава.
Ну, Мускав мĕнне хăвах
Эс чухлан... Асту, ан çывăр!

Мускавра, хăть бомбăлатăр
Çĕр çурса ăна тăшман,
Куç хупмасть Тĕпком ялан:
Вăл курать сан окопна та,
Калаçать ачупала,
Чăннипе, ăна пула
Эс çын евĕр пурăнатăн.

Ак ăçта эс çывăхартăн,
«Пĕчĕк винт», ерипеле.
Чим-ха, эс пыра-киле
Кремльте черкке хăпартăн...
Халлĕхе тĕнче шăпи —
Сталинград чĕри таппи
Хускатать сана хаяррăн.

8

«...Çапăçса ыран вилсен,
Коммунист тесе хисеплĕр...»
Ак çапла салтак кĕскен
Тăрмалать кĕрхи сивлек çĕр.
Ак çаплах эп те иккен
Çыртăм, нимĕн тĕлĕнмесĕр,
Эп — чĕлхе лаççи, анчах
Тупаймарăм тек сăмах.

Шурăмпуçĕ кăвакарчĕ...
Кăвак мар çав, хĕп-хĕрлех!
Камăн мĕн — асра ват карчăк
Аннемех пĕкĕрĕлет:
Яланах вăл вăранатчĕ
Шурăмпуçĕне пĕрле.
Миçе çаврăнчĕ-ши кĕçĕр
Çĕрĕпе вăл, тĕлĕрмесĕр?

Карласа ларать мăян,
Хытхура та йӳç шурарăм.
Вăл та час минăпалан
Кукшаланĕ лакăм-лакăм.
Чĕрĕ, сывă-ха паян,
Кунăма тин çеç пуçларăм...
Хĕвел тухрĕ ерипе,
Вăл та тупă етри пек.

Ик тěнче. Ик çул. Ик шухăш,
Икçěр утăм хушшăмăр.
Чăмăртанчě чун. Юн шухă.
Мăян айěн шурăмăр,
Вилěмӳ патне эс шу-ха!
Те минут, те çур ěмěр...
Вăхăт çитрě. Кěç гранатăн
Шартлатса çěр çурăлсассăн...

Ку таран эп çак çěре
Кайăк юнě те тăкманччě.
...Пěтрě пěр чун тěнчере,
Ěçěсемшěн вăл хупланчě:
Аллине тàсса пěрре
Кěрт çине этем йăванчě.
Тем ыйтас пек — кусěнче
Çиçрě хěм юлашкинчен...

Чунăм час лăпланаймарě:
Шав куратгăм çав çынна...
Анчах чи малтан хăй мар-и
Вăл хăмсарнăччě мана?
Ěмěрхи саккун каларě:
Хěçе хирěç — хěç кăна!
Тайма пуçăн вăл килес-мěн...
Вырăнпах выртса вилес-мěн...

Кам пěлет: тен, çав кунне
Пуçласа эп пӳлтěм пулě
Антăхан тăшман çулне.
Çав траншейăри юн кӳлě,
Çав йӳç эрěм — ěмěрне,
Тен, вăл чикě пулса юлě:
«Ырăпа усал чикки»,—
Тейě пурнăç кěнеки.

9

Çĕнтерӳ юрри юрлатăп.
Тултарсамăр куркăра та
Тăкăр кăшт тутаниччен:
Таврăнманнине пуç тайăр,
Тăприсем çăмăл пулайтăр
Çĕре кĕнĕ паттăрсен!
Вăрçă пулчĕ урăм-сурăм,
Кам пĕлет: тен, эпĕ юлтăм
Ротăран та пĕр-пĕччен...

Вĕлтĕр-вĕлтĕр-вĕлтĕр юр...
Çуна çук та — йĕлтĕр пур,
Йĕлтĕр пур та, йĕрĕ çук-ха.
Çил хаяр улать ялан,
Сылтăмран, сулахайран.
Тыттарать вăл вăрттăн çупкă.
Кăчăр пулчĕ Дон хĕрри,
Леш енче тăшман çарри,
Мĕн шутлать вăл? Пĕл-ха, чуп-ха!

Лăпкă Дон лăпках та марччĕ:
Кĕперне, асту, ан сарччĕ —
Бомбăлаççĕ сарсанах.
Кимĕпе, асту, ан курăн,
Вăйкăнатăн чикĕм-пуçăн:
«Фердинанд» куçлать сана.
Вĕрен ан тăс эс шыв урлă:
Ку шывра шултра, тет, пулă,
Тунсăхлать вăл тахçанах...

Сармаллах-çке кĕперне!
Пĕрне ватĕç, тепĕрне...
Тен, пĕр çиччĕмĕш çĕкленĕ.
Тытмаллах-çке кимхӳри!

Пĕри путĕ, ну — тепри...
Теприне, тен, Дон хĕрхенĕ.
Тăсмаллах-çке вĕренне!
Вуннăш... çирĕммĕш... пĕрне,
Тен, сăнаймĕ шыв леш енĕ.

Малтанхи юр кăпăш, лайăх,
Вăтăр çын — пĕр вунă халăх,
Вунă халăх — вун чĕлхе.
Ĕнтĕркет туркмен пăртакçă,
Çĕпĕрсем кăшт тăрăхлаççĕ:
«Ку хĕлле-и?! Эх-хе-хе!..
Чимĕр-халĕ — шăрăх пулĕ!..»
Шуса антăмăр каçкӳлĕм
Шыв хĕрнех, пĕр вĕтлĕхе.

Ак, атьсемĕр, пулчĕ каç!
Пĕр хушуччĕ: вил те каç!
Юхрĕ кимĕ, юхрĕ сулă:
Пĕрене, хăма та шпал
(Ан йĕпентĕр çеç пăшал),
Плащ-палатка, çатан-хулă...
Лăпкă Дон, сыхла çарна,—
Каçарсам леш çырана,
Кур — епле эпир хăюллă!

Чи шултра хума вататпăр,
Кĕç — ракета, кĕç тата пĕр...
Ылхантармăш асамат!
Аça çапрĕ, çурĕ çумăр...
Лăпкă Дон, ан ур, ан çухăр,
Чĕрене эс ан хăрат...
Чĕрере çав каç, пĕлетĕп,
Вуннă мар — çĕр чĕлхепе те
Пĕр сăмахчĕ: С т а л и н г р а д.

Çавăнта ман тапмалла
Пур чĕлхеллĕ çарпала,
Çав ятпа çĕкленчĕ халăх.
Çавăнта ман çитмелле
Асаппа та тертпеле,
Сарлака, юлташ, каçалăк!
Авалхи тус Атăла —
Дон халь алă памалла
Ĕмĕр-ĕмĕр асăнмалăх.

10

Юрлă, çумăрлă та çиллĕ,
Куç уçма çук сăлпăран.
Каçпала шăнтать те вирлĕ —
Витĕрех эс пăрланан.
Пĕр хĕлхем çунать пăр айĕн,
Унпа çеç чăтать ĕнсе:
Шăл çыртса, упаленсе,
Çиле хирĕç, çиле майăн
Тăшмансем патне йăлмак
Сĕтĕретĕн эс, салтак!

Виççĕр пинĕн йăлмакланчĕç,
Лекрĕç пирĕн мăйкăçа.
Хăтăлма вĕсем хăтланчĕç —
Мăйкăç пăврĕ хĕл каçах...
Мина айĕн, тупă хыççăн,
Хăш чухне туртса çуран,
Çĕмрĕлсе юлсан хуран —
Чĕр кĕрпе çисе е выççăн,
Кун-çĕрне манса йăлтах,
Тăрмашатăн эс, салтак!

II

Манас ҫук кӑра январӗн
Ҫилсӗр вуннӑмӗш ирне.
Тинкерсе темскер тӑнларӗ
Икӗ лагерь пӗр-пӗрне.
Шӑпчӗ пӗтӗм ҫутҫанталӑк,
Вӑл та тем тӑнланӑ пек.
Анчах иртрӗ майӗпе
Ультиматум панӑ талӑк.
Вӑрӑм талӑк пулчӗ-ҫке!
Нимӗҫе — питрех кӗске...

Парӑнмасть, тет, нимӗҫ имӗш.
«Юрӗ!» — терӗҫ салтаксем.
«Ху ҫине тиентӗр, нимӗҫ,
Ҫылӑху-сӑвапусем!..»
Пӗлӗте ҫурса, хӗвел кӗҫ
Печӗ анӑҫ еннелле.
Хӗвелпе пӗр мехелех
Тупӑсем ҫӗре кисретрӗҫ.
Пулчӗ ахӑр самана
Асӑнмалӑх тӑшмана!

* * *

Юрлӑп, терӗм, юррине те,
Калӑп, терӗм, халапне.
Юрлаймарӑм ҫуррине те,
Калаймарӑм чӗрӗкне.
Камшӑн хаклӑ манӑн тертӗм?
Пулнӑ-иртнӗ тахҫанах.
Каппаймастӑп эп, анчах —
Рядовой пулса сӳнтертӗм
Сталинградӑн ҫулӑмне.
Мӗн хушас-ха кун ҫумне?

Салтака мĕн? Кăмăл тултăр:
Вăрçă парад мар, бал мар.
Хĕллене кăçатă пултăр,
Çуллана — пăртак юр-вар.
Çуркунне чечек çурсассăн,
Формировкăра-мĕнте
Чĕрене темскер ĕнтет...
Ешеркке сада тухсассăн,
Ăшă куç тĕлне лексен —
Аван мар пек, именен...

Мĕн тăвайăн, мĕн калайăн
Килсĕр-йышсăр çынсене?
Тав тăватăп эп çав майăн
Дон хĕрарăмĕсене.
Тав тăватăп ăшăтнишĕн,
Типĕтнишĕн тăлана,
Пылшăн, çушăн... Яланах
Тав тăватăп чи хаклишĕн:
Кăмăла çĕклентерен
Юратушăн — чĕререн!

Юрату! Çав ялкăшатчĕ
Аслă çĕрĕн чĕринче:
Вăрттăн ĕмĕтлĕн пăхатчĕ
Хĕрача пек пĕринче,
Тепринче — кĕтсе илетчĕ
Тин çураçнă сар хĕрле
Е салтак арăмĕлле,
Е ват карчăк пек пиллетчĕ,
Е кулса йăсла-йăсла
Тĕл пулатчĕ ачалла...

Çĕнтерӳ юрри вĕçлетĕп.
Тултарсамăр куркăра.
Эп паян пĕрне çĕклетĕп:
Юратушăн пултăрах!

Юрату иртетчĕ мар-и
Штык çинчи çеçкепеле?
Шăнăçусăр чĕр çилле
Хĕртрĕ мар-и ун кăварĕ?
Пĕр тупа туса вăл шав
Чуптумарĕ-и ялав?

Юрату çĕнтерчĕ мар-и?
Унăн çутă куçĕнчен
Хура мур, этем хаярĕ
Пăхаймарĕ нумайччен.
Юрату вăл — ĕмĕр сывă,
Вилĕме çĕнен телей,
Вăл сăваплă Мавзолей,
Парăнми Тăван çĕршыв вăл.
Уншăн эп курка çĕклем,
Уншăн юррăмçăм, чĕрем!

1945

## ÇУЛЛАХИ КАÇ

*В. К.*

Шур пĕлĕтсем шăваççĕ анăça —
Пĕри пулать лаша, тепри тĕве...
Кун иртрĕ. Тăрса юлчĕ манăça
Никамшăн палăрми пур вак-тĕвек.

Ялйышăмсем ĕçлерĕç уй-хирте,
Анне тăрмашрĕ кил ăшчиккипе:
Эп килнĕ хăнана, вăл хĕпĕртет
Чун патĕнчи пĕр ĕмĕт çитнĕ пек.

Çеремлĕ картишне ларать сĕтел,
Сĕтел çине сар кăкшăм вырнаçать.
Хӳме çурăкĕнчен каçхи хĕвел
Кĕрекене сентел тĕспе сăрлать.

Эпир сăра ĕçетпĕр тав туса,
Эп кил-çурта сунатăп перекет.
Анчах ман урăххи килет аса,
Куç умĕнче йăлт урăх кĕреке...

Анне сисет. Вара эп сан çинчен
Ирĕксĕрех кала пуçлап ăна.
Ĕçетĕп те — куркамăн тĕпĕнче
Куратăп санăн тунсăхла сăнна.

Эс — ман хăймаланса йӳçен сăра,
Эс — ман тулли куркам, ман вăй кӳрен!
Санран килет телейӗм пурнăçра,
Чӗрем сана чăнне калать, ӗнен...

Пӳртçи тӗлнех ак хыпрӗ Çич çăлтăр —
Ӗçсе ӳпӗнтерейнӗ алтăр пек.
Ан тив, çаплах кунçул та çутăлтăр,
Хур кайăк Çулӗ пек ялтратăр тек.

Шав тăсăлать-ха пирӗн калаçу:
Тӳлек, уяр! Ăçтан халех выртан?
Умра икерчӗ, тăвараллă çу,
Умра мухтавлă, ӗмӗрхи шăрттан.

Вăл, ахăр, астăвать Аттиллăна,
Ăна тутаннă Чингисхан, Тимур;
Хаяр Иван юратнă, тет, ăна...
Шăрттан! Ун хăйӗн кунӗ-çулӗ пур.

Сып-сывă та сӗтеклӗ хальччenex,
Сыв пултăр малашне те вăл, эппин!
Çӗршер çул витӗр çитнӗ кучченеç,
Кӗрекерен вăл тухмӗ паян тин...

Вăрах пырать-ха пирӗн калаçу.
Таçта пытанчӗ уйăх ывăси.
Эпир иксӗмӗрех, никам та çук:
Анне те эпӗ — каскăн йăх асси.

Ак Алтăр çăлтăр та çавăрăнать,
Атăлалла тăсать хăй аврине.
Тытсам эс, тусăм, тытса чар ăна,
Астив савса сӗнен тав куркине.

Мĕнпе эс йăпанатăн-ши çак каç?
Санран хыпар та çук, чиперĕмçĕм!
Кунти лĕп çил вĕçсе çитсен кас-кас,
Мана эс асăнса илмерĕн-шим?

Епле пулсассăн та, паян сана
Пуриншĕн те чунтан эп тав тăвап.
Никам та мар — пĕр эс, пĕр эс кăна
Мана тытса çыртартăн çак сăвва.

1946

## АВТАНРАН АВТАНЧЧЕН

1

Кил-çурт илемĕ — сар автан
Виç тапхăр хыттăн авăтсан,
Тăратăп ăшă ыйхăран,
Пăхатăп тĕксĕм кантăкран.

Кĕреннĕн-саррăн хыпăнать
Ир шуçăмĕ пăртак тăрсан.
Ӳсет, ӳсет, йăмăхланать;
Унтан таçтан, Анаткасран,

Пасарнă йывăç леш енчен,
Кусса тухать хĕвел çатми.
Шăнса пăрланнă кĕленче
Ылттăнланать ытарайми.

Тем евĕр йывăçсем çинче
Нихçан курман-илтмен чечек
Эрешленет куç умĕнче
Таçти асамлă тĕнче пек.

Час, тулăн-шалăн çӳрӳпе,
Пӳрт сивĕнет. Тухатăп эп.
Поэт хушса хăварнă пек —
Юман вутти çурса кĕреп.

Туратлă, шăн вутсыппине
Çапсассăн — пуртă ыткăнать.
Çапан, çапан çине-çине,
Хĕрсе çитен те — тыт кăна!

Çырма ларсан çапла малтан:
Перо шумасть, сăмах витмест.
Чуна çĕн ĕмĕт çутатсан —
Тытса кăна пыратăн эс.

Турпас сикет йĕри-тавра,
Çуркамĕ — сăвă йĕрки пек...
Юман вутти кăмакара,
Сăвви — сĕтел çинче типет.

Тĕпел кукри таврашĕнче
Анне пĕрмай пĕшкĕнкелет.
Куймак чашларĕ (икерче
Çапла калаççĕ пирĕнле).

Унтан сĕтел çине ларать
Çутатнă сарă сăмавар.
Кунта эпир тутарларах —
Чее ĕçетпĕр шĕвĕ мар.

Вара, умри хыр туратне
Тĕллетĕп те эп куçпала,
Перо тытап вĕри алла...
Уçатăп сăвă тетрадьне.

2

Кашлать хыр йывăç... Юр купи
Казбек тӳпи пек туйăнать.
Ун урлă телефон юпи,
Йăмраллă Ĕнчĕ курăнать.

Унта, юрпа пăр айĕнче,
Эп ачаран таптанă йĕр.
Тем анлăш тинĕс те Енче
Тăраймĕ-тĕр, тăраймĕ-тĕр.

Унта çӳренĕ ман шăпа
Чĕркуç таран йĕм таварса,
Сапланă пушăт алапа
Вăл пулă сĕрнĕ тăрăшса.

Ик-виçĕ кăртăш е мулюк
Курсассăн çĕтĕк алара —
Унран паха телей те çук,
Лаша та кирлĕ мар вара.

Унта çу кунĕнче çичшер
Шыва эп кĕнĕ çулсерен.
Çӳç типнĕ-типменех ишсе,
Чăмса алхаснă тĕрлĕрен.

Тăвата тинĕс таварне
Ӳтпе астивнĕ хыççăн тин,
Çырмам мĕнле илемлине
Туятăп эп паян туллин.

Йăмри те çавă, шывĕ те
Ĕмĕртенхи тăван илем.
Эпир хурсем кĕтнĕ тĕлте
Çĕкленнĕ ферма витисем.

Кaç-каç унта вар хĕррипе
Пырать, тет, кашкăр-кашаман.
Путек-çатак макăрнипе
Шăлне хăйрать çав çĕрçăтман.

Анчах йĕри-тавра хӳме.
Йытти вĕрме чарăнсанах
Сиксе тăрать те — итлеме
Тухать хуралçă хăвăртрах.

Пăшал кĕрĕслетсе каять.
Тукмак хӳре хăтăлайсан —
Шăши кăварĕ пек çунать
Ун выçă куçĕ аякран...

Унта сысни нăриклетет,
Ĕни, пăрушĕ сас парать.
Çĕршывшăн мул та перекет
Колхоз ĕçченĕ пуçтарать.

Унтах, çав Ĕнчĕ хĕрринче,
Арча пек чыслă мăн çуртра,
Эртеллĕ ĕçĕн штабĕнче
Эп пултăм çакă вăхăтра.

Пăхатăп пĕр стени çине —
Куратăп Иванов сăнне,
Пăхатăп эпĕ теприне —
Тукай тухать ак куç умне.

Пĕр тантăш чаплă поэтсем
Хальхи ял пуçĕсемпеле,
Авалхине çĕре чиксе,
Канаш тăваççĕ-мĕн пĕрле.

3

Кашлать-ха хыр. Эп çыркаларăм.
Харам пулман автан сасси.
Ĕç — ман телейĕм. Манăн парăм —
Ялан чăнне кăтартасси.

Ӑнни йӑлтах уявлӑ мар-ха:
Пайтах пӳрт ҫийӗ улӑмран,
Тӑхӑнаймастпӑр пурте бархат,
Шӗшле те музее паман.

Анчах ҫав ҫинчӗк улӑм витӗр
Йӑлт урӑх пурӑнӑҫ тапать.
Урамӗсен ятне ҫеҫ илӗр —
Унта та вӗр-ҫӗнӗ шӑпа.

Ак пирӗн кас. Темле салхуллӑн
Янратчӗ: «Хыҫалти урам».
Халь, ун патне ҫывӑхаруҫӑн,
Эс Пушкинӑн ятне куран.

Ҫаплах: пӗрремӗш ҫӗнӗ пӳртӗн
Кӗтессине, хӑма ҫапсах,
Поэт ятне ҫырса сӑн кӳртнӗ
Таҫти ял хӗрринчи касса.

Пыран-пыратӑн та куратӑн:
Е телефон юпи ларать,
Е радио кашти — Мускавӑн
Хумне тытасшӑн кармашать...

Ҫӑпатаҫи те урӑхланнӑ:
Шӗшлӗпеле чавалансах
Ларать-ларать те, хӑй хутланӑ
Балкан ҫинчен хушать сӑмах.

«...Ак пирӗн ҫиччӗмӗш ноябрь,
Пур халӑхпа чысланӑ кун.
Пӑлхарӑн — тӑххӑрмӗш сентябрь,
Ҫав кун патши тӗп пулчӗ ун.

Хам пултӑм Софире, хам куртӑм,—
Тет ват салтак кӳршисене.—

Аван çынсем. Вĕсен те туртăм —
Раççей енне, Мускав енне...»

Çапла йăли тухман тум айĕн
Çĕнни ÿссе аталанать,
Ÿссе çитсессĕн вăл — хăй майĕн
Çĕнетĕ пирĕн йăлана.

Мирте Мирун пур тенĕ евĕр,
Ялта Якку пур тенĕ пек,
Çĕн кĕреке те (сискелетпĕр!)
Лекет кивкирĕк тĕлĕпе.

Хăш чух эпир ютла пуплетпĕр,
Асаттесен йăлипеле:
«Ку — хамăн, ку — ман мар»,— теетпĕр,
А пирĕн «хамрăн» темелле.

Хăш чух пĕр шухăш çеç: кун irттĕр.
Ĕçренваскатпăр килелле.
Хăш чух бригадир мар — çур литр
Шута илет ĕçе-хĕле.

Калаççĕ: вăрçă пулчĕ, теççĕ.
Хăш чух килте ларнисемех
Çав анлă кĕççепе витеççĕ
Вăтанăççăр сăмсисене.

Анчах çав вăрçăн чăн салтакĕ
Пит ытлашши сăмахсăрах,
Хăрах куçпа пулин те, акă,
Ял тытăмне тытса тăрать.

Вăлах, пĕр вата çын каларĕш,
«Ялти коммунистсен асли».
Çавсем çинче колхоз маларĕш,
Ун пархатарлă пуласси.

Çавсем, фронта васканă евĕр,
Пусаççĕ анлăн, сарлака,
Çӳлтен хушассине кĕтмесĕр
Юсаççĕ пĕтĕм шăйрăка.

4

Хĕрсе кашлать ват хыр... Хĕреççĕ
Пуçри хускалнă шухăшсем.
Сăввăмсене пырса кĕреççĕ
Тĕрлĕ шăпаллă ялйышсем.

Ав ĕнерхи танкист. Пĕлетĕп:
Яра куна вăл хуп-хура,
Выртать ӳпне те, месерле те —
Сиплет аманнă трактора.

Совет разведчикĕ ав халĕ
Сӳсмен çĕлет, йĕвен йĕслет.
Кăкри çинче Берлин медалĕ
Хуллен кăна чĕтренкелет.

Ав харсăр санитарка пулнă
Чипер пике больницăра.
Вăл гимнастĕркăсăр,— шур тумлă,
Хĕреслĕ тутăрлă сестра.

Çартан килейнĕ хĕр сасартăк
Сасси пурне сисет иккен:
Мускавалла уçасшăн алăк,
Пуплет вăл Барсова çинчен.

Хăй халлĕхе, клубра каç-каçăн
Аккордеон тăсса ярсан,
Янраттарать те кассăн-кассăн,—
Хĕллех чечек те шăпчăк сан!

Унтан вăл тантăшне чĕнет те:
«Подгорный!» — тет купăсçине.
Вара çав кĕвĕпе ĕнтеççĕ
Хăюллă вырăс ташшине.

Вĕсем Европа çĕрне виçнĕ:
Румынин саплăк анисем,
Германин сарă хăйăр витнĕ
Уй-хирĕ, Вена ращисем —

Йăлт юлнă ассенче. Анчах та
Çак пĕчĕк шывлă Сиктĕрмех
Вĕсемшĕн ĕнчĕ те, ахах та,
Ытарайми ĕмĕрлĕхех.

Вĕсем пĕлеççĕ: çакă ялăн
Ирхи кăвак тĕтĕмĕсем
Мĕнпур Тăван çĕршыв сывланăн
Мăкăрланаççĕ çĕклене.

Вĕсем пĕлеççĕ: çак уй-хирĕн
Йăрансăр-йĕрсĕр курнăçĕ —
Татти-сыпписĕр пурнăç пирĕн,
Тăван çĕршывăн пурнăçĕ.

Вĕсем пĕлеççĕ: ватă Улăп
Тĕми çинчи хурал юпа
«Ялан çĕршывăн сыхĕ пулăп!» —
Тесе кунта тăвать тупа.

5

Ак иртнĕ кун та. Хыр кашлать.
Хăçантанпа ăна паллап эп!
Ун айĕн чарăнми юхать
Асаттесен юмах-халапĕ.

Хăш каç унта темле мулсем
Иеленсе çунаççĕ, тетчĕç.
Кĕреçепе вара çынсем
Чи çур çĕр тĕлĕнче йĕрлетчĕç.

Хăш чух çав хыр тавра хĕрсем
Уяв калаççĕ сассăр, тетчĕç.
«Вĕсем — хĕр халлĕн вилнисем»,—
Тесе пире ĕнентеретчĕç...

Кашлать, кашлать хыр тĕрлĕрен...
Эпир вучах чĕртсе яратпăр.
Кăварĕ шăранса çитсен,
Шала паранкă кустаратпăр.

Тăвар сапса, уйран сыпса,
Çиетпĕр «тăлăплă паранкă».
Хăюсăр лампа мăчлатса
Сӳни-сӳнми сывлать аран кăшт.

Анчах улт-çичĕ çухрăмра
Электăр тенĕ çутă пур, тет.
Ăна çак пилĕкçуллăхра
Эпир ялта курасшăн пурте.

Çав ĕмĕт çитнĕн çывăха
«Чĕпкуçĕпех» сăмах йĕрлетĕп.
Урамалла пăха-пăха,
Ыранхине курса ĕçлетĕп.

6

Кашлать ик юплĕ кукăр хыр.
Çил çурçĕртен вĕрет хаяррăн.
Ыран каллех юр хыр та хыр —
Черетлĕ физкультура манăн.

Ак кутсăр-пуçсăр вĕçтерет...
Хăй кăмаки çинче ĕшеннĕн
Анне пăртак ÿсĕркелет,
Мăрье улать такам хĕненĕн.

Аманнă, çĕмрĕлнĕ ура
Вăрçа-харçа асилтересшĕн —
Сурать, пĕр вĕçĕмсĕр сурать,
Ниçта кайса кĕре пĕлместĕн.

Анчах, хăй çутине кура,
Сержант килсе кĕрет каçкÿлĕм,
Хам пек тÿлек, хам пек хура,
Хам пек аманнă çын, ман кÿршĕм.

Вара, вăл çăлтăр йĕрĕллĕ
Мулаххайне хывса хурсассăн,
Пуçлатпăр хамăр евĕрлĕ
Салтак тамашине пăртакçăн.

«Пантера», «Фауст» сăмахсем
Аса илет хастарлă снайпер.
Курман этемсене кичем,
Эпир — асăнсанах чухлатпăр.

Вăл перчеткеллĕ аллине
Мăйран кăкарнине сăнап та —
Манап ура ыратнине:
Ăна, тен, ман пек мар асап-тăр.

Эпир чĕнместпĕр ун çинчен,
Шав малаллах ĕмĕтленетпĕр.
Ĕмĕтленни çитеймесен,
Тепри çитерессе пĕлетпĕр.

7

Хыр шав кашлать. Ман патăма
Кĕрсе ларать хисеплĕ ватă.
Питтăпайран пуçлать сăмах
Манпа çав çын кирек хăçан та.

Тулти çил юррипе пĕрле
Янрать ун ылтăн пек сăмахĕ.
Çак таврари Шелепилле
Ăна куратăп яланах эп.

Мĕн чухлĕ мул çав ватăра!
Мĕнле вăл хаклă та, паха та!
Сăхап, сăхатăп эп вара,
Çĕр çумăр сăхнă пек сăхатăп.

Эпир калаçнă хушăра
Пырса кĕрет пĕр шкул ачи.
Мана хăй тетрадьне парать
Çав саккăрмĕш класс сăвăçи.

Саспах вулатăп сăввине.
Хăюсăрскер, пуçне чикет те,
Çĕлĕкĕпе хуплать питне:
«Кайран чăрманăр-ха, çитет»,— тет.

Вара эпир унпа пĕрле
Ямбне-мĕнне виçсе пăхатпăр.
«Пĕри сӳнсен, тепри кирлех»,—
Тесе пăртак шӳт тукалатпăр.

Çур уçă сас йĕрки çинчен
Пуплетпĕр самаях чиперрĕн...
Çав икĕ ӳсĕм хушшинче
Хама эп туйăнап кĕперрĕн.

Юхан кунçул кисретнĕçем
Ан тив,пĕрре сăвайăм вантăр,
Эсир, каçса ĕлкĕрнисем,
«Сыв пултăр пурăнăç!» янратăр.

Поэмăмсем — сайра юпа,
Сăвви-хăми те пит сайра пек.
Анчах ан манăрччĕ: юнпа
Цементласа ăна сарап эп.

Пĕлетĕп пуринчен малтан:
Кĕперĕм чĕнтĕрлĕ пулмарĕ,
Анчах ун урлă каçакан
Курманнине курма пултарĕ.

Лере, малта, чечен çыран,
Малта вăл чĕнтĕрлĕ-чечеклĕ
Ванми кĕпер: тӳпе таран,
Хĕвел таран сире вăл çĕклĕ.

Эпир хĕне çĕнтернĕрен —
Сав чĕрĕ асамат кĕперĕ —
Çĕр пин эрешлĕ тĕрĕрен
Çеçке те çимĕç çитĕнтерĕ.

Унта та пĕлĕç чăвашла:
Вăл çывăх. Пулăр хатĕр, хапăл.
«Çулçи çупать, улми ташлать»
Тени пулсассăн — çавăнта вăл.

Эп хунă каштасем çине
Хăюллăн пусăр, каçăр урлă.
Вара эп халь юрланине
Çĕклентерсе туйри пек юрлăр.

8

Хыр шав кашлать. Пӳрт-çурт, хуралтă
Хуралчĕ. Вăхăт çыврăма.
Инçе Шупашкара куратăп,
Куратăп çывăх çыннăма.

Хам ăшăмра ăна калатăп
Хальччен тухман сăмахсене.
Ытараймасăр ыталатăп,
Тасалăх, çăмăллăх сĕнеп.

Атя, атя манпа пĕрле теп,
Çӳлтен çӳле, малтан мала.
Эп санăн суранна тӳрлетĕп,
Манне эс сиплĕн хупала.

Хупа кăна! Тумлам илсессĕн,
Эс тинĕс тавăр халăхна.
Тасалтăр, çăвăнтăр тирпейлĕн
Унта вăл, тав туса сана.

Çӳлтен çӳле! Хыпса çунсан та —
Чи çӳллĕ тӳпере сӳнер.
Сан çуттупа тепри хускантăр —
Тата паха, тата чипер.

Малтан мала! Ирхи хĕвелĕн
Мал енченех-çке тухасси...
Хыр кашламасть. Сĕм каç шĕвелнĕ.
Тулта каллех — автан сасси.

1948



ПЕТĔР ХУÇАНКАЙ

МЕХЕЛ

# КĔВĔЛЕНМЕН ЮРĂСЕМ

* * *

Шупашкара çитсе пыруçăн
Тинкертĕм тăрă Атăла:
Сана асилтĕм, чакăр куçăм,
Санпа çĕклерĕм кăмăла.

Силлерĕ-çке пире шăпамăр,
Силлерĕ Атăл хумĕ пек.
Салантăмăр та пухăнатпăр
Чун патĕнчи ĕмĕтсемпе.

Вĕçет ман шухăш Атăл урлă,
Çумма хушайăттăм çунат!
Паян кампа ларса эп юрлăп?
Чĕрем пĕр саншăн çеç çунать.

1945

* * *

Чечек çуратчĕ çуркунне,
Юрлатчĕ кайăк юрă.
Мана савнийĕм ун чухне
Пĕрремĕш хут чуптурĕ.

Сасартăк улшăнчĕ тĕнче:
Ялтрать вăл асаматлăн;
Çиçет, вылять куç умĕнче
Йăлт симĕссĕн-кăваккăн.

Кĕвĕçнĕ пек ман куçăмран
Чечек пăхса сăнарĕ.
Пыл хурчĕ хăй çине ларсан,
Чечек вара... пăхмарĕ.

1945

* * *

Мĕскер, мĕскер эс ман куçран
Чĕнмесĕр тинкерсе пăхатăн?
Мĕскер курасшăн ăнсăртран
Куç хӳрипе сăнатăн?
Çавах эп, шан! Çавах эп, шан!
Ĕлĕкхиллех эп санăн.

Мĕскер, мĕскер эс кулянан,
Сисмесĕрех сывлатăн ассăн?
Е пысăк хурлăх курнăран
Савăнăçна шанмастăн?
Çавах эп, шан! Çавах эп, шан!
Ĕлĕкхиллех эп санăн.

1945

* * *

Ах, эп курсаттăм мăшăр куç —
Хура та мар, кăвак та марччĕ.
Мĕскер-ши ку, мĕскер-ши ку? —
Пĕрре пăхсах вăл пăхăнтарчĕ.

Ытараймастăп эп ăна,
Кăмăлăмра та çав кăна.

Сăхлантарать те илĕртет,
Кӳлештерет те шантарать вăл.
Лăплантарать те тилмĕртет,
Çут тĕнчене йăлт мантарать вăл.

Ытараймастăп эп ăна,
Кăмăлăмра та çав кăна.

Хăш чух ачаш, хăш чух хаяр,
Хăш чух тӳлек, хăш чух кăварлă;
Хура та мар, кăвак та мар —
Юратупа вăл пĕр сăнарлă.

Ытараймастăп эп ăна,
Кăмăлăмра та çав кăна.

1945

* * *

Атăлтан тухать çур уйăх
Парăс евĕр карăнса.
Час кураймăп сана урăх,
Час манаймăп парăса.

Сывă пул, сăпайлă пул,
Тутăр тыт та алă сул!

Хум çĕклерĕ, хум силлерĕ
Манăн пĕчĕкçĕ кимме.
Куçна ан шăл эс, чиперĕм,
Эп каймастăп-çке вилме.

Сывă пул, сăпайлă пул,
Тутăр тыт та алă сул!

Йăлăмра ем-ешĕл улăх,
Çутă-çутă кӳлĕсем.
Киммĕм таварăнĕ тулăх,
Эс мана кĕте пĕлсен...

Сывă пул, сăпайлă пул,
Тутăр тыт та алă сул!

1946

* * *

Курсам, мĕнле илемлĕ Атăл!
Уç кантăкна, уç кантăкна.
Ман юррăма пулсам эс хапăл —
Самант кăна, самант кăна...
Уç кантăкна!

Итле, мĕнле тӳлек шыв анĕ:
Пĕр хум та çук, пĕр хум та çук.
Ман кăмăлăм хăçан лăпланĕ?
Лăпланас çук вăл сансăр чух,
Лăпланас çук.

Шыва кĕрет чипер хĕр-уйăх,
Сар çивтине вăл сапалать.
Ман чунăмра пĕр çутă хурлăх:
Ялан пуласчĕ санпала,
Ялан çапла.

Пире пиллет пур çутçанталăк.
Уç кантăкна, уç кантăкна.
Çак юррăм юлтăр асăнмалăх —
Сана кăна, сана кăна...
Уç кантăкна!

1946

* * *

Шупашкар çăкисем çеçкере,
Урамра пыл шăрши, пыл шăрши.
Ман курасчĕ сана кĕçĕрех,
Пахчана пымăн-ши, пымăн-ши?

Пахчара улах мар-çке тесе,
Пĕрĕнсессĕн хура куç харши,
Манăн пĕчĕк кимме ĕненсе
Йăлăма каçмăн-ши, каçмăн-ши?

Шăпчăксем юрлама пуçласан,
Атăл тăрăх каять ши те ши.
Саварах çавăрса юрласан,
Ман сасса илтмĕн-ши, илтмĕн-ши?

Шупашкар çăкисем çеçкере,
Çеçкере пĕтĕм аслă çĕршыв.
Юратасшăн çунсассăн чĕре,
Мĕнле шыв сапăр-ши? Сапăр-ши?

1951

* * *

Чĕкеçсем çӳлте вĕçеççĕ,
Яр уçатăп кантăка.
Вĕçрĕ кĕчĕ пĕр чĕкеçĕ,
Чĕртрĕ манăн шанчăка.

Эреветлĕ те теветлĕ —
Ачаран астунă пек.
Чĕвĕл-чĕвĕл чĕвĕлтетрĕ
Хăйĕн çепĕç чĕлхипе.

Виççĕ çаврăнчĕ те тухрĕ,
Уçă юлчĕ чӳрече.
Тав юрри хавассăн юхрĕ
Янкăр пĕлĕт айĕнче.

Манăн чунăм çунатланчĕ,
Тем çĕклерĕ кăмăла.
Чĕкеç пек вĕçет ман шанчăк
Çӳлелле те малалла.

1952

* * *

Пăлтăра шăналăк карнă
Шăнасем аптратасран.
Тӳшекне хăпартса сарнă,
Минтерсем — мачча таран.

Кирлĕ мар мана минтерĕ,
Сăхланмастăп тӳшеке,
Ма тесен сăмах чĕнмерĕ
Эп пуплес текен пике.

Юрĕ, юрĕ, ăшхыптармăш,
Çаплалла иккен телей.
Час ăсанăп акăш-макăш
Атăлпа эп вирелле.

Урăха чĕрем иленмĕ...
Тавтапуç, ытарлă куç,
Ик кун çурăлăх илемлĕ
Асапушăн тавтапуç!

1950

* * *

Ман çук юратнă вăхăтăм:
Хĕлле, çулла е кĕркунне —
Пурне те эп тав тăвăттăм,—
Хастарлăх кӳтĕр çын чунне.
Тăман, хĕвел, йĕпе-сапа —
Пĕрне те ман ӳпкевĕм çук.
Мĕскер çитмест мана ку чух?
Санпа пуласчĕ ман. Санпа.

1955

## ТАНГО

Кĕл-чечек аллейĕ,
Кĕл-чечек аллейĕ...
Ман телейĕм мар çав,—
Ют çынсен телейĕ.

Ман телейĕм пурччĕ,
Аякра вăл юлчĕ,
Чĕрене шар çурчĕ:
Шăнăçайми пулчĕ.

Эп ӳпкелеместĕп,
Тилмĕрсе йĕместĕп.
Хам курнине, тусăм,
Ан курсамччĕ эс, теп.

Кĕл-чечек аллейĕ,
Кĕл-чечек аллейĕ...
Ман телейĕм мар ку,—
Ыттисен телейĕ.

Ярăнать ăш çумăр —
Пĕлĕтĕн куççулĕ.
Мана айăп тумăр:
Ман пекки тем чухлĕ.

Ярӑн, ҫумӑр, ярӑн,
Сад пахчи, шӑварӑн.
Ешӗл йывӑҫ-курӑк
Сарӑлтӑр катмаррӑн.

Кӗл-чечек аллейӗ,
Кӗл-чечек аллейӗ...
Ман телей пулмин те,
Пур такам телейӗ...

1956. Бухарест

* * *

Çаплах усратăп ăшăмра
Сан илĕртен сăнна,
Сĕтел çинчи сар кăкшăмра
Чечек усранăнах.

Шан: хухмĕ çав чечек типсе
Сар кăкшăм ваниччен.
Вансассăн... лартчăр ыттисем:
Чечекĕ пит чечен!

1957



ПЕТĔР ХУСАНКАЙ

МЕХЕЛ

# ТИВĔҪЛИСЕНЕ

## ПОЭЗИ СИПЛĔ ÇИЛĔ

Пин-пин Ивановран пĕри.
Иван-и, Ян-и, Джон-и, Жан-и —
Пĕр пек вĕсен тĕп тымарри,
Чăваш — хăйле ятнех вăл шаннă.

Нарспи, Сетнер те Тăхтаман —
Мĕнле тĕлĕнмелле янрană!
Поэт çавна ытарайман,
Вăл наци сăпатне шыранă.

Итапайсем иванланни
Час акă икçĕр çул та иртĕ.
Кунта, тен, пулĕ аванни,
Кунта, тен, пулĕ начарри те.

Кам мĕн шырать — çавна тупать.
Историçĕн ун хăйĕн ĕçĕ:
Чикĕлесе лартас юпа,
Ак ку — пуçламăшĕ, ку — вĕçĕ...

Çырман чăваш историне
Уçса хупмашкăн кам пултарĕ?

Вăл çыранĕ-ха малашне:
Паисийсĕр* пулман Болгари.

Вăл çыранĕ-ха чăвашла,
Чĕлхемĕр çĕклĕ-ха ăна та.
Каçса кайса вуламалла
Вăл çыранĕ тесе шанатăп.

Паян эп, халăх сăваçи,
Нимле чикке те уямасăр,
Поэзи тăтăш çавраçил
Çĕкленине туятăп ахăр.

Çав çил чун-чĕрене вĕрет
Пур нишлĕхрен те сыватасшăн,
Вĕрет те витĕр витерет
Хаяррăн, çепĕççĕн, ачашшăн.

Çӳçентерет те тепĕр чух,
Пăртак именterсе те илĕ.
Вăл вĕрнине сисмесĕр çук,
Тавах, поэзи сиплĕ çилĕ!

Ылмашăнать тӳре-шара,
Саманасем ылмашăнаççĕ,—
Çынсем çаплах е Пушкинра,
Е Шекспирта ăс-хал шыраççĕ.

Чăн-чăн илем — ĕмĕрлĕхех,
Ăна туртаймăн урлă-пирлĕ.
Хĕвел пек, шыв пек, сывлăш пек
Этем чунне ялан вăл кирлĕ.

...Йăлтах пурăнмаллискерсем:
Тукай е марисен Чавайнĕ,

---

* Паисий Хилендарский (1722—1798) — пăлхарсен малтанхи историçи.

Е хамăр Кĕçтенттин тесен...
Комета пек çунайса кайнă.

Пит ватă халăхсем эпир,
Çав вăхăтрах — мĕнле-ха çамрăк!
Культура кил-çуртне пĕр ир
Яр уçрăмăр, тĕртсе, мăн алăк.

Çав ир — Нева кăвак çути,
Çав ир — «Аврора» шурăмпуçĕ.
Ак Смольнăйри пĕр çын утти
Мана халь илтĕннĕ пек пулчĕ...

Вăл курнă витĕр куçĕпе
Кунçулăн тинĕсне пĕр харăс:
Унта таса поэзи пек
Таçта пĕччĕн çул тытнă парăс.

Çав парăс Лермонтовăн та,
Ыттин те хумсемпе кĕрмешнĕ.
Çав парăссем çил-тăвăлта
Пĕр революцие пĕрлешнĕ.

Пĕчченлĕх, харпăрлăх тĕнчи
Пĕтсе пырать, пурнаймăн уйрăм,
Поэзи — халăх чунĕнчи
Чи хаклă мул, чи ырă туйăм.

Анчах та халăх вăл — çынсем,
Вăл кворум мар — хисепшĕн, шутшăн.
Эс кашнине ятран чĕнсем,
Чи йывăр ун ĕçне эс хутшăн.

Çапах, поэт, пин çулхиллех
Сĕтелўнтен эс хăпаймастăн:
Ларатăн шуçăм çуттиллех,
Бригадăн сăвă çыраймастăн.

Мухтав çав харсăр пĕччене!
Çук референчĕ, секретарĕ,
Çук ассистенчĕ... Тĕнчене
Пĕччен хăй сассине вăл парĕ.

Тупман сăмахăн асапне
Никам çине те вăл хураймĕ.
Сĕтелĕ хушшинчен ӳпне
Йăваниччен вăл лăш кураймĕ.

Мухтав та чыс! Ахаллĕн мар
Ун ырă ячĕ — пултаруçă.
Ăна, ялан хавхаланма,
Йĕри-тавра çул пултăр уçă.

Хамран килсен — ун пеккине
Эп парăттăм транзит яланлăх:
Çӳре, итле çĕр кĕввине,
Санпа пуять çак çутçанталăк.

Çӳре, сан ĕмĕрӳ кĕске,
Нумайĕш хĕрĕхе çитмеççĕ.
Çӳре, васка! Пĕлетĕн-çке:
Нумайĕш вăтăртан иртмеççĕ.

Хĕвел патне вĕçен Икар
Хĕвел хурри пулсан, мăнтарăн,
Поэт шăпи ун евĕр мар:
Шалтан çунать вăл шĕл-кăваррăн.

Çапла ĕçленĕ аслисем.
Сан пур пулсан талант тивлечĕ,
Çакна ялан асна илсем,
Ыран килес чăваш поэчĕ!

1965

## АВАН-И, ПУШКИН!

... Пире хирĕç сулă çине туса лартнă вилĕм таканĕ юхса анать-мĕн, ун урлавĕ çинче виççĕн çакăнса пыраççĕ... Тулли уйăх çав мĕскĕнсен сăнсăрланнă пичĕсене çутатать. Вĕсенчен пĕри вата чăвашчĕ.

*А. Пушкин*

1

Çав çул пире ун вилĕмсĕр сăмахĕ
Çитсе çĕклерĕ Атăл хумĕ пек...
Ялтан яла, ытти ĕçе мансах, эп
«Онегинпа» çӳреп, чăвашлипе.

Кĕркуннехи тумхах пытанайман-ха,
Çуран тăман чупать çул хыттипе;
Автомобиль айне пулать айван хăй,
Хăй чăрсăр — шалт ие путекĕ пек.

Вĕрет-сурать, асать арçурилле те,
Слюда çумне те çыпăçса виртлет...
Çилпе такамăн юррине илтетĕп,
Таçтан пĕччен шăнкрав сасси çитет.

Таçта сĕм пурнăç кĕрчĕ-юрĕ тăрăх,
Çил-тăвăл витĕр пĕр кӳме пырать.
Хăй çĕрĕнче те тыткăнри пек тăлăх
Пĕр çын унта кун-каçăн çул тытать.

Пĕччен! Лаша таврашĕ те — жандармăн
Аксельбантне ăна асилтерет.
Сĕм пĕлĕте пин хулăпа çаптарнăн
Çаралнă шурă хурăн шилетет.

Сив çăлтăрсем çине пăхать вăл халĕ,
Хуркайăк Çулĕ сассăр йыхăрать...
Телей çуках! Анчах та ирĕк, канлĕх!..
Кала-ха ун çинчен эс хытăрах!..

Çӳлти хура юнсем, патша, Булгарин...
Куç шуррисем вĕлтлетрĕç вирелле.
Янаххине ун тăлăпĕ хупларĕ,
Пасарнă бакенбарчĕ ирĕлет.

Тĕнкĕлтетет пĕр çемлĕ шăнкăравĕ,
Чуна тивеççĕ ямшăк юррисем.
Чĕрме тупан сасси, ут тулхăравĕ,
Ула юпаллă çухрăмсем... Кичем!

2

Тин тунă уйăх ылтăн пулă евĕр
Чăмать сайралнă пĕлĕт хушшипе:
Пĕр пуçĕпе тухать вăл, именмесĕр,
Пĕр хӳрипе çапать юмахри пек.

Ăçта кӳме? Шоферăм кулса ячĕ,
Унпа кăна-ши эп? Çук: пур тепри.
Портфелĕмре ун кĕнеки, ун ячĕ,
Хăй — çуммăнах, çап-çамрăк та вĕри.

Аван-и, Пушкин! — Ăшă-и, çемçе-и
Çак ГАЗ минтерĕ çийĕнче сана?
Каласшăнччĕ пĕр юрату çинчен эп,
Ман чĕрене хĕсет вăл тахçанах.

Пайтах пулать... Ваййа эп пит ерместĕм,
Сăмах та вакламастăмччĕ питех...
Кăтра ача, ман патăма кĕрсеттĕн,
Паллашрăмăр сĕм хăйă çутипех...

Кĕрхи каçсем вăрах вара, чĕнмесĕр,
Чавсаланса лараттăмăр ун чух.
Сисеттĕм эп: çунат ӳстернĕ евĕр
Кăтăкланса ман ырататчĕ чун.

Сан вĕлтĕрен уки пек çӳçӳнте те,
Кӳренчĕкле кӳпшек тутусенче,
Аяккалла пăхан куçусенче те
Кураттăм эпĕ урăхла тĕнче.

Аслăланатчĕ тăвăр пӳртĕм манăн:
Йĕре-йĕре çӳрен çил ачисен,
Чӳречерен шаккан кĕрхи тумламăн —
Йăлт урăхчĕ пĕлтерĕшĕ вĕсен...

3

Çул хыççăн çул... Ак иртрĕ те ачалăх.
Сенкер тĕтрелле шуçăм çутăлчĕ.
Куç уçăлчĕ. Яр сирĕлчĕ шăналăк:
Куç умĕнче тем пысăкăш тĕнче.

Çап-çарамас поэт чунĕпе утрăм
Асаплă-илĕртӳллĕ çулпала.
Çăмăлах мар çĕклерĕ манăн çурăм,
Каллех эп туртăнтăм сан патналла.

Ăнлантăм: шăхăрса юрра ямашкăн
Çак пурнăç туй та уяв мар ялан.
Поэзи куркине вара пăртаккăн
Хушмашкăн тиврĕ сивĕ шыв та ман.

Çĕршывăма куллен ман ӳсрĕ парăм.
Çурма çулта тавăрăнни — начар.
Каллех иккĕленӳ. Каллех шырарăм.
Каллех манпа эс пултăн юнашар.

Ак эп сан тăлмачу. Шăпланчĕ музăм:
Куç хӳрипе пăхать те хушăран,
Тухъяллăскер, тăрать вăл тайма пуçăн,
Вилес пек кӳлешет Татьянăран.

Эп санпала куçа хупмасăр лартăм:
Кашни сан сăмахун чăн-чăн тĕшне
Шĕкĕлчесе илесшĕн асаплантăм,
Мĕнле кăнттам эп пулнă ун чухне!

Тавах: сăмах тертне тӳсме вĕрентрĕн,
Сан урăхла янран сăввусенче
Хам чунăм кĕввиех пурне пĕлсессĕн,
Мĕнле вара эп савăнмăттăмччĕ!

Хавхаланса, çунса та, тарăхса та,
Хăй вырăнне лартсан сăмахăма,
Сĕм вăрманта çул тупнă пек сасартăк,
Чĕлхе ăсти пек туйăнтăм хама.

4

Ямб пек яка та тикĕс пирĕн çул-йĕр,
Шав ыткăнать вут куçлă урхамах.
Шап-шурă юр... Кайсан-кайсассăн — çӳллĕ
Хура вăрман сиксе тухать умах.

Армак-чармак ват юмансем лараççĕ
Çара туратсемпе кар карласа.
Вĕсем Пугачева та курнă, Разин
Çыннисене те юлнă палласа.

Эс курнă вĕсене. Ав вăл çĕкленнĕ,
Виç ытама та кĕрейми юман.
Сан тăвăллă кунна-çулна irттернĕ,
Манран та пултарать-ха вăл юлма.

Анчах пире-и çак çĕрте çĕрмешкĕн?!
Эпир ун йышши мар. Ак эс паян
Пур çутçанталăка тĕлĕнтеретĕн,
Этемлĕх çамрăклăхĕ пек шавлан.

Кустар, машина, чун-чĕре çĕклентĕр,
Çил пек касса кĕр çĕнĕ ĕмĕре!
Кунта... кунта кăшт чарăнăпăр эпĕр:
Хăна пулма чĕнеççĕ халь пире.

Пăхсам, поэт, кур халăха паян ак,
Кур ĕмĕтне çитернĕ çĕршыва:
Çакса сулăпала юхтарса янă,
Юнпа ăна кĕлернĕ, вăл сывах!

Хапхаранах тухса илет тăванăн
Сана вăл сарлака чĕрипеле:
— Пусма пек пултăр ман саламăм саншăн.
Кĕрсем, хăнам, иртсемччĕ тĕпеле.

Пехил сана: пĕр пĕрчĕрен пин пĕрчĕ!
Ларсам ман ирĕклĕ кĕрекене.
Сан вăрлăху вăрман пек ĕрчетĕрччĕ!—
Тесе сĕнет вăл савăш куркине.

Ларар, поэт: хальччен çăкăр-тăварсăр
Ӳсмен-ха вăл эреш те ярапа.
Тĕппи курка! Сахал пулсан — ăсатпăр
Юри хывтарнă Алтăр çăлтăрпа.

1937—1949

## БАЙРОН

Кам савнă, ачашланă-ши
Ача чухне ăна хавассăн,
Хăйне çуратнă амăшĕ
«Уксах» тесе мăшкăлласассăн?

Кам колледжре ăна юп курнă?
Ытарайми хĕр Чеворт Мери,
Пĕрремĕш чун савниййĕ унăн,
Ăна «уксах ача» çеç терĕ!

Ялан хăй тансăр пирки урнă,
Ялан ӳпкевлĕн çуннă вăл.
Уксахскерех Дарданелл урлă
Ишсе каçтарнă мăн кăмăл.

Сăнтан хитре, ӳтпе чăтуллă,
Кембридж университетне
Чунпа вăл темĕн анлăш хурлăх,
Сив ютшăну илсе кĕнĕ.

Улпут студентăн кун иртет-мĕн
Вĕреннинчен ытла — ĕçсе.
Анчах пулас поэт тирпейлĕн
Çырать «Ерçӳллĕ сехетсем».

Лордсен палатинче ун выран,
Анчах тус хушшинче пĕччен
Пулас шăпа сунмасть пек ыра...
Çук! Çĕрĕк чунлă çынсенчен —

Аяккарах, курман-илтмен çĕр
Хушшинелле кĕрсе çухал:
Вăл, Англие ик çул килмесĕр,
Вăтаçĕр тинĕспе юхать.

*

Яш куçсенче хĕвел кулсассăн,
Тăван çĕршыв тĕтри тем мар:
Вăл таврăнать. Сасси мăнаçлăн
Çĕкленчĕ тăвăл пек хатар.

Этемлĕх хăлхине вăл çапрĕ.
Шавлать, чăшăлтатать, кĕрлет
Поэтăн харсăр хумлă чапĕ
Салху «Чайльд Гарольдпа» пĕрле.

Халь уншăн уçăлчĕ пур алăк.
Сасартăк, пурнăç çитнĕ пек,
Вăл авланать: юлташлăн ала
Парать хĕр Анабель Мильбенк.

Пурнаççĕ этемлех. Асра та
Çук иртнĕ канăçсăрлăх ун.
Тӳлек вăл. Хĕр çуралчĕ — Ада...
Анчах та сăвă мар-çке чун!

Сăвву санран килет: аватăн
Хăш майлă кирлĕ пек; чуна —
Кĕвĕçӳпе элек авать-мĕн,
Вăл çын сăмахĕпе çунать.

Пӑшӑлтату, ҫийӳ, суялӑх
Чапа нихҫан та касарман.
«Ак ҫакӑн пек пул, ак ку лайӑх»,—
Сӗнет хӑй идолне айван.

Юлашки хут, поэт пӗр туссӑр,
Савнисӗр, пӗлӗшсӗр юлсан,
Ӗмӗрлӗхех хӑваҫҫӗ суккӑр
Чунсем ӑна ак Лондонран.

*

Женев-кӳлли. Альп тӑвӗсем.
Хӑй пек хуса кӑларнӑ Шелли.
Кама, мӗне халь хӗрхенсе
Йӗрес? Е хывнӑ сӑнчӑр шел-и?

Вӑл кунӗ-кунӗпе тулта,
Ҫук кӗвӗҫӳ, тӑшман элекӗ...
Чуна ҫиен салхулӑх та —
Халь ҫӑмӑл хурлӑх пек. Элеги.

Вӑл килӗшес тет пурнӑҫпа,
Лӑпланнӑ, мирлӗ Шелли евӗр.
Куллен вӑл хатӗр курнӑҫма
Пур инкекпе те пӗр ӳпкевсӗр.

Анчах ҫав канлӗхе кӗрет
Хӗрхӳ асаилӳ... Хӑрушӑ...
Ун ҫуралать пӗччен «Манфред» —
Сӗм-хурараан та хура шухӑш.

*

Уяв. Пӗр вӗҫсӗр карнавал.
Юрлать те сиккелет Венеци...
Хӑҫантанпа ширанӑ вӑл,
Хӑҫантанпа ӗмӗтленетчӗ

Çак ирĕк, шухă, куç тулли
Вăр-вар çынсем пек пурăнмашкăн!
Манфред хуйхи Беппо кулли
Айне пулать, çĕрпе çырлахнăн.

Вăл вăтăрта. Мĕн мăн кăмăл?
Хаваслăхра ăна вăл маннă.
Ун пурнăçĕ халь — çăп-çăмăл.
Минутлăх тусĕ — Марианна.

Телей! Тен, çак ытахальтен
Юратнă Маргарита эсĕ?
Эс вата граф майри пуль, тен,—
Мулпа çырлахайман Тереза?

Хăш сăн п ĕ р т е н-п ĕ р вĕсенчен?
Ăçта яш шухăш чун хаваллĕн
Ширанă, йыхăрнă — чечен
Тивлетлĕ хĕр? Ăçта вăл халĕ?..

«Хĕрарăм — чи хăрушă чун:
Унпа та, унсăр та пурнаймăн».
Ак халь мĕн тăрса юлнă ун —
Чи аслă чĕрĕ Дон Жуанăн.

Уяв. Пĕр вĕççĕр карнавал.
Венеци çунатланнă мар-и?
Анчах унтан та тарнă вăл —
Поэт, пăлхавçă, карбонари.

Кăмрăкçăсем тӳсен хур-шур
Мантарнă лордлăхне, тем хушнăн:
Итали ирĕкĕ! Мĕнпур
Поэзи çавăнта халь уншăн.

Телейлĕ эс, тӳлек кӳлле
Хĕрпе кĕсменличчен, хастаррăн —
Чĕре тумне ярса йӳле —
Чару пĕлмен пуҫтах корсаррăн

Хумханнă тинĕс варнелле
Ишсе кĕрсессĕн ҫавраҫиллĕн!
Ҫав ҫеҫ, пĕр ҫавă парнелет
Ҫынна чăн юрату та ҫилĕ.

*

Пĕлмен вăл Мисолунги шурĕн
Лачакинче, сивчир лексе,
Хĕм юнлăн мар — шупкан, шап-шуррăн
Юлашки хут чĕтренессе.

Хула ют тыткăнра. Эллада!
Ахаль тумтирлĕ ҫак ҫынна
Ҫарпуҫĕ пек эс пахалатăн,
Вăл ирĕке чĕнет сана.

«Хускалăр, чурасем, хускалăр!
Ăнланăр: хăвăрсăр сире
Никам, нимле хăват ку тапхăр
Ҫăлаймĕ хăвăр Грецире...»

Ҫĕршывĕ ун — тĕнче, сисеп эп,
Тăшманĕ тĕрĕк мар — чуралăх.
Мĕне ăна ҫарпуҫ хисепĕ?
Ăна чăн ирĕк пултăр палăк.

1932. Сиктĕрме

## ПОЭТ

«Нарспи» çыракан Иванюк Васинккин Кĕçтенттинĕ вилни 15 тулнине йывăр кăмăлпа асăнса çак повеçе халалать.

*Автор*

### I. Юрăсен юрри

Хуралçă пӳлĕмĕ. Кичем.
Маччи лутра. Кĕлет-и, лаç-и?..
Поэт ларать. Ун куçĕсем
Таçта инçетелле пăхаççĕ...

Сăра-эрех кĕленчисем,
Пирус тĕпчĕкĕсем... Тирпейсĕр...
— Кĕçтук! Çисем пăртак, çисем,
Кайран куçарăн. Ак, атьсемĕр!

— Тăхта-ха, чим... Халех, мучей...
Апатланах эс... Эпĕ çийĕп...
Поэт манать. Ун умĕнче
«Кĕнекесенĕн кĕнекийĕ».

Хăватлă «Юрăсен Юрри».
Ăна часрах куçарттарасшăн.
Анчах вăлваскамасть юри,
Вăл Соломон чунне чухласшăн.

«...Хĕрарăм вилĕмпе пĕрех,
Унран ниçта та пытанаймăн».
Кĕçтук пытаннă ак пĕрре,
Пĕрре çеç мар — нумай пытаннă.

Çак пӳлĕмрех иккен тата,
Эрех-пирус кăна пĕлмен-мĕн.
Хуралçă хуçнă çăпата,
Кĕçтук ун юмахне итленĕ.

«Çапла çав,— тенĕ ват чăваш,—
Телейсĕр çын нумай çуралнă:
Вĕри юнлин — ăс-хал аяш,
Ăслăраххин — чĕри суранлă...

Пурне те витнĕ нӳр тăпра,
Кашни хăй шăпине кура çав.
Силпийĕ хăй те час вара
Саланнă»,— тенĕ ват хуралçă.

Пайтах тĕпченĕ яш Кĕçтук,
Пайтах çĕр ыйхăсăр ирттернĕ.
Хĕрарăм — вилĕм-и?.. Çук, çук:
Хăй Нарспине вăл пурнăç тенĕ.

Кайран вара, мăн хуларан
Пĕр мусăкçă чăваш килсессĕн,
Вăл никама та юратман,
Тĕнче ют туйăннă вĕсемшĕн.

Каçхи урам хăни пулса,
Вĕсем нумай калаçнă иккĕш.
Ыррипеле пĕрлех — усал:
Ĕçме вĕрентнĕ çĕнĕ «пиччĕш».

Вăл астăвать ак халь аван:
Пуху пек халăх... Пăсăк мусăк...
«Чăвашшăн пултăр! Тыт, тăван!» —
Тесе ăна ĕçтернĕ тусĕ.

«Сетнершĕн!» — тенĕ Кĕçтенттин.
Тумлатнă. Ĕçнĕ. Ӳпĕнтернĕ.
Çавна кура тăран пĕр çын:
«Язычник... кирементçĕ!» — тенĕ.

Вăл астăвать: вĕсен класне
Пăлхавшăн кăларса ярсассăн,
Ăна инспектор хăй патне
Калле чĕнсе илет хавассăн:

«Талант! Анчах чечен ахах
Навус купи ăшне ан лектĕр...
Революционер! Ха-ха! —
Тесе виртленĕ ват инспектор.—

Ну юрĕ, килĕшĕпĕр-çке.
Сана чĕнтертĕм-ха юри эп:
Чĕлхӳ пуян, хитре чĕлхе!
Куçарăн «Юрăсен Юррийĕ».

«...Юратăр,— тет кĕнекере,—
Ĕрчетĕр йăх, анчан ан манăр:
Кӳлешӳпе хыпсан чĕре —
Хăрушă тамăкра çунатăр».

Поэт ларать, шав куçарать.
Шалта темскер хăйăлтатать ун.
Тем уççăн сывлама чарать,
Анчах ăçтан ăна пăхатăн?

Ăҫтан калайăн ун ҫинчен?
«Йăваш кăмăллисем телейлĕ»
Тесе вĕрентнĕ ĕмĕртен,
Епле вăл пулăшу кĕленĕ?

«Ҫук,— тет хăй ăшĕнче Кĕҫтук,—
Илемлĕх аякра, чун пушă...
Ĕмĕтĕмсем ҫитмерĕҫ, ҫук.
Реакци ҫĕнтерет... Хăрушă...»

## II. «Истори хушнă ĕҫ»

Ĕлккенех мар ун кабинечĕ,
Анчах йĕрке унта, тирпей.
Чее хыпарҫă кĕркелетчĕ,
Ак халь те кĕчĕ вăл ирпе:

«Кĕҫтук ĕҫет-тĕр, Иван Яккăльч,
Питĕрĕнсех ларать, кĕртмест.
Ĕҫре чăрмав, хăйне те шалккă...
Йăлт пăсăлчĕ...» «Мĕн тетĕн эс?!»

Ватти пит хытă шăнăрланчĕ:
«Каллех эппин апла, каллех!
Мĕнле хастар, ĕҫчен ачаччĕ...
Ҫук, тӳсейместĕп эп текех...

Ăҫта вăл? — терĕ сиввĕн пуҫлăх.—
Атя, кăтарт мана халех...
Асту-ха, шухлăх хыҫҫăн шухлăх —
Пăлхав, хĕрарăмсем, эрех...

Ак тамаша! Ман шкул, ман шкулăм —
Хула кулли, шапа лĕкки!»
Ватти чĕтрет. Туйи ун хулăн,
Леш «Аслă Петĕр патакки».

...Шаккарĕç алăка пĕр касă.
Тепре. Тата. Уçмаççĕ, çук.
«Пыр, пуртă илсе кил»,— тет сасă.
«Уç»,— терĕ хуралçа Кĕçтук.

Ватти кĕрет. Поэт тăмарĕ,
Вăл ларнă пуль ĕмĕрлĕхех.
Ун кăн-кăвак тăнлав тымарĕ
Выртать кӳпченĕ сĕлĕх пек.

Хыпарçă тĕрĕсне каланă:
Çĕрте пайтах пуш кĕленче...
Алçырусем те сапаланнă...
Çапах — перо ун аллинче.

Ун умĕнче каска пек библи,
Пусарнăн туйăнать хăйне.
Ун чунĕн суранне кам сиплĕ?
Кам парĕ таварса вăйне?

Ваттин çилли лăштах тамалчĕ:
«Ах, эс епле, этăк-итак...
Мĕнле поэт, мĕнле тăлмачă!
Ĕçетĕн ак, туртатăн ак...

Капла юрать-и? Ак айванлăх!
Манах пек хупăнса ларан.
Ну, çитĕ. Тухăпăр... Çанталăк
Ытла та кăмăллă паян...»

Ăна вăл хулĕнчен çаклатрĕ.
Вара Сĕве хĕрринелле
Хĕруллĕн ӳкĕтлесе кайрĕ
Ĕмĕртенхи йăлипеле:

«...Тӗнчешӗн эп нимех те мар та,
Ман ӗҫӗм кирлӗ халӑха.
Пит чӑнкӑ пусмапа хӑпартӑм
Тумашкӑн ҫакӑ ырлӑха.

Ҫырулӑха эп ырлӑх тетӗп,
Ҫырулӑхӑн тӗп кӗнеки —
Вӑл библи иккенне пӗлетӗп,
Ҫапла ҫак саманан йӗрки.

Истори хывнӑ мисси теҫҫӗ
Ман ӗҫӗме чухлакансем.
Нумайӑшӗ ҫакна пӗлмеҫҫӗ,
Пӑхаҫҫӗ пӑлхатма вӗсем.

«Чӑвашсене сутатӑн»,— терӗҫ.
Вӗсемшӗн хаклӑ кӗлетке.
Сӗт тутасем ялав ҫӗклерӗҫ —
«Тӑванлӑх, танлӑх...» Илтнӗ-ҫке!

Фантази, Константин, фантази...
Культура кирлӗ чи малтан.
Вӑл пирӗн ҫук! Эпир-ха — Ази,
Дикарь эпир, чӑн каласан.

Хура пӳртрен тухса пӗтмен те,
Ӑҫта сиксе малтисемпе!
Реформа! Хам та эп тӗллентӗм,
Яш чух вӑл пит илемлӗ пек.

Ансат пек ху тӗллӗн утмашкӑн,
Пӗрне те пуҫҫапас килмест.
Анчах, кӑшт пуранса курсассӑн,
Ӑна-кӑна чухлатӑн эс.

Тĕнче йĕрки вăл — ĕмĕрхи вĕт,
Сӳс пек татайман кăшласа.
Асав шăлсен саккунĕ — кивĕ,
Аса хăйрас пулать, ăса!

«Чăвашсене вырăслататăн!» —
Тесе пĕри мăкăртатать,
«Хĕрес çумне эс пăталатăн!» —
Тесе тепри мана хăртать.

Эп пуп та, мĕн те мар, пĕлетĕн,
Анчах йĕри-тавра тăшман
Йăшăлтатать хура çĕленĕн...
Шкула, шкула сыхласчĕ ман.

Епле эс сыхлама пултарăн,
Пусмасăр аслисен йĕрне?
Кам урапи çине ларатăн —
Юрлатăн çавăн юррине.

Шăпам пит йывăр çĕклеттерчĕ:
Истори хушнă ĕç çапла.
Мĕнпур асапĕ, хӳрĕ, терчĕ
Ман пуç çинче-çке, шухăшла!

Эсир манран ак ютшăнатăр,
Пĕлместĕр ман пеккин чунне:
Тен, ман чĕре те ыратать-тĕр,
Манра та çав чăваш юнех.

Хăш чух, пит тарăхса çитсессĕн,
Пур таврари чăвашсене
Ертсе каяйăттăмччĕ, тетĕн,
Тĕнчен тасти пĕр хĕррине!

Анчах саманисем халь урăх,
Çук ку чухне Моисейсем.
Еçле те, ватă, тӳс те пурăн,
Шалти пур тарăхна çĕнсе...» -

Инспекторăн сасси чĕтренчĕ,
Шур тутăрĕ пĕр кĕсйинчен
Вăшт-вашт кăна тухса çĕкленчĕ...
Кĕçтук пăхать ун куçĕнчен:

«Тата ăна мĕн пăлхатать-ши?
Кĕрсе курсанччĕ ун ăшне...»

. . . . . . . . . . . . .

Поэтпала çырулăх ашшĕ
Чĕнмерĕç урăх пĕр-пĕрне.

## III. Çара ноябрь

Юрă

«Белеет парус одинокий
В тумане моря голубом...
Что ищет он в стране далекой?
Что кинул он в краю родном?

Играют волны, ветер свищет,
И мачта гнется и скрипит...
Увы, он счастия не ищет,
И не от счастия бежит!

Под ним струя светлей лазури,
Над ним луч солнца золотой.
А он, мятежный, просит бури,
Как будто в бурях есть покой!..»

Аманнă пек янрать çак сасă,
Анчах вăл тап-таса, çинçе.

Поэт, юрлан хĕре пăхмасăр,
Сĕнксе ларать диван çинче.

Вăл хурлăхлă. Ун тарăн куçĕ
Пытараймасть иккен çавна.
Кăларнă пирусне вăл хучĕ,
Астурĕ: килте мар, хăна.

Ак илтнисем чăвашланаççĕ,
Сăвăланаççĕ йĕркипе:
«Вăл пур — шав тăвăлшăн çунать-çке,
Çав тăвăл канлĕх кӳрес пек...»

Халь тăвăр туйăнать мансарда,
Ишес килет ăна таçтан.
— Тамара! — терĕ вăл сасартăк,
Хĕр юрламашкăн чарăнсан,—

Тавах сире. Ку — манăн лирик...—
Хăй çавăнтах — каллех пĕччен.
«Эпир епле? Хăçан-ши пирĕн?» —
Тесе шутларĕ ăшĕнче.

Тамара хирĕç пырса ларчĕ,
Хĕрхеннĕн пăхрĕ куçĕнчен:
«Çук, сирĕн вырăс пулмаллаччĕ,
Талантăр хăтăлатчĕ, тен...

Эп ютшăнмастăп, ан çилленĕр,
Çапах та — тӳррипех калам —
Тĕнче сире нумай пилленĕ,
Чăвашшăн... пысăк вăл талант!

Епле пулсан та, тĕттĕм халăх:
Аваллăх çук, мал ĕмĕт те...
Мĕн тупăнĕ хăват памалăх?
Çук, çук, сире Раççей кĕтет.

Культурăсăр çĕр çыннисемшĕн
Эсир халь килнĕ пек ютран...
Ах, Константин! Паллашнăçемĕн
Сире шеллетĕп эп чунтан...»

Тамарăн ватă амăш килчĕ:
«Каçарăр, эп — пĕччен, тесе...»
«Паллаш, анне: чăваш Да Винчи,—
Тет хĕрĕ шӳтлĕн, хĕрелсе.—

Художник, сăвăç... каскалать те...»
Ват карчăк сĕнчĕ аллине.
Поэт, чуптăванçи пулать те,
Сăнать пĕр харăс иккĕшне.

Мĕнле чечен хăтланкаларăш!
Именесси те çук пачах...
Ялта пулсан — чăваш хĕр амăш
Мĕн калĕччĕ хĕрпе качча?..

Асра ун амăшĕ, мăнтарăн,
Йăмăкĕсем... Курман чылай...
— Каçарăр,— тет татах хĕрарăм
Кăштăртатса хăй тухнă май.

Художник куçĕ асăрхарĕ:
Кăвак кĕпе, хăла калпак,
Хулпуç çинче тĕве çăм шарĕх*...
Питне пăхса илет вăл ак:

Кăшт палăрать пек вăрттăн шухăш,
Ăста пытарнă, пит ăста!
Ку, ахăр, уншăн ăнсăрт тупăш...
Çакна сăнарĕ вăл тата:

* Шарĕх — шарф.

Тамара, амăшĕ тухсассăн,
Хытса пек тăчĕ пĕр кана;
Унтан — пит сисĕнкĕсĕр — ассăн
Сывланăн туйăнчĕ ăна.

Çак çур самантлăх чĕрĕ сисĕм
Ăна хускатрĕ тĕппипех.
Юн çунăхать... киленчĕк çиçĕм
Çӳрет тăртаннă ӳт-тирпе...

*

Тамара Мускавран килейнĕ,
Вăл — юрлама вĕренекен.
Кĕçтук ун тантăшне иленнĕ,
Мĕн-ма килмест вăл халиччен?

Уçаççĕ чӳрече. Пĕр хушă
Садран улма шăрши кĕрет.
Поэт кĕтет. Анчах — хăрушă! —
Савать-ши халь вăл çав хĕре?

Çук, ку ытахальтен кăна çав...
Пĕлет вăл: хĕн куракансем
Вилес чухне чăрсăрланаççĕ,
Çав тапхăр мар-ши ун та, тем?

Вăл халĕ пит хавшаннă, чирлĕ,
Сахал пек шанчăк малалла...
Çапла: ăна хĕрарăм кирлĕ,
Этем ами... Çапла, çапла.

Олимпи пит кӳрнеклĕ, питĕ!
Ачаш ача пек алхасать...
Хăш чух ăна вăл Илемпи тет,
Хĕпĕртесех ятне пăсса.

Анчах самантлăх ăраскалшăн
Çынна кӳмешкĕн пысăк шар...
Ана, тен, чирлĕ хăвармашкăн...
Çук, выльăх мар вăл, выльăх ма

Вăл халь урах, тăп-тăрă урă:
Капла пулмасть, пулмасть капла.
Çук, курнăçмасть унпа вăл урăх,
Тӳрех, хăйнех çапла калать...

*

Пушар мĕлки пек каçхи шуçăм
Вылять сенкер чаршав çинче...
— Кĕттертĕм пуль? Ан ятлăр, тусăм —
Тени шăнкравăн илтĕнчĕ.—

Сăлтавăм пысăк вара манăн,
Вăрçмасăр та пултарăр, тен.
Сире эп пĕр сюрприз тăвасшăн:
Паян театрта «Кармен».

Мускав труппи! Каятпăр пурте.
Тамара, эс те,— виç билет.
Тен, хамăр пĕлĕшсем те, пур-тăр...
Ах, ман халех юрлас килет.

Епле ăна курмасăр юлăн?
Испани чунĕ, ташă, хор!
Тореадор, вăрçа! Хăюллăн!
Тореадор, тореадор!..

Илемлĕ мусăк, тусăм, паттăр...
(Олимпи ларчĕ ун çумне.)
— Ма пит сентябрь пек пăхатăр?..
(Тамара тухрĕ.) Мĕншĕн, э?

— Тулта сентябрь, çавăнпа-тăр.
— Анчах пирте, пирте вĕт май!
— Çук, ман ăшра çара ноябрь...
Олимпи, — терĕ вăл,— эс кай.

Тамарăпа кайса итлех эс,
Ман темшĕн... пуç ыратнă пек...—
Куççем кăна хĕре пĕлтерчĕç:
«Эс кайăн халь ĕмĕрлĕхех».

Хĕр кăнн хытать, унтан сасартăк
Кулса ярать: — Эй, янавар!
Хăш чух эс хăвăлти сăсар пек —
Тĕнче çути курасшăн мар...

Поэт тăнлать... Епле вăл шухă,
Мĕн чухлĕ вăй вылять унра!
Пĕлет-ши халь вăл — мĕнле шухăш
Кăшлать çынна çак самантра?..

## IV. Пурăнăç курки

...Чуна çĕклен суялăх маншăн
Киревсĕр чăнлăхран паха.

*А. Пушкин*

— Ăçта кун пек çĕршыв, ăçта?
Кăтарт-ха эс мана, тархасшăн...
Çĕршывшăн эп черкке йăтап,
Тăван патшалăхшăн, патшашăн.

Сыв пултăр уйрăлми Раççей!
Раççейшĕн, юн тăкан Раççейшĕн
Çĕнетпĕр селĕп нимĕçе,
Асăнтаратпăр! Ма тесессĕн

Пирте Кутузов мелĕ пур,
Суворов ăсĕ... Руç кăтартрĕ,
Кăтартĕ халь те вăл!.. Ак кур —
Пăкки ăçта çитсе шаплатрĕ!..

. . . . . . . . . . . . . . . .

Хупах вĕлле пекех сĕрлет,
Хула мещенĕсем ĕçеççĕ.
Патшалăх куркипе пĕрле
Килти телейшĕн те çĕклеççĕ:

Усламçă — хăй усламĕшĕн,
Çав лавçă — тӳсĕмлĕ лашишĕн,
Чиновник — чин çĕкленнĕшĕн,
Каччи — сар хĕршĕн, хĕр — каччишĕн...

Пĕр кĕтесре çынсем шăпрах,
Ĕçки те — урăхла телейшĕн.
Куçсем пăхаççĕ сăнарах,
Юри ӳсре хываççĕ, тейĕн:

«Тăван çĕршывăн тĕтĕмне
Кунта чыхăниччен шăршлатăн...
Путартăмăр черкке тĕпне
Пур çутă ĕмĕте те... Камшăн?

Кама чăн ирĕк пулчĕ ют?
Хресчен, хресчен çĕкленеймерĕ.
Аçа çапсан та çирĕм хут,
Çаплах сăхха кăна вăл перĕ».

— Ах, тантăшăм! Шанатăп эп.
Ан тив, пĕрне-пĕри тулаччăр,
Ан тив, кăшлаччăр,— ĕненеп:
Вулкан тепре шăтарĕ кратер!

«Европăра мĕлке çӳрет»
Тени — ку чух та тĕрĕсси вăл.
Çав шухăш тухатех тӳрре,
Эп курмасассăн — курĕ ывăл.

Унтах лараççĕ ик студент,
Кусен путех «тукмак билечĕ».
Сăра сыпкаласа, хуллен
Чăваш чĕлхипеле пуплеççĕ:

«Эс илтнĕ-и: Кĕçтенттине
Татах леш кăмăлсăр ĕç хушнă.
Мĕнле çынна çухатнине
Пăртак чухлать-ши çав ватсупнă?

Ача вăйран тухса ĕçлет,
Вăл библи куçарать васкавлă:
Кĕç Лондонран укçа килет,
Тăлмачшăн — чун уçмалăх!

Британин Библи Ушкăнне
Ватти пултарнă çавăрмашкăн.
Çавсем параççĕ укçине
Чăваш ăсне чирлетмешкĕн.

Çук, тĕшмĕшлĕ ку çарпала
Сăмах хытармалла пăртакçă.
Халь «Капитал» куçармалла,
Вĕсем Соломонпа хăртаççĕ».

— Ватти йӳтенĕ ĕнтĕ вăл,
Ялан «разбойник» те «мошенник».
Час тухĕ çĕнĕ çил-тăвăл,
Патшалăхсем вăрçса ĕшеннĕ.

Пурне те витрĕ-çке нуши —
Герб ăмăрткайăк, арăслан-и...
Иванова кам çăлĕ-ши?
Ача сăнран ӳке пуçланă.

Çурта пек ирĕлет куллен.
Талант! Вăл хăй хакне пĕлмест вĕт.
Ёнер каласрăм хăйпелен.
Кăшт хĕрĕнкĕччĕ... «Чун тӳсмест»,— тет.

— Романтик çав вăл, хăй Сетнер,
Çуралнă тутлă тĕлĕксемшĕн.
Кунçул тени чылай тискер...
Эс ак «талант», «искусство» тетĕн...

Анчах çакна та асра тыт,
Çакна та халь манмалла мар сан:
«Поэтом можешь ты не быть,
Но гражданином быть обязан...»

Вăл гражданин пулсах çитмерĕ,
Капитулянт! — калас пулсан.
— Чăваш революционерĕ
Вилет вĕт, вырăнсăр юлсан.

— Çапла та-ха... Çапах черченкĕ,
Çемçе чĕреллĕ çав Кĕçтук.
Хăй çиллĕ пушкăрт çĕрĕнчен те,
Пĕрре те каскăнлăхĕ çук.

*

Çак самантра Кĕçтукĕ ӳсĕр.
Вăл уйрăм пӳлĕмре, хĕрпе.
— Пĕрин тасалăхĕшĕн! Тӳсĕр,
Путланăр, пĕтĕр пĕтĕмпе!..

Ху тенӗ этемрен нихҫан та
Пурне те илес ҫук, пӗлеп.
Пӗрин тасалӑхӗшӗн хам та
Эп варалантӑм ҫӗрпеле.

Сана савмастӑп эп, ан уртӑн,
Эс ун мӗлки те мар мана.
Пӗрре кӑна ӑна эп куртӑм,
Илтетӗн-и? Пӗрре кӑна!

Олимпи... Ҫук! Никам та мар вӑл.
Вӑл ман ӑшраччӗ... ӗмӗтре...
Ҫухалчӗ. Йӗр те хӑвармарӗ,
Шевле пек ялтӑр! — пӗтрӗ те.

Каҫарӑр, эпӗ усраймарӑм,
Чуна хупларӗ урӑххи...
Ӗҫ маншӑн, сутӑннӑ хӗрарӑм,
Ку — манӑн пурӑнӑҫ курки...

Кармин туталлӑ хӗр салхуллӑн
Ларать поэт чӗрҫи ҫинче.
— Ну, юрӗ,— тет вӑл,— эп сан пулӑп,
Ӗмӗтрисем вӗсем — инҫе...

— Мӗн ятлӑ эсӗ? — Магдалина.
— Миҫе ҫулта эс? — Пин ҫулта.
Ҫӑвам-и уруна, ыр ҫыннӑм?
— Мӗн, эп Христос-им? — Кам тата?

Хӗр урӑх нимӗн те чӗнмерӗ.
Поэт, ӗҫмен пекех тӑрса,
— Каҫарӑр... акӑ, мейӗр,— терӗ,
Хӗре вун тенкӗ тыттарса.

Хĕр тĕлĕнет: мĕн-ма, мĕскершĕн
Халех укçа тӳлерĕ ку?..
— Сыв пулăр! — тет арçын ĕшеннĕн,
Çавтер мăн айăплăн, салху...

Кармин туталлă хĕр ăсатрĕ;
Хăюсăр, шиклĕн те-и, тен,
Поэтăн галстукне юсарĕ,
Унтан чуптурĕ питĕнчен.

— Вун тенкĕшĕн тесе ан калăр...
Укçашăн чуптумаççĕ, çук.
Калле илме те пултаратăр,
Ан манăр...— тет вăл тухнă чух.

. . . . . . . . . . . . . . .

Хупах сĕрлет. Эрех пĕтмест-мĕн
Раççей мещенĕн телейне.
Çĕршывшăн, сӳннĕ ĕмĕтсемшĕн...—
Черкке черетлĕн çĕкленет.

Пуху пек халăх... Пăсăк мусăк...
Поэт темскер аса илет...
— Тавсси, ман Мефистофель тусăм! —
Тесе тухса утать киле.

## V. Татăлнă ĕмĕт

Çапла иртрĕ пурăнăç...

*К. Иванов. «Нарспи»*

Вăл кĕçĕр куç хупман. Те мухмăр,
Те чир? Пулмарĕ çыварса.
«Ӳпке çĕре пуçлать»,— тет тухтăр,
Кайма сĕнет вăл кăмăса.

Тепри шутлать: «эрех чури» тет.
Вар-хырăм пăсăлнă, катар.
Анчах мĕн-ма вĕсем пĕри те
Сăлтав çинчен каласшăн мар?

Сăлтав ăçта? Ăçта чир хурчĕ?
Епле вăл ернĕ çак чире?
Вăл пуçласа халь уççăн курчĕ:
Сăлтав хура реакцире.

Вăл пĕлнĕ: Хусанта хур пулнă
Асаплă, кăкăрсăр Тукай.
Унпа нумай усламăç пуйнă,
Хăй ларнă чейсĕр те чылай...

Вăл илтнĕ: Кавказра — йăлт урăх,
Илемлĕ, ăшă çĕршывра —
Хăйпе пĕр ятлă Хетагуров
Коста хĕн курнă хытлăхра.

Хăйне илсессĕн,— ун ятне те
Пĕлмеççĕ пуль, вула-вула.
Пĕр шанчăк пур: юрать-ха ĕнтĕ —
Кĕнекере «Нарспи» юлать.

Ватти, юмах тесе пулин те,
Ăна пултарчĕ кăларма.
Хĕн килнĕ пуль хăйне те питĕ...
Раççей — тĕрме те касарма!..

Тен, илтĕç, пĕлĕç... Кĕнекесĕр
Мĕнле калаçăн халăхпа?
Чун туртнă çав таса, пĕртен-пĕр
Ĕçрен те уйăрчĕç... Шăпа!

Сăвва çул çук. Ăçта-ха кайăн?
Эс — шывсăр пулă, пылсăр хурт,
Эс — сывлăш уçлăхĕсĕр кайăк,
Тен, мĕскĕн вĕсенчен çĕр хут!

Чĕлхе ăсти, эс пултăн тарçă:
«Египет ĕçĕ» — куçару —
Сана çаратрĕ, хăшкăлтарчĕ,
Анчах вăл — санăн çăкăру.

Çав çăкăр, çăкăр йĕвенленĕ.
Сăвапшăн, çылăхшăн — ĕçле.
Инспектор «каçаратăп» тенĕ...
Эх, намăс, намăс халь епле!..

«Манра художник та пурахчĕ,—
Тет Иванов хăй ăшĕнче,—
Хупланчĕ пулмалла, хупланчĕ,
Умра халь хуп-хура тĕнче.

Ман ĕмĕтĕмччĕ — Академи,
Халь вăл та татăлать, пĕлеп.
Унта пĕр-ик чăваш этемĕ
Вĕреннине те илтнĕ эп.

Вăй патăрччĕ! Эпир начар-им?
Çынран кая-им ăстăнран?
Тĕнче ăс-халĕ пирĕн мар-им?
Чун илеме туймасть-им ман?

Йăлт — пирĕн пулмалла, йăлт пирĕн!
Чăваш кармашĕ çӳлелле,
Ăнланĕ йăлт,— парсассăн ирĕк,
Анчах кам патăр?.. Илмелле!..»

Стена ҫиччен курать вăл тепĕр
Нихҫан ҫитми хăй ĕмĕтне:
Ав Афродита, пит чипер хĕр,
Пăхать хĕрхенниĕн ун ҫине.

Шăрҫасăр куҫсемпе пăхать вăл —
Юратупа илем турри,
Грексен пиншер ҫулхи мухтавĕ,
Вĕсен шур мрамăрти юрри.

Ав Монна Лиза та ытарлăн
Кулса, куҫ хĕснĕн туйăнать.
Мĕскер вăл хăй ăшне пытарнă?
Мĕнле ăнланмалла ăна?..

Ав Санти Рафаэль шедеврĕ —
«Сикст мадонни» ачапала:
Миҫе пăхсан та тĕлĕнтерĕ,
Пăхтарĕ хăй ҫине ҫаплах...

Мадоннăллă ҫак пĕчĕк пӳлĕм
Халь station-ăн тăвăр ҫав тери.
Пĕр тарăхса, пĕр ӳкĕнӳллĕн
Хыпса ҫунать поэт чĕри.

Епле вăл халь ăна эмеллĕ?
Мĕн сапĕ ҫулăмĕ ҫине?
«Йăваш кăмăллисем телейлĕ...»
Йăпаттăр ку айвансене!

Ку ҫут тĕнче хуҫи пулмашкăн
Хушмасть ҫынна ҫак пурнăҫра.
Хĕрӳ хĕвелшĕн, сĕм вăрманшăн,
Кашлан уй-хиршĕн — ҫын чура.

Лере... мĕçкер лере? Кам курнă,
Кам килнĕ каялла лерен?
Пĕртен-пĕр ÿкĕт: тÿс хĕн-хурлăх,
Вилсессĕн ырлăха кĕрен.

Çитет, çитет! Вăл çĕрĕн-кунĕн
Йлтсе анранă çак кĕлле.
Кунта пурнас килет халь унăн,
Чунтан-вартан пурнас килет!

*

Вĕчесĕр карчăк пек çур уйăх
Пытанчĕ кантăк анинчен.
Вăл халь те куç хупман, çук ыйăх.
Ăçтан, епле-ха тĕлĕрен?

Асра çĕр пин янравлă çемĕ,
Тапать тăнлав тымарĕ ун.
Туять вăл: пуç ыратнăçемĕн
Çунса, типсе пырать пек юн.

Театр, мусăк, хĕрупраçĕ...
Кĕç тăн пĕтсе ларать-и, тен...
Сăнсем, ятсем шуса тухаççĕ...
— Квинтилиан! — тет вăл хуллен.

Чĕнмерĕ шăллĕ, çывăрать-тĕр.
Юрать, çывăртăрах эппин.
«Ыран ирех киле ăсаттăр», —
Тесе шут турĕ Кĕçтенттин.

Ирпе вăл Лермонтова уçрĕ.
Сархайнă пÿрнисемпеле
Сиркелесе, куçпа вăл куçрĕ,
Вара вуларĕ çак тĕле:

«Çук, эпĕ Байрон мар, эп урăх,
Чапа тухман-ха ятăмпа.
Тĕнче мана та кӳчĕ хурлăх,
Анчах эп вырăс чунăмпа.

Эп ир пуçларăм, ир пĕтерĕп,
Нумай тăваймăп ăспалан.
Мăн тинĕс пек чунра, пĕлетĕп,
Выртать саланнă шанчăк ман.

Кам тарăн тинĕс тĕпне анĕ?
Мĕнле хастарлă, харсăр ар?
Кам манăн шухăша ăнланĕ?
Е турă эп, е — ним те мар!»

Хыткан та шурхăн пичĕ çиййĕн
Салхуллă шухăш шăвăнать.
«Чипер юл, çăвăнман Россия!» —
Тесе вĕçлерĕ вăл ăна.

Кĕнекине хупса, пăрахрĕ,
Пирус тивертрĕ вăл унтан.
— Чипер юл, Чĕмпĕр! Чун кăварĕ
Кунта ман ялкăшрĕ малтан.

Мана эс савăнăç та патăн,
Инкекĕм те çук мар. Çитет...
Чипер юл эс те, сумлă ватă!
Ан ман ӳркевсĕр йĕкĕте.

Тен, пушкăрт хирĕсен кăлканĕ
Шăтса тӳрлетĕ чирĕме.
Вăранĕ халăхăм — ăнланĕ
Ман таталнă ĕмĕтĕме.

1929—1930. Хусан

## КĔÇТЕНТТИНЕ

Пушкăртра кăлкан ешерне тапхăр.
Кĕресен чи çĕтлĕ эрнисем.
Йуçтĕр кăмăс талхăрса, хал патăр
Амăшне, çамăлланса çитсен!
Ывăлне кĕтет йăру: тен, çак-тăр
Авалхи юмарт чĕлхеçĕсен
Сăмаххипелен чулту ватасшĕ,
Юн чарасшĕ, тимĕре татасшĕ.

Çакă мар-и чĕртĕ тип çулça.
Кайăка арки çине антарĕ,
Çĕлене пуç çаврĕ каласса,
Тумлама тĕнче куççуль тăварĕ
Тултарса кристаллĕ — нихăçан
Катăлми алмаз пек? Çакă мар-и
Чĕрĕк ĕмĕр сывлĕ те аран,
Пулĕ чи вилĕмсĕрри кайран?

1940

## ÇЕÇПĔЛ МИШШИ КРЫМРА

Тухмасть асăмран! Ыйхăм çук. Хура тинĕс
Шавлать те шавлать манăн пуç вĕçĕнче.
Пăхап кантăкран: тĕнче çав тери тикĕс!
Пĕр çăлтăр кăна таçта сӳнчĕ — инçе...

Ак çак пĕлĕт айĕн, çак хăйăрпала
Çӳренĕ пĕччен вăл, пăрахăççăн, чирлĕн.
«...Малашлăхăм виçĕннĕ ман, ку паллах,
Анчах миçе кун-ши? Ăçта, епле вилĕн?

Кĕскелчĕ пулас. Чӳпĕкленнĕ ӳпке
Тăварлă ирхи нӳрĕкпе чăнтăхать.
Ăçта? Пĕрех мар-и! Чĕртеймĕ ӳпкев
Хăравçă элекçĕсенче чăнлăха.

Эп юрăхсăр çын, вут тĕртевçĕ, эп таркăн...
Çĕршывăм, Назон мĕлкипе тупалап:
Мĕнле те пулин манăн айăп пулсассăн,
Вăл — саншăн çунни. Ӳкĕнме ан калах.

Хăвах, вăй илсе çĕкленсессĕн, ăнланăн:
Эпир пулнă иксĕмĕрех тĕнчере.
Çавтер юратса, чĕрĕлле пăталаннăн,
Саватчĕ, çĕршывăм, сана ман чĕре!

Эп йыхăртăм, чĕнтĕм. Мана сас памарĕç.
Вилсе, ахлатса выртрĕ Атăлăм ман.
Çапах хăрăк ӳт ăшне хутăн кăвар эс
Хĕвеллĕ ыран патнелле ăнтăлма.

Çĕршывăм! Сана эп çулсем урлă куртăм,
Эп куртăм сана ĕмĕрсен леш енче.
Каçар ывăлна: ман самантлăх хĕн-хурăм
Вăл — санăн пинçуллăхун тӳсĕмĕнчен.

Украйнă çеçенхирĕнче эс манпаччĕ,
Манпа эс тăрсаттăн çак тинĕс умне.
Хумсен шавĕнче çĕн чăвашăн хăвачĕ
Санпа пире туйăннăччĕ ун чухне.

Çĕршывăм! Малашлăхуна ĕненнишĕн,
Кăвар кайăкла хыптарнишĕн чуна,
Пурне те манса пĕр санпа тĕлленнишĕн —
Санран мухтав мар эп илтесшĕн çунап.

Сана эп нихçан та кураймăп тек урăх.
Ку — татăклă. Ку халь килет манран мар.
Ман шăммăмсене хӳтĕлес çук тăван улăх,
Тăван Атăл мар лăпкĕ ман тăпрама.

Ăçта тĕшрĕлсен те, ăçта эп выртсан та,
Шантар йыхăравăм ман пăчланмасса,
Шантар — ирĕкре çуралас сăвăç-тантăш
Илтсе çĕклессе ман тархаслă сасса.

Çĕршывăм! Эп çамрăкчĕ. Тин аталаннă.
Ман пĕр юратуччĕ хĕвел айĕнче:
Вăл — эсĕ, телей те, асапăм та манăн,
Кама халаллам-ши сана кайиччен?

Тăван чĕлхемпе пĕр-пĕччен эп, çĕршывăм,
Мана ăнланас текенсем те инçе...
Пулах, юлашки юн тумламĕ, чĕр сывлăм,
Çунах халăх чĕрĕлĕхĕн çеçкинче!..»

. . . . . . . . . . . . . . . .

Сиреп чаршава. Хĕвелтухăçĕ — нар пек.
Çухалчĕ, чĕнмерĕ тек Çеçпĕл Мишши.
Ăнлантăм. Паян нимĕн те кирлĕ мар тек.
Хăçан вăл тепре ман патма килĕ-ши?

Ман пуç çунăхать. Куç айсем кăн-кăвак-тăр.
Тата вĕçленмен шухăшсем пурпĕр ластăк.
Эп вырăн çине йăванап салтăнмасăр.
Тĕнче хупăнать. Нимле тĕлĕк курмастăп.

1936. Евпатори

## ПАВЛО ТЫЧИНĂНА

Пĕр вичкĕн квинтина, пĕр çирĕп терцина
Пулса сан сассу çĕкленет.
Салтак пек пырать пирĕнпе халь Тычина,
Приказ юрă пек илтĕнет.

Музей ишĕлет, сад çунать... Бомба, мина
Çĕре, пĕлĕте кисретет.
Анчах нихăçан вилес çук Украина,
Юрри пĕтмĕ ун ĕмĕрте.

Çут шуçăм çинче халлĕхе юн, куратăн,
Хаяр тавăру юррине эс юрлатăн:
«Клаас! Сан кĕлў çунтарать чĕрене!»

Хăватлă Тарасăн таса амăшне
Эс йывăр кунра пăрахмарăн,
Чăн ывăлĕ пек ыталарăн.

1944

## МИЦКЕВИЧ

Юнлатнă Польшăмăн вĕри куççулĕпе
Ман çилĕллĕ сăввăм сăнчăрăра пат таттăр!

*А. Мицкевич. «Вырăс тусăмсене»*

Буг урлă каçсанах, ҫоляк çĕршывĕнче,
Кĕретпĕр пĕр яла... çурт çукчĕ ялĕнче...
Унта мĕн курнине эп манмăп виличчен,
Картинĕ кивĕ те — çапах куç умĕнче:

Çыр хĕррине пăхса, шап-шур старик пĕччен —
Çаратнă, тăлăхскер — тăратчĕ кĕл çинче:
Тертрен хăтарасса вăл кĕтнĕ тахçанччен,
Ун ĕмĕтне сыпма пыратпăр Буг енчен.

Çунтарнă пĕтĕмпех. Поэт сăнĕ кăна
Сыхланнă теплерен. Вăл курнă пек мана.
Эп ун çине пăхса чĕнмесĕр иртеймерĕм:

— Мицкевича салам, тăван саламĕ! — терĕм.—
Сан çилĕллĕ сăвву, патмар çар çынни пек,
Телейлĕ Польшăшăн утать халь пирĕнпе.

1944, июль. Польша

## ПОЭЗИ ПУЛСАН...

Поэзи пулсан — ăш хыпса çуннă чух
Выртса ĕçмелли шыв пек пултăр;
Кашни сăвăпа, савнипе чунпа чун
Калаçнă пекех, кăмăл тултăр.

Поэзи пулсан — ĕçлесе ывăнса
Сÿсленнĕ ÿте паттăрлăттăр;
Хула-çурăма мунчара çăвăнса
Тасатнăн çынна вăл тасаттăр.

Поэзи пулсан — тÿшекпе-минтерпе
Выртса каçхине эс вулуçăн
Çĕклетĕр сана хăйвĕçен кавир пек,
Çил çеç варкăшса вĕртĕр уççăн.

Поэзи пулсан — журналсем ун анне
Хĕссе лартиччен вăл пĕр тапхăр
Пĕçерттĕр наборщик аллин тупанне,
Чунна çĕнĕ çулăм хыптартăр.

Поэзи пулсан — вăл мантартăр ĕçке;
Сăвва сыпкăмшар астивсессĕн,
Калатăр этем: «Ку тата тутлă-çке!
Çакна тахçанах астивес-мĕн».

Поэзи — шырав, кĕрешӳ, ăмăрту,
Ача йăл кулли, гени тарĕ,
Имçам, юрату, кӳлешӳ, аркату,
Тĕнчемĕр нуши, пархатарĕ.

Поэзи — çĕрти пур йышши сĕткенпе
Хĕвел шевлисен чĕр хăвачĕ...
Эп хам кам пулсан та, йăхран çакăн пек
Поэт тухнине ман курасчĕ!

1954

## ПУШ УЙĂХĂН ВĔÇĔНЧЕ

Пăхатăп кăçалхи календаре.
Çак мартăн çирĕм улттăмĕшĕнче
Хурланмалли хыпар вăл пĕлтерет
Нарспи çырса хăварнă çын çинчен.

Вулатăп эпĕ: «...сăвăç-демократ
Вилни кăçал тултарчĕ хĕрĕх çул...»
Вăл пурнăçсăр пулнишĕн чун макрать,
Ун мухтавне курсан — типет куççуль.

Ун ырă ячĕ вĕçĕмсĕр пырать.
Ик хĕрĕх çул та иртĕ, пиллĕк те...
Паян чысра вăл аслă çĕршывра,
Ыран ăна тĕнче тӳпи кĕтет.

Чăваш хăйне «чăваш эп» тенĕ чух
Кĕнекери кăвар пек сăмаха
Истори сивĕ кĕлĕ витес çук,
Вăл усрĕ хăй вутне нумайлăха.

Культурăсем пыман ĕмĕрлĕхе:
Асра Ассири те, Египет та...
Пăрахăç пулĕ, тен, тăван чĕлхе,
Анчах ку хурлантармĕ поэта.

Гомер грексемшĕн уçах мар ку чух.
Кивелнĕ теççĕ Данте чĕлхине.
Анчах та «Илиадăн» вилĕм çук,
Тĕлĕнтерет-ха «Тамăк» тĕнчене.

Пăхăрпала тăхлан пăтрашăнса
Илемлĕ, çирĕп бронза пулнă пек,
Çак хамăршăн ытарайми таса
Чĕлхемĕр те çухалмĕ пĕтĕмпех.

Ытти чĕлхесемпе пĕр хуранта
Вăл варкăшĕ те пиçĕхĕ татах;
Юлашкинчен, хытсах ларсассăн та
Упранĕ, тен, тĕлĕнмелле сăмах.

Çак чĕлхенех вăйне пара-пара,
Поэт хăватлă шухăш хăварсан,—
Ун чапĕ кайĕ пĕтĕм çĕр тавра.
«Камран?» —тесессĕн, калĕç: «Чăвашран!»

1955

## МИТТА ВАÇЛЕЙНЕ АСĂНСА

Чăваш чĕлхи пур чух
Тăван поэт ятне
Вĕри кăвар чунсем
Савма пăрахас çук.

*Çеçпĕл Мишши*

Тантăшăмсем кайса пыраççĕ:
Пĕри — инçе, тепри — килтех...
Хитре хĕрсем ыраш выраççĕ,
Тапса çыхаççĕ сар кĕлте.

Ах, сарă çав, хĕр пек тирпейлĕ,
Кĕлте çыххи те — хĕр сарри.
Купаланать, ӳсет çĕмелĕ,
Вăл чĕрĕ палăк пултăр-и?!

...Асра йĕрсе янрать-ха мусăк.
Утатăп тупăк хыçĕнчен.
Чĕрем салхуллă, кăмăл хуçăк.
Сывпуллашатпăр... Хăçанччен?

Анчах чăваш уй-хирĕ çийĕн
Ăна-кăна пĕлмен тăри
Юрлать, юрлать телейĕ çитнĕн,
Чĕрĕлĕхе мухтать юрри.

Эп ывăçă тăпри сапатăп,
Кураймăп ырă çыннăма.
Илемлĕ, уçă сăн-сăпатăн
Кунне хупларĕ хыр хăма.

Тин мар-и халĕ сăнӳкерчĕк
Çаптартăмăр ыталанса?
Çӳçне вылянчăк çил вĕçтерчĕ,
Çаплах вăл юлчĕ ман аса.

Çаплах сĕтел çинче те акă,
Кулса, тӳрех куçран пăхса,
Ларать вăл — тĕрĕслĕх салтакĕ —
Яланлăх, ĕмĕрлĕх таса!

...Каçкӳлĕмччĕ. Вăркать, вăркать ăш.
Тусан лĕпленчĕ çул çинче.
Шăпланчĕç тăрисем. Пĕр карăш
Тăсать хăй çеммине пĕччен.

Шăрăхпала ĕшеннĕ курăк
Каллех çĕклет çулçисене.
Анчах вăл çук. Вăл килмĕ урăх.
Пусаймĕ ешĕл çĕр çине.

«Хăй çĕрĕнче вилен — телейлĕ»
Темешкĕн ĕлкĕрнĕ поэт
Мĕн чухлĕ çыннăн çав мехелĕ
Çитменнине асилтерет!

...Каç чатăрĕ çĕре хупларĕ,
Кăваккăн курăнать тавра.
Куç хупасси çав каç пулмарĕ.
Пĕртен-пĕр шухăш пуçăмра:

Сĕм вилĕм мăшкăлне çĕнесчĕ,
Тĕнче илемĕ — этеме
Тĕнче тĕлĕнмеллех çĕклесчĕ
Хăй несĕлĕ хĕпĕртеме.

Кашнин упрантăр ырă ячĕ,
Мухтантăр халăх унпалан...
Шарăлтатса авăтса ячĕ
Ял пуçĕ — малтанхи автан.

Тул çутăлса килет. Кун ырă.
Хĕвелĕмĕр! Эс пур чухне
Тăван йăх сывă. Хăй вăл çырĕ
Кунçулĕн аслă çыруне!

1957

### ЭЛКЕРЕ

Çуллен сайраланса пыратпăр
Асаплă ватă салтаксем.
Сурансенчен те хăтăлатпăр:
Салтаҫ, сестра, пит ан тĕксем...

...Чăваш çăлтăрĕсем яп-ялтăр,
Шултраланаççĕ кĕрхилле:
Ав Кĕвенте, Ала, ав Алтăр...
Çӳлте те пурнăç çĕртилле!

Эс ху та çăлтăр хушаматлă,
Пĕр ярăм çăлтăрччĕ: Элкер!
Каятăн... Çут тĕнче — самантлăх.
Çĕртен шăтса çĕрех кĕрер.

Элчел çитсе куçна хупрарчĕ.
Тусу та, тăшману та çук.
Хăшне, тен, алă та çуптарчĕ,
Ун пеккисем те пур ку чух...

Эс канăçсăрччĕ. Кансĕрлеттĕн.
Мĕн кирлĕ пулнă? — Хушăн мар:
Эс халăх кăмăлне пĕлеттĕн,
Чăвашшăн сапрăн шĕл-кăвар.

Çав шĕл-кăвар — чăваш сăмахĕ,
Чечен чĕлхе — чăваш чĕлхи.
Вăл упрансассăн — хам хамах эп,
Упранмасан — эп çын мĕлки...

Патшалăх — хамăрăн. Патшалăх!
Пур конституци — Тĕп Саккун.
Апла пулсассăн, пур т ĕ п халăх,
Çĕршыв тытма чĕлхи пур ун.

Республика! Чăваш Çĕршывĕ!
Уес-кĕпĕрне мар текех.
Вăл аслă тĕнчене çул хывĕ
Ракетăллă карап пекех.

Чăваш чĕлхин сăвап-хисепĕ
Пин хут та ӳсĕ хальхинчен.
Чăваш ятпах кĕресшĕн эпĕ
Коммунăн аслă хапхинчен!

...Элкер, Элкер... Чăваш мухтавĕ!
Эс юлашки могикан мар.
Тăпру çинче пур халăх тавĕ
Палăкупа халь юнашар.

Йĕри-тавра (эпир кĕтетпĕр!)
Çĕкленĕç çĕнĕ ăстасем.
Çĕр пин сăмахлă вут-чĕлхемĕр
Çиçтерĕ вĕçĕмсĕр хĕлхем.

Çакна шанми пулсан, кăвак пăр
Пулса пăрлантăр ман чĕре!..
Яшсем! Сире шанса каятпăр,
Çитерĕр ĕмĕтĕмĕре!

1968

## ВĂТĂР ПИЛĔК ÇУЛТАН

*В. Маяковские*

Çитмĕл çитрĕ. Çуррине кăна
Пурăнма пултартăн чĕрĕ халлĕн.
Тен, çавна сиссех, пайтах хăвна
Çĕр тавра кумтартăн каллĕ-маллĕ.
Прага та Берлин, Нью-Йорк, Париж...
Пĕр-пĕр Монте-Карло та Гавана...
Кур этемлĕхе, яра пар — иш,
Вĕç е автопа сана аван-и...
Сăвăçăн курас-илтес пулать,
Саманамăр кĕнеки пит аслă.
Эс, ăна уçса вула-вула,
Пĕр çиллес çӳрерĕн, пĕр хаваслă.
Эс васкатрăн пирĕн вăхăта:
Çĕр çинчи пур кивĕ сăн-сăпатăн
Кичемне çулта хăрта-хăрта,
Çĕннине сăрт урлă сасă патăн.
Сăвă хыççăн сăвă ĕлкĕртсе,
Эс хăвна «телей завочĕ» терĕн.
Телейне кашни килех кĕртсе,
Ху телейсĕр юласса пĕлмерĕн...
Урăхла пулма пултарайман:
Чăн поэт пулсан эп — ман талантăм
Çаратса каять хамах кайран,
Пурăна-киле çавна ăнлантăм.

Хыпса çун-ха эс çине-çине
Амаланнă ялкăшан кăваррăн!
Ху каларăш — пĕтĕм тĕнчене,
Пĕтĕм çутçанталăка сан парăм.
Шăнăçтар-ха эсĕ пĕтĕмпех
Пĕр пуçа, пĕр чĕрене, чуна!
Этемпе тата пул этем пек:
Ачашла, юрат, сав ачуна...
...Вăтăр пилĕк çул вĕçсе ăсанчĕ
Кайăк хур карти пек кай енне.
Мĕнешкел çулсем! Эс курайсанччĕ!..
Хусанта хĕллеччĕ ун чухне.
Çил-тăманлă, куç курми каçкӳлĕм
Эп хăйса шаккарăм сан патна.
Эс тăрсассăн тăвăрланчĕ пӳлĕм.
Те унччен канайрăн кăшт кăна?
Çук, сана канма памарĕç, ахăр,
Манашкал пуçтах та сĕмсĕрсем:
Сассуна илтесшĕн çур хуламăр
Хатĕрччĕ кĕмешкĕн çĕмĕрсе!
Мĕн калаçрăмăр? Эс Улăп пекчĕ,
Эпĕ — санăн кĕсйӳнти сухаç.
Хам вăя çапах та ĕнентерчĕ
Эс сăмах хушни мана çав каç.
Халь кунçулăм тӳпинчен пăхатăп:
Пĕрех çех курнисенчен пĕри,
Асăмра нихçан та пулмăн вата,—
Сывă, харсăр, вут пек эс вĕри!
Вăйпиттин, илемлĕн, алтăр куçлăн
Эп сана курсаттăм ун чухне.

Ĕмĕрех çапла эс кĕрсе юлăн
Саманан, çĕршывăн кунçулне.
Саннинчен ытла ман кун хисепĕ,
Шурă юс юртать тăнлав çинче.
Тепĕр чух сăввăмсерен, сисетĕп,
Чун сыппи çип пек пулать çинçе.

Çав-çавах, хамран килет пулсассăн,
Усрăттăм тата пăртак хама.
Каппаймасăр каласан — ман сассăм
Кирлĕ пек тăван халăхăма.
Пысăк хурлăх мар пек халь туя та,
Шур сухал та, куçлăх та мана.
Саманамăр туртăмне туятăп,
Мĕн тата кăтартĕ самана?
Çăлтăр витĕр çӳлелле вĕçетпĕр,
Эс ĕмĕтленни çитсех пырать.
Космонавтшăн сăвă — савнипе пĕр,
Ахăртнех, ку пĕлтерет ырра.
Çамрăк сăвăç-терĕш пухăнаççĕ
Мускавра сан палăку тавра.
Сăввине чĕвен тăрса калаççĕ,
Сан сăнна кураççĕ бронзăра.
Эп унта пыма пултараймастăп:
Темле сивĕ çапнă пек чуна...
Чĕрĕ халлĕн курнинех манмастăп,
Астăватăп ăшă аллуна.
Пурăнах ăшра, çутал асра та
Иртнине кăтартнă тĕкĕр пек.
Эп сана ялан курса тăратăп
Юнашар хам çамрăк ĕмĕрпе.
Ăшăтать чуна çав çутă курнăç.
Йӳтесе йăлтах сӳтĕличчен
Пытăрах, эппин, çак чĕрĕ пурнăç
Çак пĕртен-пĕр ешĕл Çĕр çинче!

1963

## СЕРГЕЙ ЕСЕНИН ПАТĔНЧЕ

Ока шывне укалатса
Хĕвел анас патне пыратчĕ,
Хăй мĕлкине юпалатса
Шыв урлă вăл тăсса яратчĕ.

Тӳлекчĕ. Çукчĕ тарăху.
Шыв юхăмĕ те паллă марччĕ.
Шап-шурă çăмăл пăрахут
Мана антарчĕ те хăварчĕ.

Çара та тăмлă сăрт çине
Хăпартăм. Ялĕ çӳлерех-тĕр...
Чиркӳ тĕрленчĕ куç умне,
Хăй çырнă пек — тăрри хĕрессĕр...

Пăхатăп çаврăнса калла:
Çырма леш енĕн тавракурăм
Каять таçтах аяккалла...
Çĕршывăн анлăхне эп туйрăм.

Çĕршывĕн, халăхĕн, чĕлхин
Чăтăмлăхне сиссе илетĕп.
Грекран Варяг таран халь тин
Çул хывнă пек эп тĕлленетĕп...

Урамалла виç чӳрече,
Ялти нумай-нумай пӳрт пек.
Тăрап ик йывăç хушшинче:
Пĕри йăмра, тепри тирек.

Поэт хăй лартнă вĕсене.
Йăмри хăрса пырать иккен,
Тирекĕн хăвăлĕсене
Цемент тултарнă. Ларĕ, тен...

Ялта, таçта сулахайра,
Кăраклатаççĕ кураксем.
Тирек йывăççисем тавра
Сас хытăрах каç пулнăçем.

Унта — курак сасси енче —
Ларать-ха мезонинлă çурт.
Вăл Кашин çĕр улпутĕнчен
Юлса упраннă — ялшăн ют...

Çав Кашин таврашсен пики —
Сăн панă, имĕш, поэта:
Вăл Анна Снегина пекки,
Çапла пуплет халь халăх та.

Кĕретĕп картишне, пӳртне.
Чĕриклетет пусма картламĕ...
Епле мана, ял çыннине,
Çак кил ăшчикĕ хумхантармĕ?!

Сăнатăп: сăвăç сăнĕсем...
Ар тантăш-тусĕ... кĕвентеллĕ
Хĕрсем, шушунлă [1] арăмсем...
Çăпаталли те пур... Ял çемлĕ.

[1] Шушун — килте тĕртнĕ çӳхе те шурă çăм тăларан çĕлетнĕ хĕрарăм тумĕ. Есенин хăй амăшĕ çинчен çапла çырнăччĕ: «Йăли тухнă кивĕ шушунпа».— П. Х.

Унтах çиçет куç умĕнче
Ытарайми Дункан илемĕ:
Таçти ют çăлтăр тӳпинчен
Анман-ши татăлса? — Пĕлеймĕн...

Ик-виçĕ пӳлĕм. Ытла мар.
Асран тата, тен, çакă тухмĕ:
Сĕтел çинче сар сăмавар,
Шкапра — туя, Париж костюмĕ...

Пĕр кĕтесре — çăвăнмалли,
Кăмканĕ чугунранччĕ пулĕ...
Автанлă вырăс питшăлли,
Тăм саватсем вырнаçнă çӳлĕк...

Хăй пуранна чухне илемлĕн
Ешернĕ сачĕ халь çара.
Тин лартнă пĕчĕк йывăçсенĕн
Ырри-шырри — малашлăхра.

Сăвва вырнаçнă вĕрени те
Хăрса йăванна. Халь яшши
Ăна хуса çитесшĕн питĕ,
Анчах пĕр ĕмĕр-ха хушши...

Сыхланнă улăм витнĕ пӳрчĕ.
Унта кӳртмеççĕ. Кантăкран
Путмар та пĕр сĕтел куç курчĕ,
Пĕр лампа, тăрăх сак, пукан.

Ыттисенчен ытла пăхтарчĕ
Пӳртри сӳс кĕнчели мана:
Сар ывăл çырнă чух арлатчĕ
Пуль савнă амăш пĕр кана.

Çак пĕчĕкçĕ пӳртре çуралнă
Пит йышлă пысăк шухăша
Тĕнчешĕн, çынлăхшăн суранлă
Чĕри юн панă тăтăшах.

Çапла: тĕнче шухăшĕпе
Кунта вăл пурăнса ĕçленĕ.
Пит çамрăк, тин шăтайнă пек —
Çĕре кĕме те хатĕрленнĕ.

Ун чĕрĕ кунĕ-çулĕнчен
Ик хут эп аслăрах тăратăп,
Çак юмахла çĕршыв çинчен
Вĕçĕ-хĕррисĕр шухăшлатăп.

Юмахăн тупсăмне тупман.
«Раççей вăл — Сфинкс»,— тет пĕр поэчĕ [1].
Тен, Айседора та — Дункан —
Ăна тупас тесе тертленчĕ.

Ма гени çакă çурçĕрте
Пит ир е сарăмсăр вилет-ши?
Мĕскер касать? Мĕскер хĕртет?
Мĕнле тытамак силлет-ши?

Ăнланайман Дункан çавна,
Анчах çак ял ӳстернĕ гени
Куç пăвнă Айседорăна,
Таса çăл шывĕ пек чӳхенĕ...

Нумайăшне курса пулмарĕ,
Сана тĕл пулманни — инкек,
Мĕн-ма тесессĕн ял тымарĕ
Пулсаччĕ пирĕн пит пĕр пек.

---

[1] А. Блок. «Скифсем».

Сăмах тупăнатчех, курсассăн,
Вунулттăри ял ачине
Сăввун шарлакĕпе эс сапрăн
Ӳкереслех çак çĕр çине!

Тараттăм та каллех пыраттăм
Шарлак айне — шапариччен!
Пĕли-пĕлми алпа çыраттăм
Сан майлă хам та — анриччен!

Малтан çапла пулать те пулĕ:
Такам çатăрласа тытать;
Ача мĕн вулĕ — çавă юлĕ
Асра, чунра та кăмăлта.

Пурне те халь аса илсессĕн —
Чĕррисенчен чи малтанхи
Эс тиврĕн чĕрене, Есенин,
Сана тавссийĕм. Яланхи.

1968, çу уйăхĕ. Мускав

## ОВИДИЙ НАЗОНА

Констанца. Хура тинĕс хумпа хутăш
Тăкать ума çулсем те ĕмĕрсем...
Овидий! Сан çинчен паян ман шухăш.
Инçе те, çывăх та хушшăмăрсем.

Çак çĕршыва сана пуç янă пулнă.
Ак çирĕм ĕмĕр ĕнтĕ çын пуплет:
Эс, имĕш, юратушăн хурлăх курнă,
Юратăвĕ — вăл хăйĕннех пĕлет.

Вăл — ирĕклĕх. Хĕстерĕннĕ пулсан та!
Вăл — ирĕк туйăм, ĕмĕт, шанчăк ман.
Римри диктатор поэта нихçан та
Мыскараçи шайне те вăл картман.

Чи лайăх шухăш — Кай енче, Малта-и —
Çаптарнă вирелле вăл халиччен.
Ăна путарнă пĕр-пĕр тăрпалтайĕ
Мăчавар е патша хушнипелен.

Анчах вут'чулĕ ăшĕнчи хĕлхемĕн
Çав шухăш пурăннă çын чĕринче.
Вăл хыпнă çулăмăн, мехел çитсессĕн,
Вăл çĕнĕ çăлтăр çутнă хăйĕнчен.

Хивре сӑмах юптарӑвӑн, юмахӑн
Кӗрсе вырнаҫнӑ чухӑнсен килне.
Ман, акӑ, тӳрӗ каланать сӑмахӑм:
Эпир курасшӑн юмахсен чӑнне.

Эпир хальччен пулман тӗнче тӑватпӑр
Этемлӗх пухнӑ пӗтӗм вӑйпала.
Хисепсӗр ту-сӑрт урлӑ кармашатпӑр,
Ку питӗ, питӗ йывӑр япала...

Хум ҫапнине итле-итле тӑратӑп
Сан умӑнта, Овидий, эп пӗччен.
Сан шухӑшлӑ ҫамку ҫине пӑхатӑп,
Шутлатӑп хурлӑхлӑ шӑпу ҫинчен.

Тупман сана. Тӑпру таҫта ҫухалнӑ:
Пуҫ янӑ ҫыншӑн мрамор лартӑнман.
Анчах истори сӑввуна усранӑ,
Эс вилӗмсӗр яланлӑх унпалан.

Патша тавраш керменӗ, пирамиди,
Гранит юпа, шур мрамор кӳлепе,
Ялавӗ, гербӗ, скипетри — пӗри те
Тавлашаймасть поэтӑн сӑввипе...

Чун туртнӑ ӗҫӗме савса тумашкӑн
Кунта чӗре хевти илетӗп эп,
Ӑста этем туптанӑ чӑн сӑмахӑн
Чи пархатарлӑ хӑватне сисеп.

...Сыв пул, Назон! Кунҫул вӗҫне пӗлместӗн.
Анчах ӑҫта ҫитсен те виличчен,—
Сандалипе эс утнине илтсессӗн,
Мана халь ӑшӑ пулӗ ҫӗр ҫинче...

196(?)

* * *

*А. Ахматовăна*

Поэзи вăл — уйрăм патшалăх,
Ăна чинпала эс виçеймĕн:
Ĕнер тиркени — халь пахалăх,
Паян мухтани — тен, пиçеймĕ...

Сăмахăн тĕп ылтăнĕ — чăнлăх,
Ăна хурласа хуратаймĕç.
Поэзи вăл çамрăк яланлăх,
Ни пенси çук уншăн, ни канăç.

1964

* * *

Инçе çула пуçтаранатăп...
Чĕрен кашни хĕлĕхĕпе
Татăласлах эп карăнатăп
Ĕнернĕ сĕрме купăс пек.

Ĕнернĕ, сĕркĕчне хытарнă,
Хăми — янахăм айĕнче.
Мехелĕм çитрĕ — пархатарлă
Кĕвве итлетĕр çут тĕнче.

Пĕр пăсăк сасă та ан тухтăр,
Ан йĕрĕнтертĕр хăлхана.
Яш çын илтсен — тата яш пултăр,
Ватти — йăпантăр пĕр кана.

Йăпантăр, яшлăхне асилтĕр,
Шыратăр, туптăр хăй сăнне.
Шăлан йĕппиллĕ чăтлăх витĕр
Тухатпăр чăнлăх уçлăхне.

Çав уçлăхран вара куратăн
Йĕри-тавра инçе-инçе.
Тумхахлă та иккен, хура та
Эс утнă çул çак çĕр çинче.

Куҫа хупса аса илсессĕн,—
Мана мĕн чухлĕ тӳнккемен!
«Аванччĕ пĕрех хут вилсессĕн!» —
Тени те пулнă пулĕ, тен.

Ҫапах та купăсăм кунҫулĕ
Итлекене ахаль пухман.
Тен, йăнăш сас та тухнă пулĕ,
Анчах та урмăш сас — тухман!

1963



ПЕТĔР ХУСАНКАЙ

МЕХЕЛ

# ПĂЛХАР ПОЭЗИЙĔНЧЕН

## *ЛАМАР (1898—1974)*

### ХӐНА

Эс ман пата кӗрсессӗнех —
Пулса тӑратӑн ҫывӑх тусӑм.
Тулта, тен, ҫил ҫине-ҫинех,
Шалта пит ӑшӑ манӑн ҫуртӑм.

Санпа эпир — ик скульптор, тен:
Ҫӗн шухӑшӑн чулне чутлатпӑр.
Вӑл ҫуралать те — ҫӗнӗрен
Тӗнче пуҫланнӑ пек туятпӑр.

Ӗҫетпӗр иҫӗмӗн симне —
Шурӑмпуҫчен! — чуна уҫмашкӑн.
Тавралӑх ҫуттӑр илемне,
Ялтратӑр симӗссӗн-кӑваккӑн!

Эс ман хӑнамҫӑм. Ак сана
Хам вата асаттен путмарӗ.
Нихҫан та ҫакӑ вырӑна
Пуҫне таймасӑр вӑл выртмарӗ.

Выртса канах. Чӑлха-тӑла
Шур кӑмака ҫумӗнче типтӗр.
Тул ҫав-ҫавах вӑл ҫутӑлать,
Ҫак ӗненӳ сӳнмесӗр ҫиҫтӗр!

1968

## *ВЕСЕЛИН ХАНЧЕВ (1918—1966)*

### ÇĔРПЕ ПĔЛĔТ

Этем çак çĕр çине çуралнă.
Анчах вăл пĕлĕте çĕртен
Курас тесе икураланнă,
Хăранă пĕлĕт çĕтесрен.
Сайра хутра тивен ачашлăх,
Ĕç-хĕл е чир-чĕр хушшинче
Вăл юн тăкăнсан мар хаваслă —
Çунат ӳссен хăй çумĕнче.
Этем çак çĕр çине çуралнă.
Анчах çӳлте — таçта-таçта —
Вăл çутă çăлтăрсем ширанă,
Çырлахайман тупсассăн та:
Пĕрне пĕлсе çитсен, теприншĕн
Вăл çуннă-хыпăннă ялан,
Пурне те хăй ĕлкĕрессишĕн
Вăл вилĕмрен те хăраман!
Этем çак çĕр çине çуралнă.
Анчах, упаленсессĕн те,
Тусан çăтсассăн та, шутланă
Вăл çĕкленмешкĕн пĕлĕте.
Ан тив, вăл хăй те пултăр суккăр,—
Тӳпе çапах та курăнать;
Тен, пĕлĕчĕ пачах та çук-тăр,
Этем ăна хăй пур тăвать.

## ЮРАТУ

Ăçта эс халь? Сан пӳлĕмӳ сĕм-тĕттĕм.
Анчах пĕлетĕп: эс килтех, пĕччен.
Пĕрремĕш хут пит ӳкĕнсе эп кĕтĕм,
Халь тин ман кĕмелле те марччĕ, тен...
Тен, пирĕн тек курнăçмалла та мар-и?
Сана асаплантартăм çав тери!
Мĕн парăп-ха? Ачашлăхăм юлмарĕ.
Хĕрхӳн пĕркеленет тутам хĕрри.

Мĕскер ман юлнă? Măшăр ал тесессĕн,—
Сана тытма та намăс пек халь тин.
Ăçта-ха эс? Çĕкле пуçна çиллессĕн,
Ылхан мана эс, тавăр. Çап, эппин!
Шур пир пек шурă аллупа мăнаçлăн
Кăтартчĕ хура алăк çинелле,

Кала эс: «курайместăп!» те, е саншăн
Эп ним те маррине ман пĕлмелле.
Тивĕçлипе эс кăмăлна шăнтатăн.
Пин айăп пулĕ ман сан умăнта.
Тăратăн. Ман патма утса пыратăн.
Калатăн курăнмасăр: «Юл кунта».

## ПУРНАЙМАНШĂН КУНÇУЛ ПУЛМАЛЛАХ

Çук, мехелсĕр пĕр нимĕн ан пĕттĕр,
Пурнайманшăн кунçул пулмаллах.
Шухăшна тепĕр çын санне пĕлтĕр,
Хурăн çулçă кăлартăр çаплах.
Хăвăртрах çыр хĕрне ишсе çиттĕр
Тинĕсри мăн карап, пĕчченскер,
Окопа çул сасартăк ан сиктĕр,
Çуралманĕ çуралтăр чипер.

Мĕскĕн тăлăх-турат пек ан пăхтăр
Тăррине витмен пӳрт, хурланса,
Алăри тин пуçланă шур çăкăр
Е çыру, адресне шыраса.

Хĕвеланăç пĕччен ан хĕрелтĕр,
Пуçтармасăр ан юлтăр çырла,
Хĕр алли ар тути тĕкĕнмесĕр
Ан шуралтăр типсе малалла,
Вучахра вут ан сӳнтĕр тек пирĕн,
Çырайман сăввуна — çырмаллах!

Çук, мехелсĕр ан пĕттĕр пĕр нимĕн,
Пурнайманшăн кунçул пулмаллах.

## ÇĔРĔ

Эс ман пата утни сасартăк темшĕн
Аслатилле тивнишĕн чĕрене,
Мĕн панине калла илес теменшĕн,
Каçарнăшăн пур çылăхăмсене,
Калас хыт сăмахна тытса чарнишĕн,
Чарма хал çук ачашлăхушăн та,
Ху вăйсăр чух мана вăйлантарнишĕн
Çĕклентерсе ăшри пур хăвата,
Ман ятăмпа эсĕ ырă та, усал та
Курса пăхнишĕн хăвăн ĕмĕрне —
Сан пĕчĕк пӳрнӳне эп чуптăватăп,
Ку пултăр ылтăн çĕрĕ вырăнне.

*ДИМИТР ПАНТЕЛЕЕВ (1901)*

## МАНĂН ТĔНЧЕ

Сарлака, пĕр пек мар тĕнчере пурăнатпăр:
Тăнăç, çутă тĕнче пуррипе савăнатпăр,
Тӳрĕ ĕç, пултарулăх паха пире питĕ.
Анчах пур кĕвĕç-вĕчĕх, суялăх тĕнчи те.
Пур юлташлăх тĕнчи, кайăксем, сиплĕ курăк,
Анчах пур хура юнлă хурах та, пур хурлăх.
Пур уявлă тĕнче, вăл çурхи çут хĕвеллĕ,
Анчах пур тискерри: вăл инкеклĕ, синкерлĕ...
Сан тĕнчӳ?
Ман тĕнче — пĕр тăхтавсăр вĕçев, вăл çунатлă,
Ман тĕнче — ырă кăмăл тата ăшă алă.

## ТУПМАЛЛИ

«Мехел тени мĕскер тени пулать...» . . . . . . . . 3

## МЕРЧЕН ТУМЛАМ

Çĕршывăм, пилле! . . . . . . . . . . . . . . . . . 8
«Илтĕм шурă хут...» . . . . . . . . . . . . . . . 10
«Лаштра кăна хурăнне...» . . . . . . . . . . . . . . 12
Хĕр йĕрри . . . . . . . . . . . . . . . . . 13
«Мĕнпур çĕр çинчи чĕрĕ чун...» . . . . . . . . . 15
Пусăра . . . . . . . . . . . . . . . . . 16
Аннене . . . . . . . . . . . . . . . . . 18
«Çутă кун иртет те, килет тĕттĕм каç...» . . . . . . 20
«Хĕрӳ хĕвел хĕрле хĕрелсе анчĕ...» . . . . . . . 21
Ăйăр . . . . . . . . . . . . . . . . . 22
Авалхи туй . . . . . . . . . . . . . . . . . 24
«Çуралса поэт ятне илтмешкĕн...» . . . . . . . . 26
Çыру . . . . . . . . . . . . . . . . . 28
«Сăвăлассăм килместчĕ ман урăх...» . . . . . . . 30
«Çуталас умĕнхи кăвак шуçăм...» . . . . . . . . 31
«Кӳлĕ çинче ярăнатăп пĕччен...» . . . . . . . . 32
«Çăка çаралнă...» . . . . . . . . . . . . . . 33
Чăваш тĕрри . . . . . . . . . . . . . . . . . 34
«Каллех, чăваш столици, эпĕ санăн...» . . . . . . 36
«Юр шывĕ сăрхăнсах пĕтмен чухне...» . . . . . . . 37
Уç çыру . . . . . . . . . . . . . . . . . 38
«Çил шăхăрать, çил шăхăрать...» . . . . . . . . 39
«Çанталăк çанĕ — чух ула . . . . . . . . . . 40
Мерчен тумлам . . . . . . . . . . . . . . . . . 41
«Хура каç. Шурă юр...» . . . . . . . . . . . 42
«Тултарăр савăш куркине...» . . . . . . . . . . 44

«Ку яла эп аван астăватăп...» . . . . . . . . 46
Хумхан, Хура тинĕс! . . . . . . . . . . . . . 48
«Шупашкар, Шупашкар, Шупашкар...» . . . . . 50
«Ку чух поэт пулмашкăн йывăр мар-тăр...» . . . . 52
Сăлпăран . . . . . . . . . . . . . . . . . . 55
Çурхи октавăсем . . . . . . . . . . . . . . 57
Хури . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 61
«Чĕре чечек пек вăхăтра...» . . . . . . . . . 76
Г. Т. Алентее . . . . . . . . . . . . . . . 78
«Пулчĕ вăхăт çапла: бульварта çĕр каçах...» . . . . . 81
«Пытансам, салхулăх, шаларах...» . . . . . . . . 82
Сухум . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 83
Куçсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . 86
Сăн . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 88
Влас Паймена . . . . . . . . . . . . . . . 89
Çулсем-йĕрсем . . . . . . . . . . . . . . . 91

## САВНИ

«Мерчен куçлă кĕмĕл çĕрĕ...» . . . . . . . . . . 94
«Хурама та пĕкĕ, йĕс шăнкрав...» . . . . . . . . 95
«Тур ут вичкĕн тихине...» . . . . . . . . . . . 96
Çухатрăм . . . . . . . . . . . . . . . . . 97
«Хура чĕкеç вĕçет çӳлелле...» . . . . . . . . . 100
«Йăлăмри йăмра хӳттинче...» . . . . . . . . . 101
«Ĕнер кăна тĕнче чăпарччĕ...» . . . . . . . . . 103
«Ак ĕнтĕ çур çĕр. Куç хупăнмасть...» . . . . . . . 105
«Кĕтрĕм, кĕтрĕм эп сана, савниçĕм...» . . . . . . 106
«Çуркуннеччĕ. Кĕрлетчĕ çыр-варĕ...» . . . . . . . 107
«Вăшăлах та вăшăл, ай, сулхăн çил...» . . . . . . 108
«Уяр та сивĕ — кун илемлĕ!» . . . . . . . . . 109
«Эс пур-и, çук-и тĕнчере...» . . . . . . . . . . 111
«Тинкер мана, анчах ан курăн...» . . . . . . . . 113
«Эп çирĕмре. Мана талантлă...» . . . . . . . . . 114
«Хура тинĕс лăпкă мар...» . . . . . . . . . . 115
«Тавтапуç çуралнă çĕршыва...» . . . . . . . . . 117
«Уйăх çук. Тĕтреллĕ хăмăр каç...» . . . . . . . . 119
«Мĕнле уяр! Ман ыйхăм çук...» . . . . . . . . . 120
«Лар-ха, тусăм, çума-çумăн...» . . . . . . . . . 122
«Ман çине пăхса пуçна эс ан пĕк...» . . . . . . . 124
«Пĕлĕтлет. Çап-çамрăк уйăх...» . . . . . . . . . 126
«Часран часах хама эп шантаратăп...» . . . . . . 127
«Санпа эпирчченех çак çăлтăрсем çуталнă...» . . . . 128
«Тулли уйăх — лирика çулпуçĕ...» . . . . . . . . 129
«Сан ялу — мухтавлă Кушкă...» . . . . . . . . . 130

«Чăвашра сан пекки эп курманччĕ...» . . . . . . . . 132
«Салху ан лар, пуçна ан ус...» . . . . . . . . . . 133
«Сан сăну çине те сулхăн ÿкĕ...» . . . . . . . . . 135
«Кирек кам пулсассăн та эс халĕ...» . . . . . . . . 136
«Ашунта мĕскер ларать-ши санăн...» . . . . . . . . 138
«Никам та ал сулса юлмарĕ...» . . . . . . . . . . 140
«Сана саваттăм эп. Тен, халь те...» . . . . . . . . 142
«Эс ан хуйхăр урмăш сăвăçушăн...» . . . . . . . . 143
«Нихăçан юрламăп, нихăçан...» . . . . . . . . . . 145
«Сивĕ çумăр сирпĕнчĕ, çăвайрĕ...» . . . . . . . . 147
«Ют çĕрте, пĕччен сехетсенче...» . . . . . . . . . 149
«Кантăкран карăнать кăвак шуçăм...» . . . . . . . . 150
«Аçта пулсассăн та эс халĕ...» . . . . . . . . . . 152
«Кун пек каç вăл пулать пĕрех çех...» . . . . . . . 153
«Вăрман çара. Тумхах тункаталать хире...» . . . . . 154
«Пĕлетĕп эп, систерчĕ чунăм...» . . . . . . . . . . 155
«Урамра çил-тăман та сĕм-тĕттĕм...» . . . . . . . . 156
«Ак тухрăм эпĕ Атăла та...» . . . . . . . . . . . 157
«Мĕн-ма апла икkеннине...» . . . . . . . . . . . . 158
«Хăçан та пулин, пурăнсан-пурăнсассăн...» . . . . . 160
«Ман чун халь çак кĕвве ĕнерчĕ...» . . . . . . . . 162
«Тĕттĕм каç. Кĕрхи йĕпе-сапа...» . . . . . . . . . 164
«Çак самант сан çинче манăн шухăш...» . . . . . . . 165
«Кăтра шур пĕлĕтсем тăртаннă...» . . . . . . . . . 166
«Каллех паллană евĕрсем...» . . . . . . . . . . . 168
«Çуса иртейрĕ çумăр. Нÿр...» . . . . . . . . . . . 169
«Эс марччĕ пĕрремĕш, эс мар юлашки, тен...» . . . . 170
Чÿрече . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 172
Виçшер йĕркен . . . . . . . . . . . . . . . . . . 174
«Вăл савнă ăна тахçанах...» . . . . . . . . . . . 179
«Кĕрхи йĕпе-сапаллă каç...» . . . . . . . . . . . 180
«Сана аса илсессĕн, лира...» . . . . . . . . . . . 181
«Туллилĕх. Август перекечĕ...» . . . . . . . . . . 182
«Кăнтăрлари лĕп çумăр евĕр...» . . . . . . . . . . 184
«Мамăк çурăлнă тапхăр...» . . . . . . . . . . . . 185
«Кăтраланать, чĕтренкелет хумçи...» . . . . . . . . 187
Куçарнă хушăран . . . . . . . . . . . . . . . . . 188
«Эп таврăнăп-ха сан патна...» . . . . . . . . . . . 190
«Илткелетĕп кассăн-кассăн...» . . . . . . . . . . . 191
«Пурте, савни те мана, савманни те...» . . . . . . . 192
«Мăчлатми ик çăлтăр куçлăн...» . . . . . . . . . . 194
«Килет, килмест... Килет, килмест...» . . . . . . . 196
«Пуш уйăх пĕтсе кĕç килетчĕ...» . . . . . . . . . . 198
«Юмаххăн кĕтĕн ман пата...» . . . . . . . . . . . 199
«Эс ман чĕремĕн чĕлхипе...» . . . . . . . . . . . 200

«Савниçĕм! Ман анне тăван чĕлхипеле...» . . . . . 201
«Мĕскер вăл пурнăçшăн пĕр уйăх...» . . . . . . . 202
«Ют çурт. Ют хурăн. Ют çерем...» . . . . . . . . . 203
«Нумайранпа эп макăрманччĕ...» . . . . . . . . . . 204
Муза . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 205
Икĕ сăн . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 206

## «ПŸЛЕР КĔВВИСЕМ» ЯРĂМРАН

Каçхи мĕлкесем . . . . . . . . . . . . . . . . . 208
«Уйăхран эп ыйтрăм...» . . . . . . . . . . . . . . 09
Пÿлер кĕввисем . . . . . . . . . . . . . . . . . 210
«Ах, аппа! Эс ăсан тараса пек...» . . . . . . . . . 212
«Шурăмпуç шуса килсессĕн ерипе...» . . . . . . . 214
Тăван поэта . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 215
«Ыран ирех вăрат мана, анне...» . . . . . . . . . 216
Хăнара . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 217
Атăл . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 219
«Эс манăн халăхăм çинчен...» . . . . . . . . . . . 220

## СОНЕТСЕМ

Иккĕленÿ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 222
Археолога . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 223
Вирьял хĕрĕсем . . . . . . . . . . . . . . . . . 224
Чăваш . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 225
Композитор патĕнче . . . . . . . . . . . . . . . 226
Элек . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 227
Хăтăлнисем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 228
Салампи . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 229
Пăр çурĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 230
Хавхалану . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 231
Хĕвел ури . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 232
Атăл куçĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 233
Бакен . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 234
Салам сонечĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . 235
Ян Амос Коменский . . . . . . . . . . . . . . . 236
Йĕкел . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 237
«Çук! Килĕшейменĕп ĕмĕрне!..» . . . . . . . . . . 238

## ВУТРА ШĂРАННĂ КĂМĂЛ

Аслати . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 240
Салампи . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 241
Аннене . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 244

«Август каçĕ çăлтăрла та тĕттĕм...» . . . . . . . . 246
Çăлтăр . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 247
«Таçта — пин çухрăмра — ман сассăм...» . . . . . . . 249
Тĕлĕк . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 250
«Иртеççĕ шурă пĕлĕтсем...» . . . . . . . . . . 252
«Çумăр, çумăр, çумăр...» . . . . . . . . . . . 254
Çул çинче . . . . . . . . . . . . . . . . 256
«Ак çаплах — сывпуллашмасăр...» . . . . . . . . . 257
«Салтак фляги пуш-пушах...» . . . . . . . . . . 258
Вăрçă хирĕпе . . . . . . . . . . . . . . . . 260
«Çĕр-йышăмсем! Мĕн-ма пурне те ыррăн...» . . . . . 262
Çĕнтерӳ юрри . . . . . . . . . . . . . . . . 263
Çуллахи каç . . . . . . . . . . . . . . . . 275
Автанран автанччен . . . . . . . . . . . . . 278

## КĔВĔЛЕНМЕН ЮРĂСЕМ

«Шупашкара çитсе пыруçăн...» . . . . . . . . . . 292
«Чечек çуратчĕ çуркунне...» . . . . . . . . . . . 293
«Мĕскер, мĕскер эс ман куçран...» . . . . . . . . . 294
«Ах, эп курсаттăм мăшăр куç...» . . . . . . . . . . 295
«Атăлтан тухать çур уйăх...» . . . . . . . . . . 296
«Курсам, мĕнле илемлĕ Атăл...» . . . . . . . . . 297
«Шупашкар çăкисем çеçкере...» . . . . . . . . . . 298
«Чĕкеçсем çӳлте вĕçеççĕ...» . . . . . . . . . . 299
«Пăлтăра шăналăк карнă...» . . . . . . . . . . 300
«Ман çук юратнă вăхăтăм...» . . . . . . . . . . 301
Танго . . . . . . . . . . . . . . . . . . 302
«Çаплах усратăп ăшăмра...» . . . . . . . . . . 304

## ТИВĔÇ ЛИСЕНЕ

Поэзи сиплĕ çилĕ . . . . . . . . . . . . . . 306
Аван-и, Пушкин! . . . . . . . . . . . . . . 310
Байрон . . . . . . . . . . . . . . . . . . 315
Поэт . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 320
Кĕçтенттине . . . . . . . . . . . . . . . . 343
Çеçпĕл Мишши Крымра . . . . . . . . . . . . 344
Павло Тычинăна . . . . . . . . . . . . . . . 347
Мицкевич . . . . . . . . . . . . . . . . . 348
Поэзи пулсан . . . . . . . . . . . . . . . . 349
Пуш уйăхăн вĕçĕнче . . . . . . . . . . . . . 351
Митта Ваçлейне асăнса . . . . . . . . . . . . 353
Элкере . . . . . . . . . . . . . . . . . . 356

Вӑтӑр пилӗк ҫултан . . . . . . . . . . . . . . . 358
Сергей Есенин патӗнче *(поэма)* . . . . . . . . . . 361
Овидий Назона . . . . . . . . . . . . . . . . . . 366
«Поэзи вӑл — уйрӑм патшалӑх...» . . . . . . . . . 368
«Инҫе ҫула пуҫтарӑнатӑп...» . . . . . . . . . . . . 369

## ПӐЛХАР ПОЭЗИИЁНЧЕН
(куҫарусем)

Ламар. Хӑна . . . . . . . . . . . . . . . . . . 372
Веселин Ханчев. Ҫӗрпе пӗлӗт . . . . . . . . . . 373
Юрату . . . . . . . . . . . . . 374
Пурнайманшӑн кунҫул пулмаллах . . 375
Ҫӗрӗ . . . . . . . . . . . . . . 376
Димитр Пантелеев. Манӑн тӗнче . . . . . . . . . 377

**Петр Петрович Хузангай**

**ЧАС ЗАВЕТНЫЙ**

**Стихи и поэмы**

**На чувашском языке**

Редактор В. О. Максимов
Художник Э. М. Юрьев
Художественный редактор Г. С. Самсонова
Технические редактора Л. Н. Кондрашкина, В. П. Окина
Корректор А. К. Шашкина

ИБ 1997

НТ 10005

Сдано в набор 23.09.86. Подписано к печати 09.01.87. Формат $70\times108^1/_{32}$.
Бумага офсетная № 1. Печать офсетная. Усл. печ. л. 16,8.
Усл. кр.-отт. 33,77. Уч.-изд. л. 10,76. Тираж 1000 экз. Заказ № 3404.
Изд. № 60. Цена 1 руб. 50 коп.

Чувашское книжное издательство, 428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4.
Типография № 1 Государственного комитета Чувашской АССР по делам издательств, полиграфии и книжной торговли, 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

1 т. 50 пус

ПЕТЕР ХУСАНКАЙ

# МЕХЕЛ

ЧĂВАШ КĔНЕКЕ
ИЗДАТЕЛЬСТВИ